Эпĕ нихăçан та чапшăн, ăшă
выранăшăн, пысăк укçашăн, мухтав
сăмахĕшĕн ăшталанман, хамăн
тăван халăхăмшăн,
ăна вĕрентес ĕçшĕн усăллă та кирлĕ
çын пулнине туйса çак ĕçе
эпĕ çеç тума пултаратăп пулĕ тесе
ĕненсе вăй хунă.
Çĕршыв тата тăван халăх умĕнче
таса чунпа çакна калама
пултаратăп: хам пурнăçăн
чи вăйпитти вăхăтне халăха çутта
кăларас ĕçе патăм,
çамрăклăхăмри ĕмĕт-тĕллевсене
çак енĕпе пурнăça кĕртрĕм.

И. Яковлев

Чăваш
кĕнеке
издательстви

ISBN 978-5-7670-2725-5
9 785767 027255

# Иван Яковлев



# Аслă çул çине

Иван Яковлев

# Аслă çул çине

**Асаилӳсем**

Чăвашла ***Владимир Степанов*** куçарнă



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2018

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2=635.1)6-46
Я 47

**Яковлев И.Я.**
Я 47 Аслă çул çине: асаилÿсем / И.Я. Яковлев; чăвашла В.В. Степанов куçарнă. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2018. — 119 с.
ISBN 978-5-7670-2725-5

Кĕнекере чăвашсене çутта кăларакан И.Я. Яковлев пурнăçне — вăл вырăс мар халăхсене вĕрентес ĕçе йĕркелесе пынă Н.И. Ильминскипе пĕрле ĕçленине, Раççейри паллă çынсемпе тĕл пулнисене — çырса кăтартнă. Чăваш ялĕсенче шкулсем уçнă вăхăтри халăх пурнăçĕ, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн аталанăвĕ те пысăк вырăн йышăнаççĕ.

**УДК 821.512.111-93**
**ББК 84(2=635.1)6-46**

© Степанов В.В., куçару, 2018
© Бритвина С.А., ÿкерчĕксем, 2018
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2018

**ISBN 978-5-7670-2725-5**



## КУÇАРУÇĂ СĂМАХĔ

Иван Яковлевич Яковлев — чăваш халăхĕшĕн çĕнĕ ĕмĕр алăкне уçаканĕ, наци çырулăхне тăваканĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулне вăл аллă çул ытла ертсе пынă, унтан вĕренсе тухнă çынсем тăван халăх пурнăçне аталантарас ĕçре хăйсене тивĕçлĕн кăтартнă.

И.Я. Яковлев ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесĕнчи Кăнна Кушки ялĕнче (халĕ Тутарстан Республикинчи Теччĕ районне кĕрет) çуралнă. 1864 çулта уес училищинчен вĕренсе тухсан вăл çĕр виçекен пулса ĕçленĕ. Пĕррехинче Долгорукова княгиня именийĕн управляющийĕ О.Л. Косинский патĕнче Иван Яковлев поляк чĕлхипе пичетленĕ кĕнекесем курнă. «Мĕншĕн-ха чăвашсен тăван чĕлхепе пичетленĕ кĕнеке çук?» — тесе шухăша кайнă вăл. Çакăн хыççăн Иван Яковлевич гимназирен тата университетран вĕренсе тухма тĕв тăвать, чăваш халăхне çутта кăларса тăван чĕлхепе вулама-çырма май туса пама хăйне сăмах парать.

1867 çулта Иван Яковлев Чĕмпĕр гимназине вĕренме кĕрет, 1868 çулхи юпа уйăхĕнче хăйĕн укçи-тенкипе чăваш шкулне уçать. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн пĕрремĕш вĕренекенĕ — А.В. Рекеев. Тепĕр виçĕ çултан Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи халăх училищисен инспекторĕ И.Н. Ульянов тăрăшни-

пе Чӗмпӗрти чӑваш шкулне патшалӑх тытса тӑма пуҫлать. Ҫав ҫулах И.Я. Яковлев чӑваш алфавитне тӑвать. 1877 ҫулта Халӑха ҫутта кӑларас ӗҫ министерстви Чӑваш шкулне тӗп шкул тесе йышӑнать. 1878 ҫулта унта хӗрачасен уйрӑмӗ уҫӑлать. 1890 ҫулта шкул ҫӗнӗ тытӑма куҫать — учительсене хатӗрлекен ултӑ ҫул вӗренмелли шкул пулса тӑрать. 1891 ҫулта хӗрачасен уйрӑмӗнчен хӗрачасен педагогика курсӗсене туса хураҫҫӗ.

«Эпӗ нихӑҫан та чапшӑн, ӑшӑ вырӑншӑн, пысӑк укҫашӑн, мухтав сӑмахӗшӗн ӑшталанман, хамӑн тӑван халӑхӑмшӑн, ӑна вӗрентес ӗҫшӗн усӑллӑ та кирлӗ ҫын пулнине туйса ҫак ӗҫе эпӗ ҫеҫ тума пултаратӑп пулӗ тесе ӗненсе вӑй хунӑ. Ҫӗршыв тата тӑван халӑх умӗнче таса чунпа ҫакна калама пултаратӑп: хам пурнӑҫӑн чи вӑйпитти вӑхӑтне халӑха ҫутта кӑларас ӗҫе патӑм, ҫамрӑклӑхӑмри ӗмӗт-тӗллевсене ҫак енӗпе пурнӑҫа кӗртрӗм», — ҫакӑн пек пӗтӗмлетӳ тунӑ аслӑ вӗрентекенӗмӗр хӑйӗн пурнӑҫӗ пирки.

Иван Яковлевич Яковлевӑн ӗмӗт-тӗллевӗсене, ӗҫӗ-хӗлне тӑван халӑх тивӗҫлӗ хак панӑ. Тӑван халӑхӑмӑршӑн Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ — ҫӗнӗ пурнӑҫ хӗвелӗ. Иван Яковлевича аслӑ ҫул ҫине тухма ҫӑмӑл пулман, ӑна ура хуракансем тупӑнсах тӑнӑ, сепаратист тесе айӑпланӑ. Чӑвашсене ҫутта кӑларакан пур йывӑрлӑха та ҫӗнтернӗ, тӑван халӑха малашлӑха кӗпер хывса панӑ.

Эпир пурте — Иван Яковлевичӑн вӗренекенӗсем. Ҫак чӑнлӑх малалла аталанма, пурнӑҫӑн аслӑ ҫулӗ ҫине тухма хӑват парать пире.

# Манӑн вӗрентекенӗм





## ЭПĔ — СТУДЕНТ

1870 çулта эпĕ, Н.П. Соколов тата А.Л. Панаев Чĕмпĕр гимназийĕнчен вĕренсе тухрăмăр. Класран пĕр эпĕ кăна ылтăн медале тивĕçрĕм, Панаевпа Соколов кĕмĕл медальсем илчĕç. Виççĕмĕр те Хусан университетне çул тытрăмăр. А.И. Глазов полковник ывăлĕсем пулăшнипе хваттер те тупрăмăр.

Эпир Соколовпа математика, Панаев вара филологи факультечĕсене вĕренме кĕтĕмĕр. Математика факультетне мĕншĕн суйласа илнине хам та ăнланмарăм. Ăнсăртран пулĕ тетĕп, гимназире те çак предметпа пит палăрсах кайман эпĕ. Ахăртнех, гимназире тата университетра математика курсне ертсе пыракан вĕрентекенсем кăмăла кайнă пулинех.

Ман вăхăтра математика факультетĕнче питĕ паллă В.Г. Имшенецкий, П.И. Котельников, Э.П. Янишевский лекцисем вулатчĕç.

Ку лекцисемпе çеç çырлахмастăм, Н.А. Кремлев вулакан Рим прави, Ю.А. Микшевич ертсе пыракан политэкономика, А.Г. Станиславскин энциклопеди прави лекцийĕсене те итлеттĕм. Икĕ уйăх таранах П.Ф. Лесгафт паллă ăсчахăн анатоми лекцийĕсене çӳрерĕм.

Университета вӗренме кӗни ҫулталӑк ҫитсе пынӑ чух эпӗ историпе филологи факультетне вӗренме куҫрӑм.

## ХУСАН ПУРНӐҪӖ

Университетра вӗреннӗ чух Хусанта тӗрлӗ хваттерте пурӑнма тиврӗ. Чӑн малтан, 1871 ҫулта, Анчӑк тӑкӑрлӑкӗнчи Дьякова ҫуртӗнче чарӑнтӑм, темиҫе уйӑхран Засыпкински урамӗнчи пӗр нимӗҫ патне куҫрӑм. Кайран Раштав тӗлне эпӗ Кушкӑна тата Пӑрӑнтӑка тухса кайрӑм. Унтан таврӑнсан гимназири юлташӑм, ман пекех университетра вӗренекен Иван Евменьевич Цветков пачӑшкӑн ывӑлӗ Александр, патӗнче Вознесенски урамӗнче чарӑнтӑм. (Ҫурт хуҫин ятне-шывне астумастӑп, анчах та хваттерӗ питӗ начарччӗ.)

Ҫакӑн хыҫҫӑн ҫамрӑк Цветковпа пӗрле Хусанта ултӑ-ҫичӗ хваттер те улӑштартӑмӑр — пӗринче те ӑнмарӗ.

1871 ҫулхи ака уйӑхӗн вӗҫӗнче Чӗмпӗре тухса кайрӑм. Унтан таврӑннӑ тӗле Екатерина Степановна Ильминская тӑрӑшнипе Ильминскисен пӗлӗшӗ ман валли Иорданский протоиерей патӗнче хваттер тупса хунӑччӗ. Асамлӑ турӑш упранакан Хусанти мӑнастирӗн соборӗ патӗнчи Пуп Сӑрчӗ урамӗнче протоиерейӗн хӑйӗн ҫурчӗ пурччӗ. Ҫак ҫуртра 1871—72 вӗренӳ ҫулӗсенче эпӗ Иорданский ачисемпе, икӗ студентпа пӗрле, пурӑнтӑм. Университетра вӗреннӗ ытти ҫулсенче Грузински тата Лядски урамӗсен хушшинчи пралукра вырнаҫнӑ Некраш ҫуртне хваттере кайрӑм.

## ТУТАР КРЕШЁН ШКУЛĔ

Хусана вĕренме пырсанах хăйне евĕрлĕ вĕрентӳ заведенийĕпе паллашма кайрăм. Н.И. Ильминский уçнă тĕне кĕнĕ тутарсен шкулĕ пулчĕ вăл. Анчах та унта Николай Ивановича хăйне курмарăм. Шкул ачисем мана лайăх юрласа тата кĕлĕсем вуланипе тĕлĕнтерчĕç. Вĕренекенсем вырăсла вара начар пĕлетчĕç. Çакăн пирки эпĕ шкул ертӳçине Василий Тимофеевич Тимофеева та каларăм, кайран Н.И. Ильминскипе тĕл пулсанах ăна та çак шухăша пĕлтертĕм.

Архиерей кĕллисене çӳреме, чиркӳ хорĕ юрланине итлеме Чĕмпĕр гимназийĕнче вĕреннĕ чухнех юрататтăм эпĕ. Апла пулин те крешĕн тутар шкулĕнче мĕн тери чаплă юрлани мана анратсах ячĕ. Н.И. Ильминскин юлташĕ, Алтай миссионерĕ Макарий иеромонах*, хор ăсталăхне калама çук çӳллĕ шая çĕкленĕ. Иеромонаха Николай Иванович чĕререн хисепленĕ, анчах ыйтма та унран хытă ыйтнă, çитменлĕхĕсене пĕр пытармасăр, куçранах каланă. Куна эпĕ Макарийпе Ильминский çырăвĕсемпе паллашсан пĕлтĕм.

Макарий крешĕн тутар шкулĕнче 1869 çултан пуçласа 1870 çулхи çурла уйăхĕччен ĕçленĕ. Эпĕ университета пынă чух вăл Хусантан кайнăччĕ ĕнтĕ, унпа курса паллашма пӳрмерĕ. Крешĕн тутар шкулĕн хорне итлесен эпĕ çакнашкал ăсталăх халăха çутта кăларас, тĕне вĕрентес ĕçре мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине туйса илтĕм.

---

* Макарий иеромонах, Михаил Андреевич Невский, нумай çул иртсен Мускав митрополичĕ пулса тăнă. *(Куçаруçă.)*

Кайран эпĕ Петербург юрă капелли, Синод хорĕ, тĕлĕнмелле чаплă хорсем чи паллă композиторсен тĕн хайлавĕсене юрланине те итленĕ. Анчах вĕсем пĕри те крешĕн тутар шкулĕн хорĕ чĕрере çуратнă хавхаланăва чунра вăратаймарĕç: вокал фокусĕсем çукчĕ, куçăмсем, контрастсем, хуçăмсем сисĕнместчĕç.

Макарий йĕркеленĕ хор питĕ ансат çемĕсемпе юрлатчĕ, анчах юрăра тĕлĕнмелле тарăнлăх туйăнатчĕ, тĕн туйăмлăхĕ тапса тăратчĕ. Эпĕ çав хора пуçласа итленĕ чухне хама Владимир кнеçĕн элчисем вырăннех хутăм.

Тĕрлĕ халăх тĕнĕ-туррисене танлаштарма кайсан кнеç элчелĕсем Софийски соборĕнче тĕн юррине итленĕ. Юрă янăранă хушăра элчĕсем те çĕр çинчех тăнă, те çӳлти тӳпере пулнă — çынсем куна татса калайман тет. Çакна та асăнса хăварам: каярахпа вырăс ялĕсенчи темиçе чиркӳре те пĕр-икĕ дьяк питĕ ансат юрланине илтнĕччĕ, вĕсен юррисем те тĕн хăвачĕпе, хавхаланăвĕпе, туйăмлăхĕпе тулличчĕ. Манăн шутпа, Макарий вĕрентнĕ пек юрлани Алтай халăхне пысăк витĕм панă пуль.

Крешĕн тутар шкулĕнче юрлани пысăк пĕлтерĕшлĕ тесе шутлакан Ильминский мана Хусанта ун патĕнче, унăн кабинетĕнче, Макарий пурăннине каласа панăччĕ. Алтай чĕлхине иеромонах аван пĕлнĕ, калаçма та пултарнă. Ильминский вара çав чĕлхене хут çинче çеç вĕреннĕ. Ильминскипе Макарий пĕрле алтай чĕлхин грамматикине çырнă — тĕп ĕçне Николай Иванович тунă. Çак грамматикăпа ĕçленĕ чух Ильминский тĕслĕх вырăнне манăн хуняçа Алексей Александрович

Бобровников хатӗрленӗ монгол чӗлхин грамматикине тӗпе хунӑ.

Макарий тӗне кӗнӗ тутара — Василий Тимофеева — пачӑшкӑ санне йышӑнма хатӗрленӗ. Лешӗ инородецсене ҫутта кӑларас ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Крешӗн тутар шкулӗн хорӗ юрланине итленӗ пур ятлӑ-сумлӑ ҫын та — вӗсен шутӗнче К.П. Победоносцев, В.К. Саблер — ӑна питӗ пысӑк хак панӑ. Ильминский хӑй те хорпа хавхаланнине пытармастчӗ. Шел, ҫакӑн пек чаплӑ юрлас ӑсталӑх хальхи вӑхӑтра тупаймӑн.

## ГОСУДАРЬ ИМПЕРАТОР

1871 ҫулта ҫӗртме уйӑхӗнче Чӗмпӗре II Александр патша килсе кайрӗ*. Ун чухне Хусанта вӗренетӗп пулсан та государе курас тесе Чӗмпӗре ятарласа пынӑччӗ. Патшана Турӑ вырӑнне хунӑ эпӗ. II Александрпа пӗрле аслӑ кнеҫсем, государь ҫыннисем пурччӗ. Император кӑмӑлсӑр ҫӳрерӗ. Унӑн шуранка туртӑннӑ пит-куҫне, кӑра сӑнне, ҫӳллӗ пӗвне лайӑх астӑватӑп. Вӑл малтан ҫӗнӗ собора кайрӗ, кайран Дворянсен пухӑвӗн залне пычӗ, хула тӗккине**, Сӗве тепӗр енчи удел приютне, архиерейпе кӗпӗрнаттӑр патне ҫитсе килчӗ. Эпӗ ӑна соборта та, хамӑр гимназире те куртӑм.

Государь гимнази залне кӗрсе курчӗ, чиркӳре пулчӗ, классене пӑхса ҫаврӑнчӗ. Чиркӳрен вӑл ко-

---

* II Александр Чӗмпӗре ҫурла уйӑхӗн 28-мӗшӗнче (ҫӗнӗ стильпе — авӑнӑн 8-мӗшӗнче) Кавказа кайнӑ чухне кӗрсе тухнӑ. Унпа пӗрле Александр Александрович цесаревич (пулас III Александр император), Владимир Александрович аслӑ кнеҫ пулнӑ. *(Куҫаруҫӑ.)*

** Тӗкӗ — *(вырӑсла)* острог.

ридора тухрĕ. Эпир, гимназирен вĕренсе тухнисем, çавăнтах тăраттăмăр. Çак вăхăт тĕлне гимназистсем ятарлă формăпа çӳретчĕç, çавăнпа эпир камсем иккенне ăнкарса илме йывăр марччĕ, уйрăм тумтир тăхăнманччĕ. Манăн сулахай куç начартарах куратчĕ, ирĕксĕрех куçлăхпа çӳреттĕм. Те çавăншăн, те урăх сăлтава пула, II Александр патша пирĕн ушкăна кăмăлсăррăн пăхса иртрĕ, уйрăмах мана хиврен те чалăшшăн тинкерчĕ.

Государь хула тăрăх Д.П. Еремеев кĕпĕрнаттăрпа çӳрерĕ. Удел тытăмĕн приютне кайнă чух патша кӳмине Сĕве кĕперĕ çинче Чĕмпĕртен çирĕм çухрăмра вырнаçнă Кременки сали хресченĕсем чĕркуçленсе тытса чарнă, патша шучĕпе, ниме тăман ыйтупа чăрмантарнă. (Лешсем вара сад лартма юрăхсăр çĕр касса пани пирки ыйту тăратнăччĕ, тĕрĕссипе, пĕлтерĕшлĕччĕ.) Патша вара хресченсене çиллессĕн кăшкăрса пăрахнă. Çавăн чухне каланă та вăл халăх асĕнче юлнă: «Сире ирĕклĕх панă алă çĕнĕ хĕнлĕхе кĕртме те алă пусса парĕ», — текен сăмахсене.

Пĕр сăмахпа, государь манăн кăмăла каймарĕ. Вăл Чĕмпĕре килнĕ вăхăтра ман патра А.И. Баратынский пачăшкăпа унăн тусĕ — Хусан кĕпĕрнинчи Сумароково салинчи Сунгуров пачăшкă — пурăнатчĕç. Патшана халăхпа ăсатнă тĕркешӳре собортан тухакан Сунгуров хĕвĕнчен вун пилĕк е вун ултă пин тенкĕ кăларса илнĕччĕ. Çав пачăшкă Сумароково салинче училище ертсе пынă. Вĕренекенсене вăл мĕнлерех хĕсĕрлени, уйрăмах ачасене тискеррĕн хĕнени çинчен чуна çӳçентерекен сăмахсем çӳретчĕç.

## ИЛЬМИНСКИПЕ ПАЛЛАШНИ

Пĕрремĕш хут Ильминский патне хăçан кайнине астумастăп та — 1870 çулхи авăнăн 3—5-мĕшĕсенче пулнăччĕ ку. Ильминский ман ĕç çинчен илтнĕччĕ ĕнтĕ, çавăнпа тарават йышăнчĕ, çапах та асăрханулăхне çухатмарĕ. Çынпа лайăх паллашсан-туслашсан çеç вăл кăмăлне çĕнĕ пĕлĕшĕ умĕнче ытларах та ытларах уçатчĕ — çакнашкал йăла пурччĕ унăн.

Эпĕ те Николай Иванович çинчен Хусана киличченех Баратынский пачăшкăран нумай илтнĕ, хăш-пĕр статйисене вуланă, ĕçĕ-хĕлĕпе кăсăкланнă, унпа паллашма ĕмĕтленнĕ. Н.И. Ильминский манпа кăмăллăн калаçрĕ, анчах кăмăлне уçма васкамарĕ — сăнарĕ. Кашни тĕл пулмассерен ытларах та ытларах уçăлса пычĕ вăл, нумай та вăхăт иртмерĕ — унăн асăрханулăхĕ çухалчĕ, вăл маншăн юратнă атте вырăннех пулса тăчĕ.

Кĕçех Ильминский мана хăйĕнпе пĕр шухăшлă çынсем патне илсе çӳреме тытăнчĕ — Гордей Семенович Саблуков, Иван Яковлевич Порфирьев профессорсемпе, Михаил Михайлович Зефиров протоиерейпе тата ыттисемпе паллаштарчĕ. Хура халăхран тухнă тĕлĕнтермĕш çын тесе йышăнатчĕç вĕсем мана.

Зефиров протоиерей Николай Иванович пекех пултаруллă çынччĕ. Хусанти тĕн академийĕнче вĕрентетчĕ, Богоявленски чиркĕвĕн настоятелĕччĕ. Çемьеллĕччĕ, виçĕ е тăватă хĕрача ӳсетчĕ унăн. Эпĕ Хусана пынă чух вăл килĕнче пулмарĕ. Тамбоври семинари ректорĕ пулнă май инçетри хулана кайнăччĕ. Унпа мана Николай Иванович

кайран паллаштарчӗ. Зефиров — Хусан университечӗн богослови профессорӗччӗ.

Н.И. Ильминскипе И.Я. Порфирьева Хусанти тӗн академийӗ ҫыхӑнтаратчӗ. Хусанти тӗн академийӗн ректорӗ А.П. Владимирскипе те юлташлӑччӗ вӗрентекенӗм. Николай Ивановичпа паллашсан вӑл малтанхи вӑхӑтра мана: «Зефировсем патне каяр-и? Ашшӗ килӗнче ҫук. Хӗрӗсемпе паллаштаратӑп», — тетчӗ. Е тата: «Иван Порфирьева ҫитсе курар мар-и?» — тесе сӗнетчӗ.

Н.И. Ильминский тӑрӑшнипе ӗнтӗ Хусанти мал курӑмлӑ общество мана йышӑнчӗ.

## ВӖРЕНТЕКЕНӖМӖН СӐНАРӖ

Куҫа-куҫӑн пулленӗ чух Ильминский аван, хитре, ӗнентерӳллӗн, тарӑннӑн калаҫатчӗ. Хӑйӗнпе тӗл пулакана вӑл кӑмӑл-сипет хӑвачӗпе парӑнтаратчӗ. Николай Ивановичпа мӗнле калаҫнисене аса илсе Победоносцев та ҫак шухӑша ҫирӗплететчӗ. Вилнӗ хыҫҫӑн Н.И. Ильминские ҫапла хаклани инородецсене ҫутта кӑларакан аслӑ ҫыншӑн чи лайӑх характеристика тесе шутлатӑп.

Чӑвашсене ҫутта кӑларас ыйтура Ильминский мана хӑй майлӑ ҫавӑрчӗ. Ӑна тата унӑн вӗрентӳ программине те чунтан парӑннӑ ҫын пулса тӑтӑм. Николай Иванович тутар крешӗн шкулӗнче пурнӑҫа кӗртнӗ йӑласем мана питӗ килӗшрӗҫ, ҫавӑнпа А.В. Рекеева Хусана ятарласа чӗнсе илтӗм, ан тив, Чӗмпӗрти общежитийӗн шалти тытӑмне йӗркеленӗ чух ҫак тӗслӗхпе усӑ куртӑр терӗм.

Ҫакна та асӑрхаттармалла — пысӑк йышра Ильминский усӑ ҫын марччӗ. Куҫа-куҫӑн пулсан

çеç чуна уçса калаçма, тавлашма, хăй мĕн пĕлнипе тата пурнăç опычĕпе паллаштарма юрататчĕ вăл. Тата тепĕр услови те пурччĕ: унпа калаçаканăн Ильминский тĕнче курăмĕпе, пурнăçĕн тĕллевĕсемпе мĕнпур кăмăлтан кăсăкланмаллаччĕ. Уйрăм калаçусенче Ильминский шӳтлеме, çивĕч ăсне палăртма юрататчĕ. Анчах çакăнта нимĕнле мăнкăмăллăх, усаллăх, кӳрентересси те çукчĕ, унăн сăмахĕсенчен ырă кăмăллăх, айăпсăрлăх тапса тăратчĕç.

Часах Ильминский хваттерĕ маншăн хăйне майлă иккĕмĕш университет пулса тăчĕ. Эпĕ Хусан патшалăх университетĕнчи лекцисене пĕр сиктермесĕр çӳреттĕм, экзаменсем тытаттăм, аслă курссене йĕркеллĕн куçаттăм. Çапах та чунпа эпĕ, Ильминский пилленнипе темелле, вăл кăтартса панă чăваш ĕçне путнăччĕ.

## Г.С. САБЛУКОВ ПРОФЕССОР

Пушă вăхăт сахал пулнипе Хусанта çынсемпе питех паллашман эпĕ. Ильминскисĕр пуçне унăн юлташĕ патĕнче, Хусанти тĕн академийĕнче еврей, араб, сири чĕлхисемпе лекци вулакан Гордей Семенович Саблуков профессор килĕнче, пулкалаттăм. Вăл çулĕсемпе Ильминскирен аслăрахчĕ. Эпĕ ун патне тăтăшах кĕрсе тухаттăм. Евангелири уйрăм текстсене ăнланма, вĕсене тата псаломсене, кĕлĕсене куçарма пулăшатчĕ вăл. Текстсенче мĕн каласшăн пулнине хăвăрт ăнкарса илетчĕ Саблуков. Куçару ĕçĕнче унăн пуян библиотекипе те усă кураттăм. Кăмăллă, çынна пулăшма хатĕр старикчĕ. Унпа паллашнă чухне

вăл отставкăраччĕ ĕнтĕ. Эпĕ ун патне çӳренĕ вăхăтра вăл И.Я. Порфирьев кĕрӳшĕ патĕнче ывăлĕпе — студентпа — пурăнатчĕ.

## ВАСИЛИЙ БЕЛИЛИН

Н.И. Ильминский мана, пĕрремĕш курсра вĕренекенскере, иккĕмĕш курсри Василий Алексеевич Белилинпа паллаштарчĕ. Вăл вырăсчĕ, ашшĕамăшĕ Хусан мещенĕсемччĕ. Василий Белилин Ильминский патĕнче тухăç чĕлхисемпе ĕçлетчĕ, çак енĕпе питĕ пултаруллăччĕ, уйрăмах чĕлхери сасă саккунĕсен кĕвĕлĕхне — фонетикăна — аван туятчĕ.

1871 тата 1872 çулхи каникулсенче эпир Белилинпа пĕрле Кушкăра тата ытти чăваш ялĕсенче çӳрерĕмĕр. Хальччен пач пĕлмен чăваш чĕлхине манăн юлташăм мĕн тери хăвăрт вĕреннине çавăн чухне курса ĕнентĕм. Белилин — ăнакăна шутлакан, таса та тӳрĕ кăмăллă, яланах пулăшма хатĕр çынччĕ. Йывăр тапхăрта эпĕ унран укçа та кивçен илкеленĕ. Анчах Василий Алексеевичпа часах уйрăлса кайрăмăр: халăха çутта кăларас ĕçе вăл политикăна явăçтарма тытăнчĕ. Василий Белилин политика эмигранчĕсемпе тĕл пулма чикĕ леш енне те каятчĕ, политикăра шар курнисене чикĕ леш енне тарма пулăшатчĕ. Юлашкинчен пирĕн хушăмăрта çакнашкал калаçу пулса иртрĕ:

Белилин:

— Иван Яковлевич! Эсир кăмăл-сипет, кĕлĕ, тĕн кĕнекисене çеç чăвашла куçарасшăн. Çакă сирĕн тĕллев-и? Пĕрремĕш те юлашки тĕллев-и?

Эпĕ:

— Маншăн та, сирĕншĕн те тĕллев вĕçĕ-хĕррисĕр. Анчах та çак тĕллев — пĕртен-пĕрре.

Белилин:

— Урăх япаласене куçарас шутлă мар-и эсир?

Эпĕ:

— Çук!

Белилин:

— Эпĕ сирĕнтен уйрăлатăп. Эпир малалла пĕрле каяс çук, ĕçлейместпĕр иксĕмĕр.

Çак калаçу 1872 çулта е 1873 çул пуçламăшĕнче пулса иртнĕччĕ. Василий Белилинпа тек ĕçлемен эпĕ. Унăн сăмахĕсем маншăн ăнланмаллаччĕ — вырăс кĕнекисене куçарса чăвашсем хушшинче те патшалăха хирĕç шухăшсем вăратмалла. Эпĕ вара çакна хирĕçчĕ.

Белилин халĕ те Хусанта пурăнать. Кăçал, 1918 çулта, эпĕ ун патне кĕрсе тухрăм, тахçанхи калаçăва та аса илтертĕм. Ăна астумастăп та терĕ. Вăл кăмăлĕпе улшăннăччĕ, тахçан пĕлнĕ, студент вăхăтĕнче пĕрле ĕçленĕ çын пек марччĕ. Сăмах май, Белилин мана хуйхăллăн: «Пурнăçăм хам шутланă пек килмерĕ», — тесе降карĕ.

Вăл Николай Ивановичран сивĕннĕччĕ ĕнтĕ, вĕрентекенĕмĕр тĕнче курăмĕ, шухăшĕ ăна текех илĕртместчĕç. Тахçан вара, çуллахи каникул вăхăтĕнче, чăваш ялĕсене çитсе килме пире шăпах Н.И. Ильминский хушнăччĕ.

Çак çулçӳревсене эпир хысна шучĕпе мар, хамăр укçа-тенкĕпе каяттăмăр. Чăваш юмахĕсене, юррисене, каларăшĕсене çырса илме пире А.В. Рекеев тата ыттисем те пулăшатчĕç. Пуçтарнă материалсен пĕр пайне кайран эпĕ Хусанта чăваш чĕлхине тĕпчекен Н.И. Ашмарина панăччĕ. Тепĕр



пайĕ — халĕ те хамрах. Чăваш сăмахĕсене эпир вырăс саспаллисемпе çыраттăмăр, чĕлхе уйрăмлăхĕсене шута илеттĕмĕр.

## ЧУН ÇЕММИ

Николай Иванович эпĕ куравсене, картина галерейисене, музейсене çӳренине ырлатчĕ. Çакă вĕрентӳре, тавракурăма аталантарма пĕлтерĕшлĕ, çамрăксемшĕн уйрăмах усăллă тесе шутлатчĕ. Хăй вара, инородецсен ыйтăвне пусĕпех путнăскер, искусствăпа, археологипе пачах та кăсăкланмастчĕ.

Чĕмпĕрте уроксем парса пухнă укçа-тенкĕ Хусана килсен те кăштах юлнăччĕ. Университетра вĕреннĕ чухне те уроксем пама пăрахмарăм, сум çумне сум хушрăм. Н.И. Ильминский тата Хусан вĕрентӳ округĕн попечителĕ П.Д. Шестаков тăрăшнипе мана Хусана килни çулталăк çитичченех хысна шучĕпе стипенди пама тытăнчĕç, университетран вĕренсе тухиччен çулталăкне ик çĕр тенкĕ илсе пурăнтăм. Укçа-тенкĕ çитетчĕ мана. Чĕмпĕр купси В.С. Левашов пулăшнипе çипуç енчен те аптрамастăмччĕ. Левашовăн Чĕмпĕрте сукна тата пусма лавккисем пурччĕ. Вăл мана мĕн кирлине кивçенле паратчĕ. Студент çулĕсенче çак парăм тăват çĕр тенке çитнĕччĕ. Кайран парăма йăлтах тӳлесе татрăм.

Укçа-тенкĕ çитсе пынăран эпĕ театра та, опера спектаклĕсене те çӳреме пултараттăм. Хусан оперинче ун чухне чаплă артистсем юрлатчĕç. Пĕрремĕш тата иккĕмĕш курсра вĕреннĕ вăхăтра опера мана питĕ кăмăла каятчĕ. Кайран çак кăмăл

мăкалчĕ. Çамрăк чухне юрă-кĕвĕ килĕшетчĕ, çапах та ăна туйăмлăн ăнланман та пуль эпĕ. Архиерей кĕллинче юрланине малтанхи пекех юрататтăм, тĕнпе киленесси Хусанта та сĕвĕрĕлменччĕ. Çапах халĕ те çак туйăм гимнази вăхăтĕнчи пек çивĕч марччĕ.

Сцена çине уйрăммăн тухакан артистсем ытлашши хумхантармастчĕç (сăмах май, эпĕ чапа тухнă Апполинарий Контский сĕрме купăс каланине те итленĕ). Опера вара — оркестрпа юрлани — чуна хытах тыткăнлатчĕ. Кайран эпĕ Мускавра тата Петербургра оперăсем кайса курнă, анчах вĕсем Хусан опери пек темшĕн кăмăла çĕклейместчĕç.

Чăваш халăх малашлăхĕшĕн, ырлăхĕшĕн чуна парса ĕçлеме тытăнсан театртан та, оперăран та сивĕнтĕм.

## ВĔРЕНТӲПЕ ВОСПИТАНИ ЫЙТĂВĔСЕМ

Эпĕ инородецсене, çав шутра чăвашсене те, вырăс культури анлăшне кĕртес ыйту пирки иккĕленнине пĕлсен Ильминский çак ĕçре эпĕ усăллă пуласса шанса манăн шухăш-курăма улăштарма тапратрĕ. Вăл чĕннипе ун патне тăтăш çӳреме тытăнтăм. Унпа паллашсан малтанхи тăвату уйăхра куçа-куçăн сахалтан та вăтăр хут тĕл пулса калаçрăмăр эпир. Каç пулнă-пулман пыраттăмччĕ те тул çутăлсан тин, Богоявлени чиркĕвĕнче ирхи чан çапатчĕç ĕнтĕ, каяттăм. Эпĕ çав чиркӳ çумĕнче пурăнаттăм, Ильминский патĕнчен тухсан ирхи кĕлле те кĕреттĕм. Чăваш халăхне вĕрентес ĕçре тĕпре вырăс чĕлхи мар, тăван чĕлхе тăмаллине, çакă ытти инородецсемшĕн те тĕпре пул-

маллине Ильминский юлашкинчен мана ӳкēте кēртрē-кēртрех.

Руçа пĕрлештерсе Вырăс патшалăхĕ туса хунă авалхи вырăс патшисен ĕçĕ-хĕлне хисеплетчĕ Николай Иванович, нацисене кăмăллатчĕ, уйрăмах вырăс пурнăçне тата вырăс çыннине мала хуратчĕ. Аслă Петĕр патша çинчен вара нимех те шарламастчĕ, унăн Анăç Европа çĕршывĕсене çывăх реформисене юриех аса илместчĕ.

Инородецсене çутта кăларас тата воспитани парас ĕçре вăл вырăссемпе вак халăхсене уйăратчĕ, вĕсен аталанăвĕнче уйрăмлăхсем пуррине куратчĕ*. Николай Иванович Раççейре тĕпленнĕ инородецсене «историн усрав ачисем» тетчĕ. Истори тата пурнăç условийĕсене кура вак халăхсен вырăс халăхĕнчен кая юлса аталанмалла тесе шутлатчĕ. Çак шухăша инородецсен шкулĕсенче, çав шутра чăваш шкулĕсенче те, шута илмелле тетчĕ. Германири, Англири, культура тĕлĕшĕнчен вăйлă аталаннă ытти çĕршывсенчи вĕрентӳпе воспитани системине ырламастчĕ вăл: ачасем ултă çула çитсенех, вĕсем тĕнчене тĕрĕс курма-хаклама, чун-чĕрине уçса пама тытăнсанах, ăс-тăнĕпе кăмăлне хуçма-çĕмĕрме тытăнаççĕ. Çак меслете килĕштерместчĕ Николай Иванович.

Н.И. Ильминскипе паллашнă чух вăл Екатерина Степановна мăшăрĕпе Алексей Александрович Бобровников вилсен усрава илнĕ ачисене

* Раççей империйĕнче вырăс мар халăхсене пĕтĕмĕшле инородецсем тенĕ. Çак ушкăна Раççейре пурăнакан Анăç Европа халăхĕсем официаллă шайра кĕмен. Сăмахран, нимĕçсем, латышсем, эстонсем, поляксем, финсем инородецсем шутланман. *(Кусаруçă.)*

пăхса ӳстеретчĕ. Асли Николай вун çичĕ çултаччĕ, Александр — вун пиллĕкре, Екатерина, манăн пулас мăшăрăм, вуннăри хĕрачаччĕ.

## А.А. БОБРОВНИКОВ

Алексей Александрович Бобровников Хусанти тĕн академийĕн бакалаврĕ пулнă. Н.И. Ильминскипе вăл академире туслашнă. Аслă вĕрентӳ заведенийĕсенче мĕнле специалистсем лекци вуланине кăтартма, вĕсем инородецсен ыйтăвĕсем çине епле çăмăлттай пăхнине палăртма Ильминский мана Алексей Александрович пурнăçĕнче пулса иртнĕ ĕç-пуçпа паллаштарнăччĕ.

Святейший Синодпа Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви 1847 (е 1848) çулта Китая черетлĕ православи миссине ăсатнă. Хусан хули инородецсен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен центр шутланнă. Мисси пайташĕсем хăйсен тивĕçне пурнăçлама хатĕрех пулманран Синод вĕсене Хусанта темиçе уйăхлăха чарăнса тăма, тĕн академийĕнче темиçе предметпа кĕске курс лекцийĕсене итлеме хушнă. Çак курса медицина лекцийĕсем те кĕнĕ, мĕншĕн тесен миссионерсен сывлăха упрас ыйтусене пĕлмелле пулнă.

Пуçлăхсем нумай шутласа тăмасăр А.А. Бобровникова, медицинăпа ĕмĕрне те кăсăкланмансскере, миссионерсене медицина лекцийĕсем вулама хушнă. Алексей Александрович çивĕч чĕлхеллĕ, шӳте юратакан çын пулнă. Яваплă çынсем наукăна ним вырăнне те хуманнипе вĕсене йĕплесе илме шут тытнă. Тĕн академийĕн ларăвĕнче Алексей Александрович темĕнле энциклопеди слова-

рӗнче вуланине астуса Китайра медицина Европӑри пек пулманнине, вӑл урӑх никӗсрен аталаннине каласа пама тытӑннӑ. Тӗслӗхрен, эпир Раççейре сив чире хинӑпа сиплетпӗр, çынна ӑнӑçлах сывататпӑр. Китайра вара çак чире сысна кӑмӑрчакне çунтарса сиплеççӗ.

Итлекенсем Алексей Александрович шӳтлесе калаçнине ӑнкарса иличчен çакнашкал танлаштарусем темиçе те илсе кӑтартнӑ вӑл. Çакӑн хыççӑн пуçлӑхсем ӑна текех медицина лекцийӗсене вулама хушман.

## Н.И. ИЛЬМИНСКИЙ СӐПАЙЛӐХӖ

Килӗнче Николай Иванович Ильминский тӗлӗнмелле усӑ кӑмӑллӑ çынччӗ, тумтирне те, атӑпушмакне те хӑех тирпейлесе тӑратчӗ. Атӑл тӑрӑх пӑрахутпа кайсан виççӗмӗш класпа çӳретчӗ: çул пӑтӑрмахӗсене тӳсетчӗ, халӑхпа пӗрлех сыврӑтчӗ, çынсемпе калаçса савӑнатчӗ. Пӗррехинче эпӗ Ильминскипе тата унӑн мӑшӑрӗпе пӑрахутпа кайрӑм. Арӑмӗ чирленӗччӗ, сывалма Самара çитмеллеччӗ, çавӑнпа Екатерина Степановнӑна хӑтлӑ каютӑна вырнаçтартӑмӑр. Манӑн Николай Ивановичпа пӗрле виççӗмӗш класра кайма тиврӗ.

Килти кабинечӗ ансатчӗ унӑн, стенасем çинче картинӑсем, çыру сӗтелӗ çинче ӑпӑр-тапӑр çукчӗ, Николай Ивановичӑн чунне, ӗçӗ-хӗлне сывӑх çынсен портречӗсем кӑна çакӑнса тӑратчӗç. Пӗррехинче ӑна хаклӑ чернильница парнелерӗм. Çултала́ка яхӑн ахалех тӑчӗ вӑл. Юлашкинчен Николай Иванович унпа усӑ курма тытӑнчӗ. Ахӑртнех, мана кӳрентерес мар терӗ пулас.

Мӑшӑрӗ вара пӳрт ӑш-чикки тулӑх пулнине

кӑмӑллатчӗ. Ильминскисем пурӑнакан пысӑк хваттер пӳлӗмӗсем хитреччӗ. Николай Иванович сӑпайлӑ тумтир юрататчӗ, официаллӑ тума кӑмӑлламастчӗ. Калпакӗсем те ахальлисемччӗ: кивелнӗ ҫӗлӗк, карттус тӑхӑнатчӗ.

Ильминскипе паллашсан пӗр хушӑ эпӗ ун манерлӗрех тумланаттӑм. Авлансан вара шукӑль цилиндр туянтӑм. Ҫак айванлӑхшӑн хама халӗ те каҫармастӑп. Телее, ҫав цилиндр нумаях «пурӑнаймарӗ»: чӑваш шкулӗнче вӗренекен хӗрачасем асӑрхамасӑр ун ҫине ларнӑ та лапчӑтса хунӑ. Ҫӗнӗ цилиндр текех илмерӗм.

## ВӖРЕНТЕКЕНӖМӖН КУН ЙӖРКИ

Официаллӑ тӗлпулу ҫук чухне килӗнче Николай Ильминский халат вырӑнне кивӗ пальто, урине туфли тӑхӑнатчӗ. Хусана пырсан ун патӗнче пурӑннӑскер, Николай Иванович ӗҫ кунӗ мӗнле иртнине эпӗ хам куҫпа курнӑ.

Ильминский ирпе пиллӗк-улттӑра, инородец учительсен семинарийӗпе пӗр вӑхӑтра, тӑратчӗ. Тӳрех ӗҫе пикенетчӗ. Ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлетчӗ вӑл. Чей вӗрететчӗ. Кам та пулин ӗҫпе килсен ӑна та хӑналатчӗ. Ӗҫ кунӗ ҫирӗп йӗркепе пымастчӗ унӑн. Тӗп ӗҫӗ — Часослов, Евангели, Псалтирь куҫарӑвӗсене тӳрлетессиччӗ. Текстра мӗн каланине ӑнланса пӗтӗмпех танлаштаратчӗ, ятарлӑ библиотекӑпа усӑ курса справкӑсем хатӗрлетчӗ. Юлашки ҫулсенче, сывлӑхӗ хавшасан, хӑй перо тытмастчӗ, ун патне кам малтан килнӗ — ҫавна ҫыртаратчӗ, кабинет тӑрӑх хӑвӑрт унталла-унталла утса шухӑшӗсене ҫеҫ калатчӗ. Мана та ҫыртаратчӗ вӑл.

Кăнтăр апатне икĕ сехетре ларатчĕç. Кам та пулин Николай Иванович патне килнĕ пулсан, ăна та сĕтел хушшине чĕнетчĕç. Арçын тарçăсем çукчĕ вĕсен, апат пĕçерекенпе кил-çурта тирпейлекен çеçчĕ. Кайран, ура çине тăрайми пулсан, Николай Иванович хваттер сыхлакан хуралçăна йышăнчĕ, вăлах кил хуçине те пăхса тăратчĕ.

Кăнтăр апачĕ хыççăн Ильминский икĕ сехете яхăн тĕлĕрсе илетчĕ. Вăрансан каллех ĕçе тытăнатчĕ. Мĕн çиесси уншăн пĕлтерĕшлĕ марччĕ, çавăнпа ахаль апат-çимĕçпех çырлахатчĕ. Хусанта паллă çын пулнăскер, Мухтав тата Патша кунĕсенче вăл орденсем çакнă мундир тăхăнатчĕ. Икĕ çăлтăр çиçетчĕ унăн кăкăрĕ çинче. Вара лавça тытса хула витĕр собора каятчĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, вăл мундирсене, чин паллисене, парадсене, официаллă церемонисене кăмăлламастчĕ.

Чĕмпĕре пырса кайнă чухне вăл вырăнти кĕпĕрнаттăрсем патне пĕрре те кайса курман. Православи чиркĕвĕн представителĕ пулнă май архиерей патне çеç çитсе килетчĕ. Чĕмпĕр архиепископĕ Варсонофипе туслăччĕ Ильминский. Халăх училищисен директорĕ И.Н. Ульяновпа та курнăçатчĕ.

## ЧУН ТАТА ĂС-ТĂН ИРĔКЛĔХĔ

Н.И. Ильминский шкулта нимĕнле политика та, çав шутра ачасене вăйпа вырăслантарни те, пулмалла мар тетчĕ. Чун тата ăс-тăн ирĕклĕхĕшĕн çине тăратчĕ. Вырăс чĕлхипе Турă Саккунĕ — инородецсене вырăслантармалли хĕç-пăшал текен теори тарăхтаратчĕ ăна. Раççейĕн çурçĕр анăç тăрă-

хĕнче поляк, литва тата ытти халăхсене часрах ырăслантарас меслетпе вĕрентнине сивлетчĕ.

Эпĕ Хусана пынă чух правительство Атăл çири чăваш ыйтăвне тимлеме тытăннăччĕ ĕнтĕ, мĕншĕн тесен çак хушăра çынсем православирен ислам тĕнне йышлăн куçма тытăннăччĕ. Çак пулăмпа мĕнле кĕрешесси пирки çӳлте тавлашу пыратчĕ.

Ильминскин ĕçĕ-хĕлĕ, шухăш-кăмăлĕ çинчен чылай статья пичетленнĕ. Хусан вĕрентӳ округĕн попечителĕ П.Д. Шестаков Николай Ивановича яланах пулăшса пынă, чăвашсене, тутарсене тата ытти инородецсене вĕрентес ыйтура унăн шухăшне ырланă. Вĕрентĕвĕн мĕнле меслечĕсемпе еплерех усă курас енĕпе иккĕшне те К.П. Победоносцев хытă хӳтĕлетчĕ.

## ИНОРОДЕЦСЕН ЫЙТĂВĔ

Ильминский инородецсене çутта кăларас ĕçрен уйрăлмастчĕ. Эпĕ пĕр тĕслĕх илсе кăтартатăп. 1880-мĕш çулсенче, Николай Иванович виличчен вунă çул маларах, Финляндири темĕнле общество наукăпа вĕрентӳ ĕçĕнчи çитĕнӳсемшĕн ăна хисеплĕ диплом парасшăн пулнă. Ильминский çак пĕрлĕх вотяксемпе мĕнле ĕçлени çинчен вуласа пĕлнĕ те сĕннĕ чина илме килĕшмен. Мĕншĕн тесен Финляндири обществăн ĕçĕ-хĕлĕ унăн шухăшĕсене хирĕçленĕ, ачасене шкулта çакнашкал меслетпе вĕрентмелле мар тенĕ вăл.

Ильминский пурнăçĕнчи кăсăклă пулăма илсе кăтартатăп. Унпа паллашни эрне çеç çитнĕччĕ пуль, вăл мана Д.А. Толстой граф патне çырнă çырăвне вулаттарчĕ. Лешĕ вăл вăхăтра — халăха

çутта кăларас ĕç министрĕ тата Святейши Синод обер-прокурорĕччĕ. Çырăва яма хатĕрлесе çитернĕччĕ ĕнтĕ, ăна çĕнĕрен хитре почеркпа урăх çынна çыртарнăччĕ, Николай Иванович алă пуснăччĕ. Пысăкчĕ вăл — тăвата листа. Ильминский унта Раççей инородецĕсем вырăс халăхĕн пайĕ, вĕсем этемлĕхĕн пысăк çемйинче тивĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ текен шухăша тĕплĕн пăхса тухнăччĕ. Çавăнпа вак халăхсене вырăс халăхĕнче мĕн лайăххи пур — çавна йăлтах памалла, çав вăхăтрах вырăс мар халăхсен историне, хăйне евĕрлĕхне, ырă енĕсене упраса хăвармалла тесе пĕтĕмлетнĕччĕ. Анчах та Хусан вĕрентӳ округĕн попечителĕ П.Д. Шестаков ăна çак çырăва Петербурга яма сĕнмен. Правительствăн аслă сийĕсенче ун чухне Раççей империне кĕрекен халăхсене вырăслатас шухăш пуç пулса тăнăччĕ. Çавăнпа çак çыру Толстой графа килĕшмессе те пултарнă.

1870 çулхи пушăн 26-мĕшĕнче ятарлă канашлура сӳтсе явнă хыççăн Атăлçи инородецĕсем çинчен калакан положение çирĕплетрĕç. Канашлăва Александр Иванович Георгиевский пысăк пуçлăх та хутшăннăччĕ. Халăха çутта кăларас ĕç министерствин журналĕн редакторĕччĕ вăл ун чухне. Д.А. Толстой граф çав çынна пысăка хурса хаклатчĕ. А.И. Георгиевский сăмахне чиновниксем шута илетчĕç. Кайран вăл халăха çутта кăларас ĕç министерствин ăслăлăх комитечĕн председателĕ пулчĕ.

Атăлçи инородецĕсем çинчен калакан положени — тĕрĕссипе, вак халăхсене вырăслатмалли кĕске программа — Ильминские килĕшместчĕ. Çавăнпа ĕнтĕ вăл Толстой граф патне çыру

çырнă, анчах Хусан вĕрентӳ округĕн попечителĕ П.Д. Шестаков шухăшне итлесе çырăва яман. Николай Иванович вилсен унăн хучĕсем хушшинче çак çыру, эпĕ пĕлнĕ тăрăх, тупăнман. Ăна çунтарса та яма пултарнă вăл.

Каярах К.П. Победоносцев витĕмне пула Ильминскин ĕçĕ-хĕлĕ кăштах улшăнчĕ, вак халăхсене вырăслатас енне сулăнчĕ. Константин Петрович инородецсен тĕн туйăмĕсене тата туртăмĕсене хисеплетчĕ. Ильминский чунĕпе миссионерччĕ, пурнăç тăршшĕпе вăл çак çултан ниçта пăрăнмасăр утрĕ.

## ÇЕМЬЕ НИКĔСĔ

Хăйсене тĕслĕхлĕ христиан пек кăтартса, анчах та чăннипе вара хăйсене кăна ырласа ыттисене хĕсекен-пусмăрлакан çынсене хамăн ĕмĕрте чылай курнă эпĕ. Ильминскире çакнашкал енсене пĕрре те асăрхамарăм. Вăл хăйне мăнна хумастчĕ.

Хăш-пĕр паллă çынсеннех çӳлерех асăннă çитменлĕхсем пурччĕ, çавăнпа вĕсемпе калаçма, ĕç кăларма йывăрччĕ. Николай Ивановича миссионерсене шăпах çакнашкал каппайлăхшăн килĕштерместчĕ — лешсем хăйсене ытла мухтатчĕç, çылăхсăр тесе шутлатчĕç. Тивĕççĕр çынсене сивленĕ май Ильминский Христосран пур енлĕ тĕслĕх илме сĕнетчĕ: Турă ывăлĕ ырă кăмăллă, пуринпе те пĕр тан пулни, пуç каçăртса çӳременни Евангелире лайăх курăнать.

Тĕнпе çыхăннă нумай ыйтăва Ильминский хăйне майлă ăнланатчĕ. Сăмахран, православи духовенстви хăйне евĕрлĕ çынсене çул паманни

майӗпен пӗтсе пырать тетчӗ. Ăруран ăрăва пӗрешкел йăла-йӗркесемех сăнчăрланаççӗ, вӗсем тӗн тытăмӗнче ним улшăнмасăр çаврăнаççӗ.

Пулас ăрусем патне çак çитменлӗхсене ырă пулăм пек илсе пыраççӗ. Пӗтсе пыракан тӗн сословийӗн хăйне евӗрлӗ çитменлӗхӗсемпе кӗрешес тесен, Ильминский шухăшӗпе, духовенствăн ывăлхӗрӗн ытти сословисен ачисемпе хутшăнмалла, тӗпрен илсен — хресченсемпе тăванлашмалла, мӗншӗн тесен лешсем — вырăс халăхӗн чи сывă та çирӗп пайӗ.

Инородец ачисен те ытти халăх ывăл-хӗрӗпе хутшăнмалла. Христианлăха ӗненсе йышăнма тытăннисемшӗн çакă ырă йăла пулса тăмалла. Çемье никӗсӗнче христианлăх, православи идеалӗсем пулмалла.

## ХАЛĂХ ӖНЕНӖВӖ

Н.И. Ильминский витӗмӗпе тата пил панипе Хусан университечӗн студенчӗ пулнă чухнех халăха çутта кăларассипе çыхăннă ӗçӗ-хӗле явăçрăм эпӗ. Чӗмпӗр чăваш шкулне никӗсленипе кăна хаклама çук ăна (ун чухне вăл мӗскӗн, тин çеç куçне уçнă общежити çеçчӗ), кӗнекесене чăвашла куçарни те, тӗн ыйтăвӗсемпе яланах ӗçлени те çакăнтах кӗрет. Çуллахи каникулта ялтан яла çӳреттӗм, мăсăльман тӗнне йышăнма пултаракансемпе нумай калаçаттăм.

Калани ăнланмалла пултăр тесе çав вăхăтри чăваш халăхӗ тӗн тӗлӗшӗнчен мӗнле пулнине кăтартса парам. Пăхма кăна чăвашсем православи йышăннă пек туйăнатчӗç, чунӗпе вара несӗлӗсен тӗнӗпе пурăнатчӗç е мăсăльманлăх енне сулăнатчӗç.



1870-мӗш çулсенче Чӗмпӗр кӗпӗрнин кӑнтӑр хӗвелтухӑç енӗ (тӗпрен илсен — Пӑва уесӗ) чӑваш ялӗсемпе юнашар вырнаçнӑ раскольниксен витӗмне лекрӗ. Чӑвашсем раскольниксем патне тара кӗни те çак юхӑма анлӑлатрӗ. Çак уесри Асанкасси, Васан чӑваш ялӗсенче уйрӑмах сисӗнетчӗ ку. Карсунь уесӗнче вара çак витӗм чӑвашсем, ирçесем, вырӑссем пурӑнакан Каргино ялӗнче çеç палӑратчӗ.

Çакна та асӑрхаттармалла: чӑвашсем хушшинче раскол вӗрентӗвӗ анлӑн сарӑлмарӗ, православишӗн хӑрушлӑх тухса тӑмарӗ. Çар хӗсметӗнчен тӑван ялне таврӑннӑ чӑваш салтакӗсем хушӑран анабаптистсен* тата штундистсен** вӗрентӗвне илсе килетчӗç. Анчах кун пекки сайраччӗ, юлашки вунӑ-вун пилӗк çул хушшинче çынсем раскол серепине лекни Кӑрмӑш уесӗнчи Туктамӑш ялӗнче пулнӑччӗ.

## СЕКТАНТСЕМ

Çак çулçӳревсенче эпӗ тӗн тӗлӗшӗнчен пач юхӑннӑ çынсене те кураттӑм. Боголюбов аттепе пӗррехинче чӑваш раскольникӗсемпе тӗл пултӑмӑр. Пурнан пурнӑçра раскольниксен вӗрентӗвӗнчен пиcсессӗн леш тӗнчере хӑйсем упа пулса тӑрассине ӗненетчӗç хайхисем. Çакнашкал анранӑ-йӳтенӗ çынсем тупӑнсан вӗсемпе тӳрех

* Анабаптист — урӑхла «тепӗр хут шыва кӗнисем». Вӗсен вӗрентӗвӗн тӗп тӗллевӗ — çыннӑн çитӗнсе çитсе хӑй шут тытсан тепӗр хут шыва кӗмелле. Çак вӗрентӳ малтан Германире тата Нидерландра çуралнӑ. *(Куçаруçӑ.)*

** Штундист — баптистсен вӗрентӗвӗн юхӑмӗ. *(Куçаруçӑ.)*

чăвашла калаçма тытăнаттăм. «Сирĕн леш тĕнче çинчен шутламалла та мар, мĕншĕн тесен эсир аташуллă шухăшăрсене пула çĕр çинчи пурнăçрах тискер чĕрчунсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăми пулнă», — тесе ăнлантараттăм.

Хăш чухне чăвашсем секта вĕрентĕвне хăйсем пĕлнĕ пек те улăштаратчĕç, çавăнпа çак çынсемпе калаçнă чух вĕсем мĕнле йăлана тытса пынине те пĕлме çукчĕ. Чĕмпĕрте ун чухне вырăс раскольникĕсем пурччĕ — шурă ризăсем тетчĕç вĕсене. Лавккаран илнĕ, сăрланă япала тăхăнни çылăх тесе ĕненетчĕç вĕсем, çавăнпа килте тĕртнĕ шурă пирпе çеç усă куратчĕç, пуçа вара çăмран йăвалано хура шĕлепке тăхăнатчĕç. Пĕр вунă çул иртсен Асанкассинче тата ытти ялсенче те Чĕмпĕрти шурă ризăсен сектин йăлисене тытакан чăвашсене тĕл пултăм, шалт тĕлĕнтерчĕ çакă. Шурă ризăсен вĕрентĕвĕ Чĕмпĕртен аякри чăваш ялĕсене епле майпа пырса ернĕ — ăнланма çук.

Раскол ыйтăвĕсене ятарласа нихăçан та тĕпчемен эпĕ. Чăвашсене раскол сиен кӳрессе çамрăк чухнех ĕненмен. Раскол кĕнекисене вырăсла е славянла çырнă, çавăнпа чăвашсем унта мĕн çырнине ăнланмастчĕç. Çакна та асăнам: раскольниксемпе калаçнă чух вĕсен чун çирĕплĕхĕнчен, ĕненӳлĕхĕнчен питĕ тĕлĕнеттĕм.

Раскольниксем нумай япалана ухмахла-айванла йышăннине кураттăм эпĕ. Çапах та хăш-пĕр пачăшкăсем вĕсене тĕн ĕненĕвĕшĕн хĕсĕрленине сивлеттĕм, мĕскĕнсене ытла та ним вырăнне хумастчĕç. Çакнашкал «миссионерлăх» чуна сивĕтетчĕ. Çавăнпа православи миссионерĕсемпе раскольниксен тавлашăвĕсене сайра хутшăнаттăм —

усси çукчĕ, сиенĕ вара нумайччĕ. Н.И. Ильминскипе тĕл пулсан унăн шухăшне чуна хыврăм: миссионерлăхăн тĕрĕс çулĕ православи тĕнĕн сывлăшĕпе сывлакан халăх шкулĕпе çыхăннă.

Евангели вуласа эпĕ Чĕмпĕр кĕпĕрнипе çеç çӳремерĕм. Н.И. Ильминский ыйтнипе çулла та, хĕлле те Самар тата Хусан кĕпĕрнисене кайса килеттĕм. Хушăран тĕлпулусене раскольниксем пыратчĕç, манпа тавлашма пуçлатчĕç. Эпĕ вĕсемпе яланах туслă пулнă. Вĕсем мана усал туман, тарăхтарман. Кайран та Чĕмпĕрти чăваш шкулне ман пата унччен паллană раскольниксем килсех тăратчĕç. Хушăран эрнипех пурăнатчĕç вĕсем, тĕн ыйтăвĕсемпе паллашатчĕç. Тавлашас, тӳрре тухас шухăш çукчĕ хăйсен, эпĕ те пушă супĕлтетӳсенчен пăрăнаттăм — суя тĕнпе анранă çынсемпе калаçни чĕрне хурине те тăмастчĕ.

## ТУТАР ХАЛĂХĔН ВИТĔМĔ

Чăвашсем хушшинче Л.Н. Толстой вĕрентĕвĕн тата Рим католицизмĕн витĕмĕ пурри çинчен çамрăк чухне те илтмен, халĕ те пĕлместĕп. Рим католицизмĕн миссионерĕсем чăвашсемпе тутарсене тивместчĕç, мĕншĕн тесен вĕсен чĕлхине пĕлместчĕç. Тĕн тĕлĕшĕнчен чăвашсем тутар халăхĕн витĕмне лекнĕччĕ, опытлă мулласем илĕртсе тăнипе чăвашла лайăх пĕлекен тутарсем чăвашсене хăйсен чĕлхине вĕрентетчĕç.

Вырăнти пурнăç йĕркисемпе те тачă çыхăнăччĕ çакă: чăвашсемпе тутарсем авалхи кӳршĕсем пулнă, ялĕсем юнашарах ларнă, çурри чăваш, çурри тутар ялĕсем пуррине, тутар халăхĕн

культури çӳлерех тӑнине чӑн малтан асӑнмалла. Чӑваш ялӗсенче тутар витӗмӗ вӑйланни инородецсем хушшинче православи тӗнне кирлӗ шайра тытса пыманнипе те çыхӑннӑ. Çавӑнпа ӗнтӗ Н.И. Ильминский чӑвашсем тутара ан тухчӑр тесе пур вӑйран кӗрешрӗ. Эпӗ те, Николай Ивановичӑн вӗренекенӗ тата сотрудникӗ, нумай тӑрӑшрӑм çак ӗçре.

Тутарланас хӑрушлӑха лекнӗ чӑваш ялӗсем тӑрӑх эпӗ 1871—1872 çулсенче, Матфей çырнӑ Евангелине чӑвашла куçарсан, çӳреме тытӑнтӑм. Çак Евангелипе православие вӗрентсе чӑваш ялӗсене çитрӗм, вулавсем йӗркелерӗм, вырӑнти халӑхпа чӑвашла калаçусем ирттертӗм.

Ялсенче мана пысӑкрах çурт тупса паратчӗç, итлеме кӑмӑл тунисене чӗнетчӗç. Халӑх йышлӑн пухӑнатчӗ, хӗрарӑмсем те пыратчӗç. Пӳртре пӑчӑччӗ, сывлӑш çитместчӗ. Эпӗ Евангелие ӑнлантараттӑм, манпа килӗшменнисен сӑмахне итлеттӗм, уйрӑм ыйтусене хуравлаттӑм. Калаçу кӑмӑл-сипет, çитмен пурнӑç, вырӑнти пӑтӑрмахсем çине куçатчӗ.

Ялсем тӑрӑх пуçлӑхсенчен ирӗк ыйтмасӑрах çӳреттӗм, мана, студента, вырӑнти влаç тивместчӗ. Хӑй ирӗкӗпе миссионер пулса тӑнӑ çынна никам та командировка укçи памастчӗ, çавӑнпа çул тӑкакӗсем хамран тухатчӗç. Паллах, Н.И. Ильминский мана манса каймастчӗ. Ӑна паллакансем, килӗштерекенсем пур çӗрте те пурччӗ, вӗсем те мана пулӑшатчӗç.

Миссионерлӑх тӗллевӗсемпе ман пекех чӑваш ялӗсем тӑрӑх çӳрекен А.В. Рекеев вара урӑхла йӗркесенче ӗçлерӗ. Малтан Тимӗрçенри учитель-

сен семинарийĕн вĕрентекенĕччĕ вăл, каярах Хусанти учительсен семинарийĕн диаконĕ тата вĕрентекенĕ пулса тăчĕ. Ĕçлекен çын пулнă май ăна шалу тӳлетчĕç.

Хушăран манпа пĕрле пачăшкăсем те çӳретчĕç. Пăва уесĕнчи Чиркӳллĕ Шăмăршă ялĕнчи Христофор Федорович Боголюбов пачăшкă ислам витĕмне вăйлах лекнĕ Васан ялне пыратчĕ. Çула май эпир раскол енне сулăннă ытти чăваш ялĕсене кĕрсе тухаттăмăр. Тĕн тĕлĕшĕнчен пăсăлнă çынсем патне килнех кĕреттĕмĕр, вĕсемпе калаçаттăмăр, йăнăш çулпа утнине ăнлантараттăмăр.

## ИНОРОДЕЦСЕН АРХИЕРЕЙĔ

Инородецсене, уйрăмах крешĕн тутарсене, ятарлă архиерей кирлĕ текен шухăша Николай Иванович вилес умĕн темиçе çул маларах каланăччĕ. Ильминский шучĕпе, çакăн пек архиерее Хусан епархийĕн викарийне лартсан крешĕн тутарсем чунĕпе те хавхаланĕччĕç, вырăс мар халăхсен архиерейĕн ячĕ те çӳлерех çĕкленĕччĕ.

Н.И. Ильминский чирпе асапланнă вăхăтра Хусан архиепископĕ Павăлччĕ. Вăл Грузирен килнĕччĕ, унта ăна вĕлерес шутпа тапăннă та пулнă, çакăн çинчен пĕр хушă Раççейĕпех шавланăччĕ. Çавăнпа-ши вăл грузинсене питĕ кураймастчĕ. Ильминские питĕ хисеплекен Павăла эпĕ лайăх пĕлеттĕмччĕ. Хусанта нумай пулаймарĕ вăл, килнĕ чухнех чирлĕччĕ. Çӳллĕ çынччĕ хăй, кĕлеткипе самăрччĕ. Вăл Хусанта вилчĕ, ăна кунтах пытарчĕç.

Инородецсене хăйсен архиерейĕ кирлĕ текен

шухăш сăмах шайĕнчех юлчĕ. Хусанта пурăнакан инородецсен архиерейне тутар крешĕн шкулĕнчи тĕн службине шанса пани тĕрĕс пулатчĕ тесе Ильминский темиçе те каланă мана. Крешĕнсемпе пĕрле унăн тутар ялĕсем тăрăх çӳремелле, православи кĕллисене ирттермелле тетчĕ вăл. Хусанти крешĕн тутар шкулĕнчи Василий Тимофеев протоиерей (тĕне кĕнĕ тутар) хусаха юлсан Ильминскин çак ĕмĕт вăйланчĕ.

Архиерей пулма В.Т. Тимофеевăн лайăх енсем, чăнах та, нумайччĕ. Вăл кĕлĕсене, тĕн сăмахĕсене сумлăн та илемлĕн, хавхаланса та çунса калатчĕ, кирлĕ чух тутарла пуплетчĕ. Сăнпа та, пĕвĕпе те куç тулличчĕ вăл. Тĕн сăмахĕ каланă чух куçĕсем çиçсе тăратчĕç.

Н.И. Ильминский вилсен унăн тупăкĕ умĕнчи сăмаха чĕререн хурланса мĕнлерех хăватлă каларĕ В.Т. Тимофеев. Унăн сăмахĕсем çынсен чунне тыткăнларĕç. Василий Тимофеевичăн арăмĕ крешĕн тутар хĕрарăмĕччĕ, упăшкине питĕ кĕвĕçетчĕ. Мăшăрĕ тĕне кĕнĕ тутарсен ялĕсене тухса кайсан ниçта кайса кĕрейместчĕ. Упăшкине кĕвĕçӳпе асаплантаратчĕ, Николай Иванович патне пырса мăшăрне евитлетчĕ.

Чăвашсен ятарлă архиерейĕ пирки эпĕ Н.И. Ильминский крешĕн тутарĕсен архиерейĕ çинчен каличчен пĕр вунă çул маларах шутланăччĕ. Хамăн проектпа вĕрентекенĕме та паллаштартăм. Политика пăтăрмахĕсем çак проектсене пурнăçа кĕртме май памарĕç. Çитменнине тата çав вăхăтри чăваш духовенстви йышĕнче чăвашсен архиерейĕ пулма тивĕç çын та çукчĕ.

## Н.И. ЗОЛОТНИЦКИЙ

1878 (е 1879) çулта «Хусан кӗпӗрнин хыпарӗсем» хаçатра Гурий святитель тӑванлӑхӗн отчечӗ пичетленчӗ. Унта чӑвашсем пирки тӑванлӑх мӗнле ӗçсем туни те пурччӗ. Çак ӗçре чӑваш шкулӗсен инспекторӗ пулнӑ Николай Иванович Золотницкий — ман умӗн çак должноçра ӗçленӗ — нумай тӑрӑшнӑ тесе кӑтартнӑччӗ. Хӑй таса вырӑс пулнӑ май вырӑс патриотлӑхне тӗпе хурса вӑл чӑвашсем валли букварь, чӑваш чӗлхипе календарь хатӗрленӗ тата ытти ӗçсене те туса ирттернӗ. Çак ырӑ ӗç-пуç малтан пулнӑ иккен, анчах та паянхи кун лару-тӑру пач урӑхла тесе палӑртнӑччӗ Гурий святитель тӑванлӑхӗн отчетӗнче.

Чӑваш шкулӗсен çӗнӗ инспекторӗ И.Я. Яковлев хӑйне шанса панӑ чӑваш шкулӗсенче чӑваш халӑхне вырӑссене тата патриотизма хирӗç тӑрататать, хӑй те сепаратизм* еннелле туртӑнать. Унӑн шухӑшӗсем вӗренекенсене те, вӗрентекенсене те сиен кӳреççӗ тенӗччӗ отчетра. Н.И. Золотницкий тӗрӗс вӗрентсе ӳстернӗ чӑваш çыннине — Г.Ф. Филиппов диакона — хӗсӗрлет тесе те çырнӑччӗ ман пирки. Эпӗ Гурий святитель тӑванлӑхӗн чӑн отчетне «Хусан кӗпӗрнин хыпарӗсенче» пичетленӗ текстпа танлаштарса пӑхрӑм та унта хама тиркенине тупаймарӑм. Н.И. Золотницкий тӑванлӑхӑн секретарӗччӗ, çакӑнпа усӑ курса вӑл ман çинчен хаçата суйса çырса панӑ, хӑйӗн çитӗнӗвӗсене палӑртнӑ. Хаçатри статья çинчен мана чӑваш шкулӗсем тӑрӑх çӳренӗ чухне каларӗç.

* Сепаратизм — уйрӑм патшалӑх йӗркелеме ӑнтӑлни.

Хама сепаратист тесе каланине чӑтма йывӑрччӗ. Ҫакнашкал айӑплани мана та, Чӗмпӗр чӑваш шкулне те сиен кӳме пултаратчӗ.

Кӑшт вӑхӑт иртсен Хусана кайрӑм, яланхи пекех Н.И. Ильминский патӗнче чарӑнтӑм. Ӑна Н.И. Золотницкин хаҫатра пичетленӗ статйине тата Гурий святитель тӑванлӑхӗн отчетне кӑтартрӑм. Гурий святитель тӑванлӑхӗн секретарӗ чее этемччӗ, эрех ӗҫме юрататчӗ, хӑйне Ильминский тусӗ пек кӑтартатчӗ, инородецсене хӳтӗлемелле тесе Николай Ивановичран та хытӑрах шавлатчӗ. Манӑн сӑмахсем вӗрентекенӗме килӗшмерӗҫ: Золотницкин киревсӗрлӗхне курчӗ вӑл, ӑна тӳрре кӑларас тесе мӗн каламаллине вара пӗлмерӗ. Вӑл тарӑхса пуҫне кӑна сулларӗ, йӑлт аптраса кайрӗ. П.Д. Шестаков попечитель патне кайса ӑна тӗрӗссине ӑнлантарса памалла пуль тесе ыйтрӑм унран. Тӗрӗс шухӑш тесе йышӑнчӗ ҫакна. Вӑл вӑхӑтра Петр Дмитриевич Гурий святитель тӑванлӑхӗн канашӗн председателӗччӗ. Тӑванлӑх вара Антоний архиепископ хӳттинче тӑратчӗ.

П.Д. Шестаков патне кайрӑм та Н.И. Золотницкий элекӗ ҫинчен каласа патӑм, «Хусан кӗпӗрнин хыпарӗсем» хаҫатӑн кӑларӑмне кӑтартрӑм. Петр Дмитриевич мана ҫапла хушрӗ: «Высокопреосвященнӑй Антоний патне кай та ҫак хаҫата кӑтарт. Шестаков хӑйӗн вӗрентӳ округӗнче сепаратист ӗҫленине чӑтаяс ҫук тесе кала. Яковлев сепаратизм енне сулӑннине официаллӑ отчетра мӗншӗн пичетленӗ тесе ыйт. Ҫакнашкал элек хыҫҫӑн Шестаков Гурий святитель тӑванлӑхӗн канашӗн председателӗ пулма килӗшмест тесех пӗлтер».

Петр Дмитриевич хушнипе Антоний архиепископ патне ҫитрӗм. Вӑл мана хӑнасен пӳлӗмӗнче кӗтсе илчӗ. Эпӗ ӑна попечитель сӑмахӗсене пӗлтертӗм, «Хусан кӗпӗрнин хыпарӗсем» хаҫат номерне вулама патӑм, Н.И. Золотницкий мана хирӗҫ мӗнле усал ӗҫ тунине каларӑм. Ҫак киревсӗрлӗхе ӑнланса илсен архиепископ ура ҫине тӑчӗ те мана пуҫ тайрӗ. «Санран та, Петр Дмитриевичран та каҫару ыйтатӑп. Калӑр ӑна: ҫакна мана пӗлтермесӗр хӑтланнӑ, йӑнӑша тӳрлететпӗр, хаҫатра пичетлетпӗр», — терӗ.

Владыка мана пиллерӗ те кайма ирӗк пачӗ. Тӗлпулу мӗнле иртнине пӗлтерме эпӗ Шестаков патне таврӑнтӑм. Антоний манпа — ҫамрӑк тата нимӗнпех те палӑрса кайман ҫынпа — ҫапла каласни чуна пырса тиврӗ. Петр Дмитриевич мана Гурий святитель тӑванлӑхӗн канашӗпе ҫыхӑнма хушрӗ, тӑванлӑха пӑхӑнман Григорий Филиппович Филиппов учительпе Иван Яковлевич Яковлев инспектор ҫинчен мӗне пула ҫапла ҫырнине ыйтса пӗлме каларӗ.

Ҫак ӗҫ-пуҫ П.Д. Шестакова чӑнахах та пырса тивнӗ-ши? Кӑшт вӑхӑт иртсен вӑл Гурий святитель тӑванлӑхӗн ӗҫӗсенчен пӑрӑнма тытӑнчӗ.

## Н.И. ИЛЬМИНСКИЙ КӐМӐЛӖ

Николай Иванович вар ракӗпе хытӑ асапланчӗ. Вилес умӗн хӗрӗх куна яхӑн апат ҫиме те, шыв ӗҫме те пултарайман вӑл. Кирек мӗнле апатран та кӑмӑлӗ пӑтраннӑ, пӑр ӗмсе ҫеҫ кӑштах ҫырлахнӑ. Ҫапах та чунӗпе ҫирӗп пулнӑ, тӑнӗ пӑтранман. Ӗмӗрлӗхех куҫне хупас умӗн темиҫе ми-

нут маларах К.П. Победоносцевпа, И.Д. Деляновпа сывпуллашса çырусем каласа çыртарнă, вĕсене алă пусса пама та хал çитернĕ.

Ильминский шӳчĕсем, унăн чун хаваслăхĕ, çынсен хавшак енĕсене сăнаса-асăрхаса çав çитменлĕхсене пĕчĕк ача пек айăпсăррăн кулса çиеле кăларасси Николай Иванович сывлăхĕ улшăнсан, виличчен тăвată-пилĕк çул маларах, çухалчĕç. Унччен вăл пурнăçĕнче пулса иртнĕ кулăшла самантсене каласа пама ăстаччĕ. Хăйне те шеллеместчĕ — самаях йĕплесе илкелетчĕ.

Манăн мăшăрăн тетĕшĕ Николай Бобровников Ильминскипе тавлашма юрататчĕ. Лешĕ вара: «Коля, чăнлăхшăн куççуль тăкичченех çине тăр!» — тесе шӳтлетчĕ. Николай Иванович кукамăшĕ купса çемйинченччĕ, хăйне евĕрлĕ, чĕрĕ, питĕ вăр-вар хĕрарăмччĕ вăл. Унăн мăнук нумайччĕ, лешсем ытла тарăхтарса çитерсен вăл пушмакне хыватчĕ те вĕсене пуçĕсенченех  çапатчĕ.

Çав хĕрарăмăн Куçма тетĕшĕ пурччĕ, ăна Кузька тесе чĕнетчĕ. Суту-илӳре пултаруллăччĕ лешĕ. Ильминские тата ытти тăванĕсене çак карчăк унран тĕслĕх илме хушатчĕ: «Кузька тетӳ пек ĕçлĕр!» — тетчĕ.

Кăмăлĕ лайăх чух çемье пурнăçĕнчи мыскарасене Николай Иванович хăйĕн манерлĕ шӳчĕпе каласа паратчĕ. Унăн сасси хитреччĕ, çемçе, янравлăччĕ. Вăл шӳтленĕ чух ăна итлекенсем пурте ахăлтатса кулатчĕç. Мăшăрĕ çеç ним пулман пек тытатчĕ хăйне. Ахăртнех, Екатерина Степановна çак сăмахсене илтнĕ те пулĕ, мĕншĕн тесен упăшки хушăран вĕсене темиçе те калатчĕ. Ильминский ачалăхĕнчи пĕр ĕç-пуçа пĕрмай аса

илетчĕ, пĕчĕк чухнехи ăспа ял хуçалăх ĕçне кӳлĕннинчен кулатчĕ. Пĕчĕккĕ чухне вăл мачча тăрринчи тăпра çине ыраш акнă та ăна питĕ тăрăшса шăварса тăнă. Шыв вара мачча витĕр сăрхăнса хваттерех юхса аннă. Çавăнтанпа çĕр ĕçĕпе тек аппаланман вăл.

Пĕррехинче пире Ильминский тухăç халапне каласа пачĕ. Мăсăльмансем пурăнакан çĕрте икĕ мичĕт ларнă, муллисем пĕр-пĕринпе килĕштермен иккен — яланах хирĕçнĕ: ĕненекенсене кашниех хăй патне илĕртме хăтланнă. Вĕсенчен пĕри теприне усал тăвас тесе суя сăмах сарнă: леш муллан пурнăçĕ çав тери таса пулнăран унăн сухалĕнчи кашни пĕрчи асамлă имĕш. Çак сăмаха ĕненнĕ çынсем часрах çав мулла патне чупса çитнĕ те сухалне йăлт тăпăлтарса пĕтернĕ. Чап тени хăш чух сиенлĕ тата хăрушă килсе тухать тесе ăс вĕрентсе каласа кăтартнăччĕ çак халапа Ильминский.

Николай Ивановича çынсем тĕн ĕненĕвĕшĕн çине тăни питĕ килĕшетчĕ. Ливанра пурăнакан друзсенчен — православи йышăннă арабсенчен — тĕслĕх илме хушатчĕ: храмĕсем те чухăн, хăйсем те çитнĕ-çитмен çеç пурăнаççĕ пулин те хăçантанпа Франци католикĕсене парăнмаççĕ, ĕненĕвĕшĕн çирĕп тăраççĕ.

Николай Иванович çынсем пуçтарăннă çĕрте пуплеме юратмастчĕ. Енчен те халăх умĕнче сăмах калама тивсен малтанах çырса хатĕрленетчĕ те хут тăрăх вулатчĕ.

## ИЛЬМИНСКИН ВĔРЕНТӲ СИСТЕМИ. ТАВЛАШУСЕМ

Н.И. Ильминскин юлашки çулĕсенче вĕрентӳ системине тăшманĕсем сивлетчĕç. Çав вăхăтрах ыр сунмансем асăрханатчĕç те — Петербургра ăна хӳтĕлекенсем çителĕклехчĕ. Николай Иванович вилсен вара унăн системине тапăнакансен чĕлхи уçăлчĕ. Çак улшăнусене эпĕ те туйрăм, чăваш шкулĕнче те самаях сисĕнчĕç вĕсем.

1910 çулхи çĕртме уйăхĕнче Хусан университечĕн профессорĕ Залесский поляк «Хусан телеграфĕ» хаçатра «Ильминский системи пирки» статьясем пичетлерĕ. Нумай çынна тарăхтарчĕç вĕсем. Николай Иванович таса ятне хӳтĕлесе, унăн системине ырласа Хусанта пысăк демонстраци иртрĕ.

Залесский статйисем пичетленнĕ тапхăрта Хусанта миссионерсен съезчĕ пыратчĕ. Съезд вĕçленсен тепĕр виçĕ кунтан Николай Ильминские хисеплекен Никанор архиепископ ертсе пынипе инородецсене çутта кăларакан вилтăприйĕ патне çынсем икĕ ушкăнпа хĕрес йăтса тухнă.

Ильминские асăнса инородец учительсен семинарийĕнче те кĕлтунă, вĕсем те хĕрес йăтса утнă. Хĕрес йăтса пыракан виçĕ ушкăн Николай Иванович вилтăпри çинче тĕл пулнă. Пуçтарăннисем мăнаçлă панихида ирттернĕ. Никанор архиепископ чунтан тухакан сăмах каланă, юлашкинчен инородецсене çутта кăлармалли системăна нихăçан та манмастпăр тесе тупа тунă.

Эпĕ çав съездра та, панихидăра та пулаймарăм. Мана ун çинчен Хусанти ĕç-пуça хутшăннă çынсем каласа пачĕç.

## ИРĔКЛĔХ ТАТА ВОСПИТАНИ

Ачасемпе çамрăксене пусмăрласах, вĕсен çулне шута илмесĕрех аталантарнине хирĕçчĕ Ильминский. Унăн пурнăçĕнчи пĕр ĕç-пуç çинчен каласа парам.

Сергей Александрович Рачинскипе, паллă педагог тата общество деятелĕпе, куçа-куçăн паллашманччĕ Николай Иванович. Вĕсене Рачинскипе туслă Степан Васильевич Смоленский çыру урлă пĕлĕшлентернĕччĕ. Ильминский мана тăтăшах хăй вăхăтĕнчи паллă çынсем — К.П. Победоносцев тата ыттисем — янă çырусене вулаттаратчĕ, хăй мĕнле хуравсем çырса янине те каласа паратчĕ. Пĕррехинче С.А. Рачинский ăна эрех ĕçекенсемпе кĕрешекен общество уставне ярса панă, Хусанти учительсен семинарийĕнче вĕренекенсем эрех-сăрапа айкашма ан тытăнччăр тесе унта çакнашкал общество йĕркелеме сĕннĕ. Анчах Николай Ивановичăн çын сăмахне тӳрех йышăнас йăла çукчĕ, этем ирĕкне хĕснине, ăна мĕнпе те пулин чарнине те юратмастчĕ вăл. Сергей Александрович сĕнĕвĕ килĕшмен ăна, çавăнпа семинарире çак çĕнĕлĕхе пурнăça кĕртмен вăл.

Эпĕ С.А. Рачинские палламан, унпа калаçса курман. Халăха çутта кăларас ĕç министрĕ И.Д. Делянов граф 1884 çулта мана Петербурга пыма хушсан Ильминский мана Рачинскипе паллашма çыру пачĕ, каялла килнĕ чух ун патне кĕрсе тухма сĕнчĕ. Лешĕн имений Смоленск кĕпĕрнинче вырнаçнăччĕ, эпĕ ун патне каймарăм.

## ТӖН АКАДЕМИЙӖ

Хайне пулӑшнӑ ҫынсене Ильминский яланах ырӑпа асӑнатчӗ. Хусанти тӗн академийӗн ректорне Григорие мӗн виличченех сума суса аса илетчӗ. Ҫав Григорий каярахпа Петербург митрополичӗ пулса тӑнӑччӗ. Маларах, вӑл Хусан архиерейӗ чухне, соборта кӗлӗ вуланӑ вӑхӑтра ӑна пӗр семинарист ҫапса та янӑччӗ, ҫынсем нумай калаҫрӗҫ ҫакӑн пирки. Григорий Хусанти тӗн академине тата унта вӗренекенсене чӗререн юратни ҫинчен Н.И. Ильминский нумай каласа паратчӗ. Николай Иванович академире тӑватӑ ҫул пулнӑ, Григорий ректора аван пӗлсе ҫитнӗ.

Вӗрентекенӗм каланӑ тӑрӑх, тӗн академийӗн ректорӗ тӗлӗнмелле администратор, чаплӑ та тимлӗ педагог-воспитатель пулнӑ, студентсен ҫитӗнӗвӗсемшӗн чунтан савӑннӑ, вӗсемпе мухтаннӑ. Ҫав вӑхӑтрах Григорий вӗренекенсене ҫирӗп тытнӑ, кирлӗ чух кӑралӑхне те кӑтартнӑ, пуҫлӑх авторитетне ҫӳллӗ шайра тытса пынӑ.

Акӑ пӗр тӗслӗх. А.А. Бобровников монгол чӗлхин грамматикишӗн академи премине тивӗҫсен унӑн юлташӗсем ҫакна паллӑ тума пуҫтарӑннӑ. Ыттисемпе пӗрле савӑннине палӑртма пухӑва самантлӑха Григорий ректор та пырса кайнӑ.

Вӗренекенсем Тӗн академийӗн программине кӗмен ӑслӑлӑхсемпе интересленнине мухтанӑ, вӗсене тӗплӗн вӗренме хистенӗ. Ҫакнашкал студентсене пулӑшсах тӑнӑ, вӗсем валли наука специалисчӗсене ятарласа чӗннӗ. Гремячинский студент естествӑллӑ наукӑсемпе — богослови курсӗнче вӗрентмен ӑслайсемпе — кӑсӑкланнине

каласа панăччĕ Николай Иванович. Григорий ăна пĕр вăхăтрах Тĕн академийĕнче те, Хусан университетĕнче те вĕренме ирĕк панă. Гремячинский университетран магистр званине хӳтĕлесе вĕренсе тухнă, кайран чаплă та паллă тухтăр пулса тăнă, медицинăра çĕнĕ уçăмсем те тунă, анчах, шел, ытла ир вилнĕ.

Григорий ректорăн ырă кăмăлне пула Тĕн академийĕнче богослови наукисемсĕр пуçне араб, тутар, сири тата ытти чĕлхесене вĕреннине калатчĕ Ильминский. Пĕрре Григорий çамрăк студент инородецсен чĕлхисемпе кăсăкланнине асăрханă, ун валли ятарласа Хусан университечĕн профессорне А.К. Казем-бека тата ыттисене те чĕннĕ. Ильминский пекех богослови факультетĕнче вĕренекен, монгол, калмăк чĕлхисемпе тата буддизмпа интересленекен А.А. Бобровников валли университетран О.М. Ковалевский профессора чĕннĕ.

Педагогика ĕçне-хĕлне воспитани тĕллевĕсемпе пĕрлештерме ăста Григорий вĕренекенсемшĕн ашшĕ вырăннех пулнине питĕ хаклатчĕ Н.И. Ильминский, лешĕ çамрăксене çирĕп алăра тытса тăма пултарнине те питĕ ырлатчĕ. Николай Ивановича лайăх пĕлсе çитсен унра эпĕ Григорипе пĕрпеклĕх нумайăшне куртăм. Епископ вилсен куççуль тăксах хурланнăччĕ вăл.

## ЕКАТЕРИНА СТЕПАНОВНА ИЛЬМИНСКАЯ

Ильминскисен килĕнче никам çинчен те нихăçан та начар калаçмалла мар текен йăла пурччĕ, упăшки те, арăмĕ те çак йĕркене пăхăнатчĕç. Кашни çынрах лайăххи, ырри тупма тăрăшатчĕç вĕ-

сем, майлӑ самантра вара ҫав лайӑх енсене палӑртатчӗҫ. Екатерина Степановнӑн кӑмӑлӗ мӑшӑрӗн характерне тӗлӗнмелле аса илтеретчӗ — Николай Ивановичпа туслӑн та телейлӗн пурӑнни витӗм кӳнӗ-ши ӑна?

Мӑшӑрӗ вилсен Екатерина Степановна укҫатенкӗ енчен хӗсӗке юлчӗ, ҫулталӑкне пин тенкӗ пенси илетчӗ тата пин тенкӗ хушма рента (тупӑш) пурччӗ унӑн. Кайран ҫак тупӑш та ҫухалчӗ. Унччен вӑл юрне-варне саплаштаркаласа пынӑ пулсан, халӗ вара пурнӑҫ та, апат-ҫимӗҫ те хакланнӑран нушана лекрӗ. Н.И. Ильминские астуса тата хисеплесе унӑн хӑш-пӗр юлташӗсем сакӑр вунӑ ҫула ҫитнӗ карчӑка пособисем паркалаҫҫӗха. Хушӑран ӑна хам та Алексей тата Николай ывӑлӑмсемпе пулӑшкалатӑп*. Хусанта пурӑнакан Е.С. Ильминская ватлӑхне пӑхмасӑр уҫӑлмалла икӗ-виҫӗ ҫухрӑм утса тухать.

## ФЕОФАН ЗАТВОРНИК

Паллӑ Феофан Затворник епископпа та туслӑччӗ Н.И. Ильминский. Пирвайхи хут вӗсем Палестинӑра курнӑҫнӑ. 1850-мӗш ҫулсенче Николай Иванович унта кайнӑ, Феофан вара Иерусалимра православи миссийӗн ертӳҫи пулнӑ. Ҫавӑн чухне туслашнӑ та вӗсем. Палестина друзӗсене Рим католицизмӗпе кӗрешме пулӑшнӑ ҫак манах. Православи валли Иерусалимра таса япаласем те туянма хӑтланнӑ вӑл — май килмен. Нико-

* И.Я. Яковлевпа унӑн Алексей тата Николай ывӑлӗсем Екатерина Степановнӑна ӗмӗрӗ вӗҫленичченех укҫа-тенкӗпе пулӑшса тӑнӑ. *(Куҫаруҫӑ.)*

лай Иванович Феофан ҫинчен нумай каласа паратчӗ.

Феофан епископ ҫинчен Ильминскисӗр пуҫне ӑна лайӑх пӗлнӗ Алексей Прокофьевич Покровский тата Николай Петрович Остроумов та каласа паратчӗҫ. Эпӗ вӗсемпе туслӑччӗ. Н.П. Остроумова Николай Иванович Хусанти тӗн академийӗнче вӗрентнӗ. Унӑн приват-доцент чинӗ пурччӗ. Вӑл кайран Семиречинск облаҫӗнчи Ташкент вӗрентӳ округӗнчи халӑх училищисен инспекторӗ пулнӑччӗ. Ташкентри учительсен семинарийӗн директорӗнче ӗҫлесе вилчӗ. 1870-мӗш ҫулсенче Н.П. Остроумов преосвященнӑй Феофанпа тӗл пулма ҫӳренӗ. Пӗррехинче Николай Петрович Ильминские Феофан патне кайса килнине каласа панӑччӗ (ун чухне лешӗ затворника тухманха). Тепрехинче ун патӗнче лешӗ ҫурма затворнике тухсан пулнӑ. Феофан мӑнастирте пурӑннӑ, ҫулталӑк-ра икӗ хутчен ҫеҫ пысӑк уявсенче халӑх умне курӑннӑ.

Эпӗ Феофана палламан. Вӑл — тӗн ыйтӑвӗсемпе ҫыракан чаплӑ писатель, Турӑ вӗрентӗвӗ пирки ҫырнӑ кӗнекесен авторӗ. Апостолсен посланийӗсене, Псалтирсене тата ытти хайлавсене ӑнлантарса панисем питӗ лайӑхчӗ унӑн. Ҫав ӑнлантарусемпе хамӑн куҫарусенче усӑ кураттӑм. Феофан святитель ӑнлантарӑвӗсенче автор пурри сисӗнместчӗ — ҫавӑнпа меллӗччӗ вӗсем.

А.П. Покровские вара, хӑй каланӑ тӑрӑх, Феофан чӗнсе илнӗ. Алексей Прокофьевич Петербургри академирен вӗренсе тухнӑ. Феофан вилсен ун ҫинчен Харьковри тӗн органӗнче статья пичетленӗ. Чӑн-чӑн вырӑс патриочӗ пулнӑ май А.П. Покров-

ский пĕр халăх тепĕр халăха ан хĕсĕрлетĕр тесе кар тăратчĕ. Эпĕ чăвашсене çутта кăларас енĕпе ĕçленине кура çакăн пирки тăтăшах сăмах пуçаратчĕ вăл. Хăвăн планусене тĕплĕн йĕркелерĕн-и тесе шав тĕпчетчĕ. Йышĕпе пысăк мар халăх та хăйĕн шăпипех, ламран лама пыракан пурнăçĕпех ăнтăлтăр, хăйне евĕрлĕхне упратăр тесе шутлатчĕ. Эпĕ ăна чăвашсен ырă енĕсем çинчен нумай каласа кăтартнă. Чăвашсем вара вырăссемпе хутшăнса кайсан чăвашлăхне çухатса пачах пĕтсе ларма пултараççĕ текен шухăш питĕ хăрататчĕ ăна. Чăвашсен Раççейпе пĕрлешмелли çеç юлнă, вĕсен урăх çул тек çук тесе хуравлаттăм эпĕ. А.П. Покровскин литература таланчĕ пурччĕ. Вăл ĕмĕрĕ тăршшĕпех Чĕмпĕрте пурăнчĕ, тĕн семинарийĕнче тата кадет корпусĕнче историпе географи вĕрентрĕ.

## МАНА ПУЛĂШАКАНСЕМ

Пĕр хушă мана Николай Иванович пурнăçĕ питĕ интереслентеретчĕ. Вăл вилсен Пензăна та кайса килнĕччĕ, аслă аппăшĕнчен — хусах майра Варварăран — пиччĕшĕ пирки ыйтса пĕлнĕччĕ. Анчах вăл нимех те каласа параймарĕ. Варвара хыççăнхи аппăшне Вера Ивановна тесе чĕнетчĕç. Кăмăлĕпе пиччĕшне хывнăччĕ — лăпкă, ырă, сăмах ваклама юратмастчĕ. Асли, Варвара Ивановна, питĕ чăрсăр та шавлăччĕ.

Николай Иванович халалĕнче укçа-тенкĕ пирки пĕр сăмах та çырман. Мул таврашĕ пулман унăн, укçа-тенки хăйне пытарма çеç çитнĕччĕ. Манăн вĕрентекенĕме чаплă та паллă çынсемпе туслашма телей пӳрнĕччĕ, вĕсем ăна пулăшатчĕç,

ĕçĕ-хĕлĕпе кăсăклансах тăратчĕç. Хусанта çакнашкал çынсен ретне Антоний архиепископпа (Амфитеатров хушаматлăччĕ вăл) Хусан вĕрентӳ округĕн попечительне П.Д. Шестакова кĕртмелле.

Ильминские пула эпĕ те вĕсемпе юлташлăччĕ. Çапах çамрăкранпах пысăк пуçлăхсенчен аяккарах пулма тăрăшаттăм, мĕншĕн тесен вĕсемпе çывăхлансан пурнăçра та, ĕçре те йывăрлăхсем тупăнма тытăнаççĕ. Çавăнпа эпĕ П.Д. Шестаков умĕнче нихăçан та чуна уçман. Вăл вара мана хисеплетчĕ, Чĕмпĕре пырсан ман пата кĕрсе тухатчĕ. Н.И. Ильминскин кăмăлне хăпартас тесе манăн туйра хăйматлăх атте те пулчĕ. Кайран, Шестаков отставкăна тухса Хусанта пурăннă чух, эпĕ ун патне кĕркелесе тухаттăм, хамăр калаçусенче инородецсене çутта кăларас ĕçпе çыхăннă шухăшсене пытарса тăмастăмччĕ ĕнтĕ.

Петр Дмитриевич — опытлă администратор-педагог, тăнлă-пуçлă, мĕн шутланине хăвăрт пурнăçа кĕртекен, анлă тавракурăмлă, калаçма пултаракан, чĕлхесем пĕлекен çынччĕ. «Эдип патша» трагедие грек чĕлхинчен вырăсла куçараканĕ шăпах вăл пулнă.

Высокопреосвященнăй Антоние вара чăннипех те чаплă архиерей-аскет тесе каламалла. Вăл христиан идеалĕсене пурнăçа кĕртме тăрăшатчĕ, килĕнче хăна-вĕрле пухса ĕçкĕ-çикĕ тумастчĕ. Н.И. Ильминский ăна çав тери пысăка хурса хаклатчĕ. Лешĕ те Николай Ивановича чунран хисеплетчĕ.

Иккĕшĕ те пире пулăшса пыни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулчĕ, инородецсене çутта кăларас ыйтура вĕсем пирĕн майлăччĕ.

# Куçару ĕçĕ





## КУҪАРУ ЁҪНЕ ПУҪӐННИ

Чӑвашсене христианлӑхпа культура тӗлӗшӗнчен ҫутта кӑларма кӗнекесем куҫармалла текен шухӑш Чӗмпӗр гимназийӗнче вӗреннӗ чухнех ҫуралнӑччӗ. Чӑвашла куҫарма хӑтланса та пӑхрӑм, анчах ним путли те тухмарӗ. Нимӗҫлерен вырӑсла, вырӑсларан латинла куҫарма самай ҫӑмӑлраххӗ. Чӑвашла куҫарасси мӗн тери йывӑр ӗҫ иккенне ӑнланса илтӗм вара. Чӑваш халӑхӗ культура тӗлӗшӗнчен аялта тӑратчӗ, нумай ӑнлав, пулӑм, япала ҫинчен калама чӗлхере сӑмахсем ҫитместчӗҫ.

Н.И. Ильминскипе паллашсан вара куҫарусемпе тӗплӗн ӗҫлеме тытӑнтӑм. Вӑл мана ҫак ӗҫре мӗн пӗлмеллине ӑнлантарма пӗр танлаштару илсе кӑтартнӑччӗ. Аллине сехет илчӗ те: «Сехет тӗллевӗ мӗнре? Вӑхӑт тапхӑрӗсене тӗрӗс кӑтартасси. Ҫынсем шыв, хӗвел, хӑйӑр, кӗсье, алӑ сехечӗсем шухӑшласа кӑларнӑ. Вӗсен тӗллевӗ пурин те пӗрре — ҫынсене вӑхӑт кӑтартасси. Сехетсем йышӗнче питӗ тӗрӗс ҫӳрекеннисем те, кая юлаканнисем те, мала каяканнисем те пур. Вӗсене суйлама пулать. Ҫапах та вӑхӑта тӗп-тӗрӗс кӑтартни ҫукпа пӗрех, пӗр патшалӑхрах тӗрлӗ ҫӗрте тӗрлӗ вӑл. Куҫарусем пирки те ҫакнах калама пулать. Шухӑш этем пуҫӗнче ҫуралнӑ. Ӑна

тĕрлĕ чĕлхепе палăртма пулать, анчах та çак шухăша çынсем ăнланччăр, унăн евĕрлĕхĕсем, илемлĕхĕ палăрччăр. Кашни чĕлхе урăх халăхсен пур ăнлавĕсене пĕлтерет. Тутарсем, чăвашсем, вырăссем юнашар, пĕр евĕрлĕ этнографи, çутçанталăк, патшалăх условийĕсенче нумай çул пурăннăран нумай япалана, пулăма пĕр пек ăнланаççĕ. Çак халăхсене пĕр-пĕрне ăнланма та çăмăл. Шухăша мĕнле палăртасси вара кашни халăхăн хăйне евĕрлĕ. Çавăнпа текста мĕнле пулнă, çавăн пек куçарма юрамасть. Шухăш тĕшшине тупмалла, ăна палăртма вара чĕлхе евĕрлĕхĕсене, унăн тытăмне шута илмелле», — терĕ.

Николай Ивановичăн канашĕсем çаксемччĕ: хăвăра ытла ан шанăр, ан ӳркенĕр, лайăх калаçакан пĕр-пĕр старикрен вĕренме ан вăтанăр, сăмаха туйăр, вăл мĕнле илтĕннине, янăранине тăнлăр; хăвăр мĕн куçарнине ăнланăр; Турă кашни халăха хуть те мĕнле шухăша та ăнланма мел панă.

## КУÇАРУ ĔÇĔН ХĂЙНЕ ЕВĔРЛĔХĔ

Н.И. Ильминский сĕнĕвĕсене, шухăшĕсене, кăтартăвĕсене шута илсе Хусан университетĕнче пĕрремĕш курсра вĕреннĕ чухнех куçару ĕçне тепĕр хут кӳлĕнтĕм. Алексей Рекеевпа Игнатий Иванов пулăшнипе тутарларан чăвашла куçарса пăхрăм. Ĕç кал-кал кайрĕ. Кайран вара Ильминский программипе килĕшӳллĕн вырăсларан чăвашла куçарма тытăнтăм. Çăмăл пулмарĕ ку.

1871 çулта вырăс букварьне алтайла куçарса пăхрăм. Çав çулах Матфей çырнă Евангелие те чăвашла куçарма пуçларăм. Ĕçленĕ май тăлмачă ĕçне хăвăрт хăнăхса пытăм. Алексей Рекеев, Иг-

натий Иванов тата ытти чăваш ачисем мана пулăшса тăчĕç.

Каникула кайсан Кăнна Кушкинче, Кивĕ Пăрăнтăкра, Чĕмпĕрте куçарусемпе ĕçлеттĕм. Кирлĕ чухне Алексей Рекеевпа Игнатий Иванова чĕнсе илеттĕм. Хушăран Ильминскирен канаш ыйтаттăм. Евангели куçарнă чух унăн вырăсла, грекла, латинла, нимĕçле, французла пичетленнĕ кĕнекисене танлаштараттăм. Хăш чухне Ильминский куçарнă тутарла текстпа та усă кураттăм.

Латин чĕлхине эпĕ гимназире чухнех лайăх пĕлеттĕм. Грек чĕлхи ман вăхăтра гимнази программинче çукчĕ, ăна университетра вĕрентĕм. Нимĕçле та аванах чухлаттăм. Французла вара пит пĕлсех кайман. Текстсене танлаштарнă чух çавăнпа ĕнтĕ ăста чĕлхеçĕсенчен пулăшу ыйтаттăм. Гимназире, университетра вĕреннĕ чухне чăвашла пит калаçманран эпĕ ахаль халăх чĕлхине кăштах маннăччĕ, çавăнпа ăна çĕнĕрен аса илме тиврĕ, унсăрăн куçарусемпе ĕçлеме май çукчĕ — хутла пит пĕлсех кайман çынсем ăнланмастчĕç.

Куçару ĕçĕнче тепĕр пысăк йывăрлăх та сиксе тухрĕ. Ытти халăхсен, культурăсен витĕмне пула тĕрлĕ вырăнта чăвашсем тĕрлĕрен калаçатчĕç. Пурне те ăнланмалла авалхи чĕлхе тасалăхне упракан калаçăва суйласа илсе ăна тĕпе хума тиврĕ. Псалтирь куçарнă чухне унăн текстне темиçе те улăштартăм. Мана çак ĕçре Федор Даниловпа Константин Иванов пулăшрĕç. Псалтирĕн юлашки редакцине Константин Ивановпа хатĕрлерĕмĕр.

Тĕн кĕнекисене куçарма чăвашран тухнă Петр Васильевич Васильев пачăшкă, мана хурăнташ лекекен Иван Степанов, Чĕмпĕр чăваш шкулĕн па-

чăшкисем Иван Дормидонтовпа Василий Никифоров тата ытти чăваш ҫыннисем пулăшрĕҫ. Кусару ĕҫĕпе эпĕ ĕмĕр тăршшĕпех ĕҫлерĕм.

Мана юратман ҫынсем тĕн куҫарĕвĕсене преступлени шайĕнчех йышăнатчĕҫ. В.С. Богоявленский чăн статский советник тĕрĕслевне пула халăха ҫутта кăларас ĕҫ министрĕн П.Н. Игнатьевăн графа ҫапла ăнлантарса ҫырма тивнĕччĕ: «Чăваш шкулĕнче кĕнекесене чăвашла куҫарса пичетлес ыйтупа ĕҫлекен нимĕнле комисси те ҫук. Хам вара Православи миссионерлăхĕн обществинчи куҫару комиссийĕнче 1878 ҫултанпа тăратăп. Священнăй тата тĕн кĕнекисене куҫармаллине мана 1875 ҫулхи ҫурла уйăхĕн 27-мĕшĕнче Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторне лартнă чухнех палăртнăччĕ. Чăваш шкулĕпе паллашнă-паллашманах Богоявленский чăн статски советникăн куҫарусем вĕренӳ программине пурнăҫласа пыма чăрмантарни пирки калани вырăнсăр».

«Чăваш букварĕн» пĕрремĕш кăларăмĕсене хамăн укҫапа кăлартăм. Кĕнекесем сутăнчĕҫ, тăкакĕсем саплашăнчĕҫ. Ытти кăларăмсене пичетлеме вара Халăха ҫутта кăларас ĕҫ министерстви укҫа-тенкĕ уйăрса пачĕ. Ун чухне эпĕ Хусан университетĕнче вĕренеттĕм, пичетленĕ кĕнекесемшĕн вĕрентӳ округĕн попечителĕ типографие укҫа тӳлетчĕ.

1876 ҫулта чăвашла кĕнекесем кăларма Халăха ҫутта кăларас ĕҫ министерстви пин тенкĕ уйăрчĕ. 1878 ҫултан тытăнса чăваш кĕнекисене кăларма Раҫҫейри миссионерлăх обществи укҫа паратчĕ. Тĕн кĕнекисене тĕрĕслеме Святейши Синод Хусанти Гурий святитель тăванлăхне хуш-

нăччĕ. 1876 çулта тăванлăхра Куçару комиссине йĕркеленĕччĕ, типографие тӳлемелли укçа-тенкĕ тăванлăх канашне килетчĕ.

Кăларăмсене ура хуракансем те тупăнчĕç. 1896 çулта Куçару комиссийĕн делопроизводителĕ Н.В. Никольский халăхра аван сутăнакан кĕнекесене манран ыйтмасăрах пичетлеме йышăнчĕ. Кăларăмсене пичетлесе мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ тăкаклани çинчен тăванлăха нимĕнле отчет та паман вăл. Куçару комиссийĕн çулталăкри отчетне сӳтсе явма Гурий святитель тăванлăхĕн канашĕн ларăвне пырсан эпĕ: «Малашне те комиссирех юлатăп пулсан та, манăн кăларăмсене хамран ыйтмасăр ан пичетлĕр, вĕсемшĕн паракан пособисене йышăнмастăп», — тесе пĕлтертĕм.

Çакăн хыççăн Куçару комиссийĕ манăн ĕçсене тимлĕн сăнаса тăчĕ, куçарусене цензура хыççăн хамах пичетлеме тытăнтăм.

## ЙЫВĂРЛĂХСЕМ

Куçару — йывăр та яваплă ĕç. Чăвашла куçарнă чух уйрăмах тертлĕ вăл: нумай чух сăмахсем çитмеççĕ, пĕр-пĕр ăнлава палăртма та сăмах çаврăнăшĕсем часах тупăнмаççĕ. Асăрханullă та пулмалла, кăнттам куçарсан чăвашсем православие йышăнмасса та пултараççĕ. Кĕнекесенче шухăш хире-хирĕçлĕхĕсем те тупăнкалатчĕç. Н.И. Ильминский те, ытти çынсем те тĕн кĕнекисенче тĕл пулакан йăнăшсене кăтартнăччĕ мана. Çав çитменлĕхсене Святейши Синод кĕнекесене çĕнĕрен кăларнă май тӳрлетсе пыратчĕ.

Тĕрĕс мар куçарсан мĕнле пăтăрмахсем пуçланса кайма пултарассине раскольниксен тĕслĕхĕ

лайăх кăтартса парать: сăмахсемпе сăмах çаврăнăшĕсене тĕрлĕрен куçарнăран сиксе тухнă та ĕнтĕ çак тавлашу. Православи чиркĕвĕ Никон патриарх вăхăтĕнчи текстсемпе усă курать, вĕсене вара хăш чух тĕрĕсех мар куçарнă. Çакна раскольниксем питĕ аван пĕлеççĕ.

Тĕн кĕнекисенчи йăнăшсем пирки Н.И. Ильминский тĕпчев ĕçĕ те çырнăччĕ. Хамăр куçарусенче эпир православи чиркĕвĕн тексчĕсемпех усă кураттăмăр, асăрханă кăлтăксене тĕкĕнместĕмĕр, çĕнĕ раскол ан пултăр тесе тăрăшаттăмăр. Çапах та ăçта май пур — çавăнта эпир Ильминскипе иксĕмĕр кĕнекесенчи йăнăшсене куçарусенче тирпейлĕн тӳрлететтĕмĕр.

Н.И. Ильминский Хусанти тĕн академийĕн профессорне П.А. Юнгерова питĕ хисеплетчĕ. Вăл сăпайлă, таса шухăш-кăмăллă çынччĕ, хăйĕн предметне, авалхи чĕлхесене лайăх пĕлетчĕ. Çемье пурнăçĕ ăнманччĕ лешĕн — арăмĕ пăрахса кайнăччĕ. Çак профессор чăвашла тата тутарла нимĕн те ăнланмастчĕ. Николай Алексеевич Бобровников вара Ильминские Павел Александрович чăвашла тата тутарла чиперех пĕлет тесе ĕнентернĕ. Эпĕ тутарларан чăвашла Псалтирь куçарсан Н.А. Бобровников ăна Юнгеров профессора пăхса тухма пачĕ. Манăн ирĕксĕрех килĕшме тиврĕ. П.А. Юнгеров куçарура нумай асăрхаттару кăтартрĕ, анчах вĕсем пурте тĕрĕс марччĕ. Псалтире кăларнă чухне вĕсене пачах шута илмерĕм.

## БИБЛИ ОБЩЕСТВИ

Куçару ĕçĕнче чăвашсене Англири Библи обществи пысăк пулăшу кӳчĕ. Тĕслĕхрен, унăн укçи-

тенкипе «Çĕнĕ Халал»* чăвашла пичетлерĕмĕр. Ăна Чĕмпĕр кĕпĕрнин типографийĕнче кăлартăмăр. Укçине общество Петербургра пуранакан Вильям Кин пастор урлă пачĕ. Тĕн куçарĕвĕсен ыйтăвĕсемпе вăл ман пата Чĕмпĕре те килсе кайнăччĕ. Вырăсла йĕркеллех, çын ăнланмалла калаçатчĕ. Библи обществи чăвашла куçарнă «Çĕнĕ Халалпа» Псалтире çирĕмшер пин экземпляр кăларчĕ. Кĕнекесене общество хăй салататчĕ. Паллакан çынсене тӳлевсĕр парнелеме мана валли те уйăрнăччĕ. Библи обществин пĕр çирĕп йĕрке пурччĕ — тĕн кĕнекисене кăларнă чухне нимĕнле умсăмах та, ăнлантарусем те кĕртме юрамастчĕ.

Патриотизм туйăмне пула Н.И. Ильминский Матфей çырнă Евангелин пĕрремĕш кăларăмне акăлчансен укçи-тенкипе кăларасшăн пулмарĕ. Çак Евангелие хамăр укçапа пичетлерĕмĕр. Николай Иванович вилсен К.П. Победоносцевпа В.К. Саблер акăлчансен пулăшăвĕнче нимĕн начарри те курмарĕç, инородецсем валли тĕн кĕнекисене пичетлес ĕçре Англири Библи обществин укçи-тенкипе усă курма тытăнчĕç.

## ПĂТĂРМАХСЕМ

Чăваш шкулне тĕрĕслеме Н.И. Ильминский Чĕмпĕре кашни çулах килетчĕ, кунта нумайлăхах чарăнатчĕ. Вăл пур ĕçе те ăнланма тăрăшатчĕ, сĕнӳсем паратчĕ, манăн çĕнĕ проектсене пăхса тухатчĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулне юрататчĕ вăл.

Ильминскипе Хусанта паллашсанах вăл мана хăй хӳттине илчĕ, пулăшса пычĕ. Куçарусемпе

* «Çĕнĕ Халал» — *(вырăсла)* «Новый Завет».



ĕçleme тытăнсан манăн ĕçсене тапăнма пуçларĕç, тиркенисем яланах тĕрĕс марччĕ, чылай чухне — юри хăтланатчĕç. Инородецсене çутта кăларас ыйтупа çунса тăракан Николай Иванович куçару ĕçне чĕри патнех илетчĕ. «Куçару комиссийĕ чăваш изданийĕсем çинчен çырса пынисем» ятлă кĕнеке (Хусан, 1890) çакна çирĕплетсе парать. Шупашкар уесĕнчи Кушкă салинчи В.Я. Смелов пачăшкă манăн куçарусене тапăннăран Николай Иванович çырнă заметкăсене пичетленĕ унта.

Халăха çутта кăларас, чăвашсене православи йышăнтарас ĕçре пире Н.И. Ильминскипе иксĕмĕре Тĕн ведомствинчи миссионерсем те, пачăшкăсем те чăрмантаратчĕç. Мана, тĕслĕхрен, богослови вĕренмен, эпĕ тĕн çынни мар тесе тиркетчĕç. Паллах, пирĕн ĕç-хĕле, манăн куçарусене ырлакансем те чылайччĕ.

## КĂННА КУШКИ КАЛАÇĂВĔ

Çĕнĕ шкулсене таçти упа шăтăкĕнчи ялсенче те уçмалла тетчĕ Н.И. Ильминский. Манăн тăван ял шăпах çавăн пек вырăнта тесе калаттăм ăна. Эпĕ ача чухне Кăнна Кушкинче çĕре яхăн килччĕ, халĕ икĕ хут нумайрах. Ял Сĕвене юхса кĕрекен Кăнна çырми хĕрринче вырнаçнă. Тăвата çухрăм анатарах шыв арманĕ ларатчĕ, çырмана пĕвеленĕччĕ. Çавăнпа шыв тарăнччĕ, ыраш пăтрисем, çăрттансем пурччĕ.

Халĕ Кăнна Кушкинче пĕве те, шыв арманĕ те çук. Ял çумĕнчи вăрмана та каснă, ача чухне унта кайма мĕн тери юрататтăм. Эпĕ çуралнă кил те тĕнчерен çухалнă. Ӳссе çитсен те мана тăван ял чĕнетчĕ, тăтăшах килеттĕм кунта. Каялла кай-

нă чухне вара куç тулли куççульччĕ. Университетра вĕреннĕ чухне тин çак туйăм мăкалчĕ.

Пирĕн ял çыннисемпе калаçса курнă Н.И. Ильминские Кăнна Кушки пуплевĕ килĕшетчĕ. Тĕрлĕ вырăнта тĕрлĕрен калаçакан чăвашсене çутта кăларма вырăнти пĕр калаçăва йышăнмалла тесе шутлатчĕ вăл. Пирĕн ял çыннисем калаçакан пуплев шăпах çакна юрăхлă тесе йышăнатчĕ. Эпĕ унпа килĕшрĕм, анатри чăвашсен калаçăвне вĕренӳре, куçарура тĕпе хутăм. Николай Иванович Ильминские тĕл пулман тăк эпĕ чиновник-педагог сукмакĕпе каяттăмччĕ, чăвашсемшĕн ним усси те тăваймастăмччĕ пуль.

## ВĔЧĔХ ÇЫНСЕМ

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн 40 çулхи юбилейĕ чухне вĕчĕх те кĕвĕç чунлă çынсем манăн ята хуратас тĕллевпе çăхав пичетлесе кăларчĕç. Николай Иванович Ильминский Чăваш шкулне укçа-тенкĕпе пулăшса тăнине эпĕ пĕр пĕлтерӳре кăтартман, тепĕр пĕлтерӳре çак пулăшăва палăртнă тесе мана вăрăпа тытма хăтланса пăхрĕç.

Ĕçĕ вара акă мĕнре. Хусанта инородецсем валли кĕнекесем куçаракан комисси ĕçлетчĕ. Унăн председателĕ Н.И. Ильминскийччĕ. Комисси пайташĕсем — вăл шутра эпĕ те, Николай Иванович та — çулталăкне виç çĕр тенкĕ илсе тăратчĕç (унччен çакнашкал комисси Гурий святитель тăванлăхĕнче пулнă, анчах тăлмачсем унта тӳлевсĕр ĕçленĕ). Эпĕ Хусана пырсан вĕрентекенĕм комиссире ĕçленĕшĕн илнĕ виç çĕр тенкине мана паратчĕ, укçине ăçта усă курмаллине каламастчĕ, вĕсене хама кирлĕ пек тăкаклама пултараттăмччĕ.

Куçару комиссийĕнче ĕçленĕшĕн илсе тăнă шалăва вĕрентекенĕм темиçе çул мана парса тăчĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи хĕрачасен уйрăмне аталантарма янăччĕ эпĕ çав укçана.

## ИННОКЕНТИЙ МИТРОПОЛИТ

1876 çулта эпĕ ориенталистсен съездне кайрăм. Н.И. Ильминский мана Мускаври тата Петербургри паллă çынсем патне кĕрсе тухма сĕнекен хут çырса пачĕ. Николай Иванович çырăвĕпе Мускаври Хусан чиркĕвĕн настоятелĕ Алексей Осипович Ключарев патне кайрăм. Ильминский хăй çырăвĕнче мана питĕ ырланă пулас, настоятель мана ăшшăн йышăнчĕ. Малтан эпир унпа Чудов мăнастирне престол уявне кайрăмăр. Кайран Мускав митрополичĕ, хăй вăхăтĕнче Çĕпĕрте ĕçлесе чап-мухтав илнĕ Иннокентий, патне çул тытрăмăр.

Йышăну пӳлĕмĕнче нумай та лармарăмăр — пирĕн пата Мускав митрополичĕ тухрĕ. Унăн куçĕ курмастчĕ, аллисене тăсса асăрханса утатчĕ. Вăл кĕреçе сухаллă, çăра çӳçлĕ пысăк та мăнаçлă старикчĕ. Иннокентий пире пил пачĕ, ларма хушрĕ, сăмах пуçарчĕ. Калаçнă май манран куçару ĕçĕ мĕнле пыни çинчен ыйтрĕ. Ку вăхăт тĕлне Евангели чăвашла пичетленнĕччĕ ĕнтĕ. Куçару ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа панă чухне вăл ырларĕ мана — лайăх та кирлĕ ĕç тăватăн терĕ. Аудиенци вĕçленсен митрополит пире каллех пиллерĕ те ăшшăн ăсатса ячĕ.

Иннокентий митрополит Н.И. Ильминские лайăх пĕлнĕ. Иркутскра архиепископ пулнă вăхăтра Петербурга кайнă чухне вăл çула май яланах Николай Иванович патне кĕрсе тухатчĕ.

# Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ



## ШКУЛ ПУРНĂÇĔН ТЫТĂМĔ

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн никĕсне эпĕ Н.И. Ильминскин тĕп шухăшĕсене хыврăм. Вĕсемпе Хусанти крешĕн тутар шкулĕнче усă куратчĕç. Николай Иванович шухăшĕпе, инородецсен шкулĕсенче хăнасене хапăл туни, çынна пулăшма хатĕрри, çывăх çынсене хӳтĕлени тĕп вырăнта тăмалла, шкулсен православи тĕнне тытса пымалла, вĕсен вырăнти халăхшăн пур енлĕн тĕслĕх пулса тăмалла.

Хусанти крешĕн тутар шкулĕ тĕне кĕнĕ тутар ачисен ашшĕ-амăшне лешсем хулана пырсан çĕр каçма яратчĕ. Н.И. Ильминский крешĕнсене çеç мар, мăсăльман тĕнне тытса пыракансене те пулăшатчĕ. Вырăс вĕрентӳ заведенийĕсене те инородецсене пур майсемпе пулăшма ыйтатчĕ. Вак халăхсене пулăшни вĕсен хушшинче православие вăйлатать тетчĕ.

Чĕмпĕрти чăваш шкулне йĕркелесен эпĕ ашшĕ-амăшĕ ачисем патне килсен вĕсене шкулта çĕр каçма ирĕк параттăм. Лашисене те, урапisene те шкула кĕртеттĕмĕр. Лашисем валли апатне хуçисен хăйсен илсе килмеллеччĕ. Хăнасене çăкăрпа, кваспа сăйлаттăмăр, енчен те столовăйĕнче вĕри апат юлсан — çавăнпа хăналаттăмăр. Кирлĕ чухне медицина пулăшăвĕ те параттăмăр. Çак пулăшу тӳлевсĕрччĕ. Чăнах та, пирĕн ырă кăмăллăха

кура хăш чухне иртĕнекенсем те тупăнатчĕç — сăлтавсăрах шкулта вăрахлăхах юлатчĕç.

Ашшĕ-амăшĕсĕр пуçне ман пата канаш е пулăшу ыйтма килнĕ чăвашсем те шкулта чарăнатчĕç. Ильминскирен тĕслĕх илсе эпĕ вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерме тăрăшаттăм. Çапах та Николай Иванович кăмăллăхĕн шайне пурпĕр çитейместĕм, манăн характер начартарахчĕ.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче чарăннисене ачисем вĕренекен классенче уроксем итлеме те ирĕк параттăмăр, вĕсене шкул чиркĕвне, мастерскойĕсене кăтартаттăмăр. Ачасен кулленхи пурнăçĕпе паллаштарнисĕр пуçне ашшĕ-амăшне усăллă лекцисем чăвашла вуласа параттăмăр. Калаçусенче тĕн тата политика темисене хускатмастăмăр.

## ЧĂВАШ ШКУЛĔН ОБЩЕЖИТИЙĔ

Эпĕ Хусанта пурăннă хушăра Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ, общежити майлăскер, темиçе хваттер те улăштарчĕ. 1870 çулхи кĕркунне, эпĕ университета вĕренме кĕрсен, вăл Мартынов урамĕнче — астăвасса Михайлов хушаматлă çын çуртĕнче — вырнаçнăччĕ. Икĕ пӳлĕмре пилĕк-ултă арçын ача пурăнатчĕç. Çĕнĕ çул тĕлне общежитие тепĕр виçĕ çын хушăнчĕ. А.В. Рекеева салтака илсен ăна çар хĕсметĕнчен хăтарас тĕллевпе Хусантан Чĕмпĕре кайнă чух эпĕ çула май тăван тăрăха та — Кушкăпа Пăрăнтăка — кĕрсе тухнăччĕ. Çавăн чухне çав ачасене Пăрăнтăк вулăсĕнчен илсе килтĕм. Хваттер хуçи хĕрарăмĕ хушма тӳлевпе арçын ачасене апат пĕçерсе, кĕпе-йĕм çуса паратчĕ. Пӳлĕмсене лешсем хăйсемех тирпейлетчĕç. Ачасем çак çуртра çуркуннеччен пурăнчĕç.

1871 çулхи çулла эпĕ Чĕмпĕрте те, Кушкăра та нумай пултăм. Общежитие сăнаса тăракан Иван Яковлевич Христофоров çак вăхăтра çемйипе Хусана кайнăччĕ. Чĕмпĕрте чухне общежитие эпĕ пăхса тăраттăм, фонетика саккунĕсене пăхăнса чăваш букварьне калăплассипе, Матфей çырнă Евангелине чăвашла куçарассипе тĕплĕн ĕçлеттĕм. Çуллахи каникула хуларах юлнă вĕренекенсем И.Я. Христофоровăн пушă хваттерне куçрĕç. Вăл Ильински чиркĕвĕ патĕнче, П.Е. Данилов çуртĕнче пурăнатчĕ. Арçын ачасен çĕнĕ ушкăнĕ те килчĕ. Пулас пачăшкă Климент Макаров та вĕсен йышĕнчеччĕ.

Кĕркунне, 1871 çулхи çурла уйăхĕнче, общежити П.Е. Даниловăн тепĕр çуртне — Кермен урамне, пасар патне, — куçрĕ. Шкул ачисем кунта икĕ вĕренӳ çулĕ пурăнчĕç. Унта хваттер уйрăмччĕ. Апат пĕçерекене те тара тытатчĕç. Ачасем икĕ хутра вырнаçнăччĕ. Кун йĕрки малтанхи пекехчĕ. Общежитире вун икĕ арçын ача пуçтарăннăччĕ, чăвашсем вырăссенчен нумайрахчĕ.

Вăл вăхăтра Чĕмпĕрте Мăнкун типпин пĕрремĕшпе иккĕмĕш эрнисенче пĕтĕмĕшле ярмаркка иртетчĕ. Ярмаркка чухне хваттерĕн аялти хутне аякран килнĕ купсасене яратчĕç, сутуçăсем пана укçа вĕренекенсене усрама каятчĕ, унăн ытларах пайĕпе хваттершĕн тӳлеттĕмĕр.

1873 çулта общежити Собор урамĕнчи Н.П. Поникаров купсан икĕ хутлă чул çуртне куçрĕ. Унта ĕçлеме ятарлă учителе — репетитора — илтĕмĕр. Вĕренекенсем çак çуртра пĕр вĕренӳ çулĕ хушши пурăнчĕç.

1874 çулхи кĕркунне вĕсем Кирпĕч урамĕнчи И.А. Горбуновăн çурри кирпĕч, çурри йывăç çурчĕн иккĕмĕш хутне тата мезонинне йышăнчĕç. Общежити 1874—1876 çулсенче çакăнта пурăнчĕ. Пӳлĕмĕ тăварччĕ, питĕ хĕсĕкчĕ. Тен, çакна пула е урăх сăлтавпа, 1876 çул пуçламăшĕнче общежитире пурăнакансене йывăр чир — тиф — ерчĕ. Пĕр Д.Ф. Филимонов вĕрентекен кăна аптрамарĕ унпа, чирлĕ ачасене вăл пăхса тăчĕ.

Эпидеми вăхăтĕнче эпĕ Чĕмпĕр тата Хусан кĕпĕрнисем тăрăх шкулсене пăхса çӳрерĕм, кайран Хусанта çак тĕрĕслев пирки отчет çыртăм. Телее, пур вĕренекен те чиртен сывалчĕ, вилекен пулмарĕ.

Тиф эпидемийĕ сиксе тухнăран кĕпĕрнери сывлăх управи ачасене хваттертен куçарма хушрĕ. 1876 çулхи пуш уйăхĕнче общежити И.М. Загряжский çуртне хваттере кĕчĕ (халĕ çав çурта сӳтнĕ, вăл хула тӳремĕнчи А.П. Кирпичников ячĕллĕ богадельня тытăмĕнче). Общежити ку çуртра 1877 çулхи çурла уйăхĕччен пурăнчĕ.

1876 çулта йывăç флигельлĕ чул çурт туянма тинех май тупрăм. Вăл Сĕве хĕрринче вырнаçнăччĕ, унта малтан салтаксем пурăннă пулнă. Çĕнетсе юсанă çурта Чăваш шкулĕ 1877 çулхи çурла уйăхĕнче куçрĕ, малашне çакăнта тĕпленчĕ.

## УЧИТЕЛЬСЕН ПУРНĂÇĔ

Н.И. Ильминский учительсен культурине хăпартасси пирки яланах аса илтеретчĕ, унăн системинче çак ыйту тивĕçлĕ вырăн йышăнатчĕ. Эпĕ те шкулта ĕçлекен учительсемпе пачăшкăсен пурнăç тата культура шайне çĕклеме тăрăшаттăм.

Вӗсене садсем лартӑр, пахчасем чавӑр, утарсем тытӑр тесе хушаттӑм. Учительсен пур ӗҫре те халӑха вӗрентмелле, хуҫалӑха тытса пырас енӗпе тӗслӗх пулмалла.

Пӗр класлӑ училищӗсенче учительсен хваттерӗсем шкултах вырнаҫнӑччӗ. Ҫакӑ пит меллех марччӗ, ҫемьеллисемшӗн уйрӑмах кансӗрччӗ. Икӗ класлӑ училищӗсенче вара учительсен пӳлӗмӗсем шкул ҫуртӗнче марччӗ. Ҫавӑнпа эпӗ пӗр класлӑ училищӗсене икӗ класлисем тума тӑрӑшаттӑм. Икӗ класлӑ училищӗсенче мастерскойсем те йӗркелеттӗмӗр — вӗсенче атӑ-пушмак ҫӗлетчӗҫ, сӗтелпукан тӑватчӗҫ, ӑсталанӑ ӑпӑр-тапӑрпа хӑйсене те тивӗҫтеретчӗҫ, ҫынсене те паратчӗҫ.

Ял хуҫалӑх шкулӗсене уҫма та хавхалантараттӑм. Ку енӗпе ытларах чухне Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ учительсемпе пачӑшкӑсем хастарлӑх кӑтартатчӗҫ. Ҫӗрпӳ уесӗнчи Каҫал ялӗнчи Виктор Зайков пачӑшкӑ питӗ пысӑк утар тытатчӗ, пине яхӑн вӗллеччӗ унӑн.

## ЧӐВАШ ШКУЛӖСЕН ИНСПЕКТОРӖ

Халӑха ҫутта кӑларас ӗҫ министрӗ Д.А. Толстой граф 1866 ҫулта Хусан вӗрентӳ округӗнчи шкулсене пӑхса ҫаврӑннӑ. Ҫакӑн чухне ӑна крешӗн тутарӗсем православинчен каялла ислама куҫни ҫинчен пӗлтернӗ. Министр Н.И. Ильминскипе тата Хусан вӗрентӳ округӗн попечителӗ П.Д. Шестаковпа канашлу ирттернӗ. Ҫак канашлура чӑвашсем валли те ятарлӑ инспектор кирлӗ тесе йышӑннӑ, мӗншӗн тесен вӗсем те ислам тӗнне йышлӑн куҫнӑ.

Хусан вӗрентӳ округӗнчи чӑваш шкулӗсен



инспекторĕн должноçне 1867 çулта çирĕплетнĕ. Н.И. Ильминский тата П.Д. Шестаков тăрăшнипе инспектора Н.И. Золотницкие лартнă. Вăл чăваш чĕлхине лайăх пĕлет тесе шутланă вĕсем. Лешĕ вара чăннипе чăвашла аран калаçкаланă.

1875 çулхи çурла уйăхĕн 27-мĕшĕнче Хусан вĕрентӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторне мана лартрĕç. Çăмăл ĕç марччĕ ку. Н.И. Золотницкий хăй вăхăтĕнче нимĕн те тăрăшман, суя отчетсемпех çырлахнă. Ăна ĕçрен кăларсан çак должноçра темиçе çул никам та ĕçлемен. Чĕмпĕр кĕпĕрнинче чăваш шкулĕсенче лару-тăру йывăрччĕ. Вĕсем пурте уес земствисене пăхăнатчĕç. Манăн вара нимĕнле влаç та çукчĕ, эпĕ чăваш ыйтăвĕпе канаш паракан специалист пекки кăначчĕ. Учительсем, Турă саккунне вĕрентекен

пачăшкăсем манăн сăмаха итлеме те, итлемессе те пултаратчĕç.

Земствăпа пĕрлех шкулсенче училище канашĕсем пурччĕ, учреждениссене вĕсем ертсе пыратчĕç. 1869 çулта халăх училищисен инспекторĕн должноçне кĕртрĕç. Çакă чăваш шкулĕн ыйтăвне тата кăткăслатрĕ. 1875 çулта мана Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çеç туллин пăхăнатчĕ. 1877 çулта тин ытти чăваш шкулĕсем ман алла куçрĕç. Вĕсене халăх училищисен инспекторĕ пăхса тăратчĕ. Чăваш шкулĕсен инспекторĕн тĕп тĕллевĕ — тĕне кĕнĕ чăвашсене ислам тĕнне куçма чарассиччĕ.

## ÇĔР ĔÇĔ

Хусан вĕрентӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторне ларсан эпĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнче ял хуçалăх ферми уçма шут тытрăм. Ялтан килнĕ чăваш çамрăкĕсен шкулта та çĕр ĕçне манмалла мар, çынсене ял хуçалăхĕн çĕнĕлĕхĕсемпе те паллаштармалла. Чăвашсем йышлăн пурăнакан вырăнсенче чаплă, тĕслĕхлĕ хуçалăх тытса пыракан пуян улпутсем çукчĕ, çавăнпа ял хуçалăх культурин ыйтăвĕ чăвашсемшĕн çивĕч тăратчĕ. Ялсенче выльăх ăратне лайăхлатасси пирки те шутлаттăм. Чăвашсен выльăх-чĕрлĕхĕ шултра марччĕ, анчах питĕ чăтăмлăччĕ.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнче ял хуçалăх фермине уçма вăтăр çул кирлĕ пулчĕ. Малтанхи çулсенче эпĕ Чĕмпĕрти ял хуçалăх обществинче çĕре арендăна илсе тата ача-пăча приючĕн çĕр лаптăкĕнче опытлă хуçалăх йĕркелерĕм. Пус çумне пус хушса укçа пуçтарсан 1912 çулта тин Чăваш шкулĕ валли ик çĕр утмăл тăвата теçеттин çĕр

илтӗм. Ферма йӗркелеме шкулӑн пур май та пурччӗ, земство, учреждениcем, ахаль ҫынсем пӗрмай пулӑшса тӑратчӗҫ.

Ачасене ӗҫпе пиҫӗхтерес тӗллевпе Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче сад лартрӑмӑр, пахча та пурччӗ. 1876 ҫулта шкул ҫурчӗсене илнӗ чух унта нимӗнле сад та пулман, темиҫе хурама тата груша ҫеҫ ларатчӗҫ. Шкул ачисем йывӑҫсем лартрӗҫ, сукмаксем хыврӗҫ, чечеклӗхсем хӑтларӗҫ. Эпир сайра тӗл пулакан ҫеҫкесем те ӳстереттӗмӗр. Садӑн ҫурри шкул ҫӗрӗ ҫинче, тепӗр ҫурри манӑн ҫӗр ҫинче вырнаҫнӑччӗ.

Садра туса илнӗ ҫимӗҫсене сутмастӑмӑр, йӑлтах шкул валли хӑвараттӑмӑр. Пахчара ҫитӗнтернӗ ҫимӗҫсем те айккине каймастчӗҫ, шкултах юлатчӗҫ. Пирӗн сад юнашар пурӑнакан арҫын ачасене питӗ илӗртетчӗ, вӑрра пыракансемпе вӗҫӗмсӗр кӗрешме тиветчӗ. Пан улмисем сип-симӗс чухнех вӗсем йывӑҫсене силлеме тытӑнатчӗҫ.

## ЧӐВАШ ШКУЛӖСЕМ

Ҫак вӑхӑт тӗлне чӑваш шкулӗсем икӗ тӗрлӗччӗ — пӗр класлисем тата икӗ класлисем. Вӗсем Хусан, Чӗмпӗр, Самар кӗпӗрнисенче вырнаҫнӑччӗ. Мана чӑваш шкулӗсене учительсене ӗҫе илме, ӗҫрен кӑларма ирӗк пачӗҫ. 1875 ҫулччен кашни кӗпӗрнере халӑх училищисен пӗр инспекторӗ кӑначчӗ. 1875 ҫултан тытӑнса кӗпӗрнере халӑх училищисен инспекторӗсем йышланчӗҫ, вӗсене директор теме пуҫларӗҫ.

Хусан вӗрентӳ округӗнче чӑваш шкулӗсем сахалччӗ. Эпӗ инспектора ларсан Хусан кӗпӗрнинчи Шупашкар уесӗнчи Шӗнерпуҫӗнчи икӗ класлӑ,

Тĕрлемесри пĕр класлă, Чикме уесĕнчи Питтукассинчи икĕ класлă, Етĕрне уесĕнчи Элĕкри икĕ класлă, Турайри пĕр класлă, Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесĕнчи Кăнна Кушкинчи пĕр класлă, Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесĕнчи Çĕнĕ Чукалти пĕр класлă, Кăрмăш уесĕнчи Хутарти пĕр класлă, Самар кĕпĕрнинчи Пăкăльма уесĕнчи Лашманти пĕр класлă шкулсем пурччĕ. Çитменнине тата вĕсем пĕр-пĕринчен питĕ инçетре вырнаçнăччĕ. Шкул ĕçĕ юхăннăччĕ, ăна çĕнĕрен йĕркелемеллеччĕ.

Инспектора ларсан эпĕ чăваш шкулĕсем татах уçма пултараттăм, çак ĕçре мана земство пулăшатчĕ. Хусан вĕрентӳ округĕн попечителĕсем П.Д. Шестаковпа П.Н. Масленников чухне ĕç лайăх пыратчĕ, кайран вара, урăххисем килсен, шкулсем уçас енĕпе мана чăрмантарма тытăнчĕç. Эпĕ Хусан кĕпĕрнинчи Шупашкар, Етĕрне, Çĕрпӳ, Теччĕ, Спасск уесĕсенче, Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва, Чĕмпĕр, Сызрань, Кăрмăш уесĕсенче, Самар кĕпĕрнинчи Строганькинăра шкулсем уçрăм. Пĕр класлă училищĕсене икĕ класлă тума тăрăшаттăм.

Чиркӳсем те уçаттăм эпĕ, хăш чухне вĕсене шкул çук ялсенче лартаттăм. Укçа-тенкĕ тĕрлĕ ведомствăран пыратчĕ, Халăха çутта кăларас ĕç министерстви уйăракан укçапа çыхăнманччĕ вĕсем. Министерство пĕр класлă училищĕсене çулталăкне пилĕк çĕр—улт çĕр тенкĕ, икĕ класлисене пин те ик çĕр тенкĕ паратчĕ.

Çĕнĕ шкул тунă чухне пĕр класлă училищĕсене пурне те пĕр пек планпа лартаттăмăр, икĕ класлисен вара пĕрешкел план çукчĕ. Шкулсем хă-

партнă чухне ĕç мĕнле пынине тĕрĕслеме вырăна кайса килеттĕм. Училищĕсене уйрăм çын çуртĕнче те уçаттăмăр, учителе ĕçе илеттĕмĕр, вырăнти пачăшкăна Турă саккунне вĕрентме хушаттăмăр. Ăнах училище ертӳçи тăваттăмăр. Чиркӳсем лартнă чухне вара унăн планне кĕпĕрне архиерейĕ çирĕплететчĕ.

Çĕнĕ шкул уçассине вырăнти халăх малтан ырламастчĕ. Яла кайса çынсемпе калаçма тиветчĕ, чылай вăхăта илетчĕ çакă. Чăваш хресченĕсен обществи шкул уçма ирĕк панă заявление земство çирĕплететчĕ. Çакăн хыççăн пĕтĕм документ — план, смета — Хусан вĕренӳ округĕ урлă Халăха çутта кăларас ĕç министерствине, хăш чухне вара вырăнти архиерей патне каятчĕ. Çакăн хыççăн вара шкул е чиркӳ лартас ĕç тытăнатчĕ.

## ШКУЛ АЧИСЕМ

Н.И. Ильминскин Хусанти инородец учительсене хатĕрлекен семинарийĕнче вырăссем вак халăх ачисенчен йышлăрахчĕ. Николай Иванович вырăс ачисем инородецсене ан кӳрентерччĕр тесе питĕ тимлĕн сăнаса тăратчĕ, вак халăх ачисене хӳтĕлетчĕ.

Манăн вара Чĕмпĕрте лару-тăру пачах урăхлаччĕ. Хирĕçӳ сиксе тухсан вырăс ачисене хӳтĕлеме тиветчĕ, мĕншĕн тесен шкулта чăвашсем нумайрахчĕ.

Чĕмпĕрти чăваш шкулне чухăн çемьерен тухнă ачасем тăтăшах пыратчĕç. Вĕсен йĕркеллĕ тумтир те çукчĕ, çĕтĕк-çатăк тумпа килетчĕç Чĕмпĕре. Çакăн пеккисене шкул шучĕпе тумлантараттăмăр.

Пĕтĕмĕшле правилăсем тăрăх, шкула вĕренме пыракансен тумтирлĕ, атă-пушмаклă пулмаллаччĕ. Анчах та пĕр чăваш ачине те, нимĕнле вырăс вĕренекенне те тăхăнмалли тумтир пĕрле илсе килменшĕн шкултан кăларса яман эпир.

Таса маррисем те, пыйтлисем те йышлăччĕ вĕренме килекенсем хушшинче. Чирлисем те — трахомăллисем, типсе çунса кайнисем, ӳслĕкпе аптракансем — çителĕклехчĕ. Трахомăллисем уйрăмах нумайччĕ. Ку чир чăваш ялĕсенче анлă сарăлнăччĕ. Вĕренме пынисене çăвăнтарса тасатма, чиртен сиплеме тиветчĕ. Шостак тухтăр трахомăна сиплеме ăстаччĕ.

Пĕррехинче эпĕ Чĕмпĕрте хутла пĕлмен, кукшаланса кайнă арçын ачана тĕл пултăм. Павел Миронов ятлăччĕ вăл. Питĕ шелленĕрен ăна шкула йышăнтăм. Çав ачана мунчана хам та темиçе хутчен илсе кайрăм, пуçĕнчи кĕсенсене те хамах хырса тасатрăм. Сывалчĕ, çын сăнĕ кĕчĕ ăна. Шкулта вĕренме тытăнсан Павел математикăра питĕ палăрчĕ. Учительсен Оренбургри институтĕнчен ылтăн медальпе вĕренсе тухрĕ, хулари уес училищисенче ĕçлерĕ. Çак хушăра математика кĕнекисем çырчĕ, вĕсене ăсчахсем ăшшăн йышăнчĕç. Эпĕ ыйтнипе Оренбург вĕрентӳ округĕн попечителĕ Н.А. Бобровников ăна Урал облаçĕнчи халăх училищисен инспекторне, кайран училищесен директорне лартрĕ. Пенсие тухсан Павел Миронович Ĕпхӳре юлчĕ. Хушăран вăл Чĕмпĕре пырса каятчĕ, ман пата кĕрсе тухатчĕ. С.А. Акимов мана П.М. Миронов çинчен интереслĕ хыпар пĕлтернĕччĕ. Вăл Франци академийĕ сĕнекен математика задачисене питĕ ăнăçлă шутласа кăтартнă иккен.

## ПИРĔН ТУЙ

1875 çулта эпĕ Хусан университечĕн историпе филологи факультетĕнчен аван вĕренсе тухрăм. Анчах та «кандидат» звание тивĕçме сочинени парса ĕлкĕреймерĕм, çавăнпа çак ята илеймерĕм. Хаяр Иван Хусана илнĕ хыççăн пулса иртнĕ инородецсен пăлхавне тĕпченĕччĕ эпĕ.

1877 çулхи авăн уйăхĕн 26-мĕшĕнче эпĕ Екатерина Алексеевна Бобровниковăна качча илтĕм. Ашшĕ вилнĕ хыççăн вăл Ильминскийсем патĕнче пурăннă, ăна Николай Иванович пăхса ӳстернĕ. Пире Хусан университечĕн профессорĕ Михаил Михайлович Зефиров протоиерей, Ильминский тусĕ, венчетлерĕ. Хусан вĕрентӳ округĕн попечителĕ П.Д. Шестаков хăйматлăх атте пулчĕ. Туй умĕн Чĕмпĕрте вăл çапла каларĕ: «Эсир авланатăр-им? Эпĕ сире пиллекенĕ пулăп». Туя Ильминскисен хваттерĕнче турăмăр. Инородец учительсен семинарийĕн чиркĕвĕнче венчете тăтăмăр.

Ку вăхăт тĕлне эпĕ чăваш шкулĕсен инспекторĕ пулса ĕçлеттĕм, Чĕмпĕрте пурăнаттăм, туй тума вара Хусана пытăм.

## МАНĂН МĂШĂРĂМ

Екатерина Алексеевна 1861 çулхи юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнче çуралнă. Вăл вунă çулта чухне тăлăха юлнă. Унпа эпĕ Ильминскисем патĕнче паллашрăм. Екатерина Алексеевнăна качча илнĕ чух вăл вун улттă тултарасси темиçе кун юлнăччĕ, саккун тăрăх вара хĕрсен çак çула çитмесĕр качча тухма юрамастчĕ. Çавăнпа Н.И. Ильминский пулăшнипе Хусан архиепископĕ Антонирен туй

тума ятарласа ирĕк илме тиврĕ. Мăшăрăм хĕрачасен гимназийĕнче аслă класра вĕренетчĕ, качча тухнипе ăна пĕтерейменрĕ. Пĕчĕккĕ чухне ăна нимĕç учительницисем вĕрентнĕ, вăл нимĕçле чиперех калаçатчĕ. Мăшăрăмпа чикĕ леш енче пулнă чухне вăл нимĕçле пĕлни пулăшатчĕ пире. Французла вара пит пĕлсех каймастчĕ. Çамрăк чухне рояльпе çăмăл пьесăсем калатчĕ, халĕ аппаланмасть.

Чăваш шкулĕнче хĕрачасен уйрăмĕ уçăлсан унта вĕренме чăваш тата вырăс хĕрĕсем килчĕç. Çак уйрăма ертсе пыма мана пит меллех марччĕ, çавăнпа ертӳçĕне арăма лартрăм. Пачах хут пĕлмен е кăшт кăна вулама пултаракан хĕрачасем пуçтарăннăччĕ кунта. Вĕренме пуçласан программа майĕпен анлăланатчĕ. Ял хĕрĕсене шкула вĕренме чĕнни вăл вăхăтра çĕнĕлĕхчĕ, халăх пит ырламастчĕ çак шухăша. Çавăнпа çынсене илĕртме тиветчĕ. Сăмахран, хĕрачасене Чĕмпĕре килме пăрахут билечĕсене хамăр тӳлеттĕмĕр. Екатерина Алексеевна учительница, воспитательница тата надзирательница тивĕçĕсене пурнăçласа пыратчĕ. Ĕçĕсем унăн тӳрех ăнчĕç, вĕренекенсемпе вăл хăвăрт пĕр чĕлхе тупрĕ. Кăмăлĕ çемçеччĕ унăн, сăмахĕ çирĕпчĕ, çине тăма пĕлетчĕ. Вĕренекенсем ăна юрататчĕç.

Çулталăкран пирĕн ывăл çуралчĕ. Мăшăрăма ача пăхма тивнĕрен чăвашла лайăх пĕлекен вырăс пачăшкин хĕрне Софья Ивановна Лебедевăна ĕçе илтĕм. Ку вăхăт тĕлне вăл тăлăха юлнăччĕ. С.И. Лебедева хĕрачасен уйрăмĕнче çулталăк ытла ĕçлерĕ.

## ХЁРАЧАСЕН УЙРĂМĔ

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче хĕрачасен уйрăмне уçас шухăш манăн тахçанах пурччĕ. Шухăша пурнăçа кĕртме авланнă хыççăн çеç пуçăнтăм. Хусах пуçпа çак ĕçе тытăнсан тăшмансем мана намăсне çухатнă тесе çисех яратчĕç, элек ăшне путаратчĕç. 1878 çулхи юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче хĕрачасен уйрăмĕ уçăлчĕ.

Чăваш хĕрарăмĕн йывăр пурнăçĕ çинчен лайăх пĕлеттĕм. Вырăс хĕрарăмĕн те шăпи çăмăл марччĕ, анчах вырăс хĕрарăмĕсем суха тунине, утă çулнине курман эпĕ. Чăваш ялĕсенче вара хĕрарăмсем арçынсемпе танах ĕçлетчĕç. Чăваш арçыннисене çеç çутта кăларма çул хывни тĕрĕс мар, чăваш хĕрарăмĕсем пирки те манма юрамасть тесе шутлаттăм эпĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен пултаруллă учительницăсем тухасса ĕненеттĕм.

Манăн çамрăк арăм Екатерина Алексеевна та хĕрачасен уйрăмне уçас ĕçе хастар хутшăнчĕ. Чăваш хĕрачисене вырăс чĕлхи, истори, географи, пуçламăш грамота вĕрентессине хăй çине илчĕ. Малтан тӳлевсĕр ĕçлерĕ вăл, кайран шалу илме тытăнчĕ. Хĕрачасен уйрăмне пĕр хутлă йывăç çуртра вырнаçтартăмăр, малтан пирĕн хваттер унтаччĕ. Хăш-пĕр хĕрачасем питĕ чиперччĕ, юнашар пурăнакан арçын ачасемпе çыхланса ан кайччăр тесе питĕ тимлеме тиветчĕ. Кăмăл-сипет енчен тĕрĕслес тата йĕркене çирĕп тытса тăрас шутпа хушăран çĕрле те шкула пăхса çаврăнаттăм эпĕ.

Екатерина Алексеевна шкул пурнăçĕнчен ютшăнмастчĕ. Ачасем чирлесен вĕсене пăхатчĕ.



Вĕрентекенсемпе воспитательсен пурнăçĕпе те кăсăкланатчĕ, вĕсен ыйтăвĕсене татса пама тăрăшатчĕ. Çĕнĕ çул ёлкисене те иртterме пулăшатчĕ (арçын ачасемпе хĕрачасем валли уявсене уйрăм йĕркелеттĕмĕр). Чăваш шкулĕнчи хĕрачасен уйрăмне уçма Н.И. Ильминский пулăшман. 1878—1881 çулсенче çак уйрăма хам тытса тăтăм. 1885 çулта хĕрачасен уйрăмĕ урăх çурта куçрĕ. Пирĕн хваттерпе юнашар вырнаçрĕ вăл. Екатерина Алексеевнăна хĕрачасене сăнаса-тĕрĕслесе тăма та, йĕрке тытса пыма та çăмăлланчĕ.

Хĕрачасен уйрăмне сайра пырса кураттăм эпĕ, экзаменсем чухне çеç пулаттăм темелле. Мăшăрăм хĕрĕх çул ытла ертсе пычĕ ăна. Екатерина Алексеевна вĕренекенсемшĕн питĕ тăрăшатчĕ, май çитнĕ таран хам та пулăшаттăм ăна. Енчен те чăваш хĕрĕсем арçын ачасен уйрăмĕнче вĕренекен йĕкĕтсенех качча тухсан эпир çамрăксене укçа-тенкĕпе те тивĕçтереттĕмĕр. Укçине хамăр кĕсьерен кăлараттăмăр, темиçе хутчен çеç Чĕмпĕр купси Н.Я. Шатров ачасене пулăшма йĕркеленĕ ятарлă капиталтан аллăшар тенкĕ илнĕччĕ. Чухăн хĕрачасене арăмпа иксĕмĕр хамăр укçапа кĕпе-йĕм, тумтир илсе параттăмăр.

Вĕренсе тухсан та хĕрсем пиртен кивçен укçа илкелетчĕç, ĕçе вырнаçма хута кĕме ыйтатчĕç. Вăй çитнĕ таран пулăшаттăмăр вĕсене. Екатерина Алексеевна хĕрачасене хитре вырăнсене уçăлма илсе каятчĕ, литература каçĕсем ирттеретчĕ. Çак ĕçсене арçын ачасене нихăçан та явăçтарман. Арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăм вĕрентни — манăн принципчĕ.

Екатерина Алексеевна алĕç ăстиччĕ. Вăл хĕ-

рачасене те алĕçне явăçтарчĕ. Вĕренекенсем тĕрлĕ куравсене хутшăнатчĕç. Çекĕлпе е пански çыхасси, çĕлесси, тĕрлесси пысăк шайраччĕ. Мăшăрăм вĕрентсе тăнипе хĕрачасем хăйсем валли тумтир те çĕлетчĕç. Каярахпа эпир алĕç вĕрентекен учительницăна та ĕçе илтĕмĕр. Вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пурăнмастчĕ, урок ирттерме çеç пыратчĕ. Алĕç ăсталăхĕшĕн тата пултарулăхшăн Екатерина Алексеевна ертсе пыракан хĕрачасен уйрăмĕ Хусанти выставкăсенче икĕ хутчен, Чĕмпĕрти куравсенче икĕ хутчен, Чулхулари Пĕтĕм Раççей выставкинче хисеплĕ парнесене тивĕçрĕ.

Хĕрачасен уйрăмне ертсе пынишĕн пысăк шалу илместчĕ манăн мăшăрăм — уйăхне çирĕм пилĕк тенкĕ çеç тухатчĕ унăн. Кайран ĕç укçине уйăхне вăтăр—вăтăр пилĕк тенкĕ таран хăпартрĕç. Манăн мăшăрăм çын умне тухма пит юратмастчĕ, хăна пăхма вара кăмăллатчĕ. Екатерина Алексеевна хĕрачасен уйрăмĕнче вĕренекенсене чей ĕçме чĕнетчĕ, çын çинче хăйсене мĕнле тытмаллине вĕрентетчĕ. Каникулта е пысăк уявсенче хĕрачасем килĕсене саланатчĕç, манăн мăшăрăм вĕсене ушкăнпа, е тăванĕсемпе, е шанчăклă çынсемпе çула яма тăрăшатчĕ. Анчах та хăшĕсем, ытла та инçетрен, тĕслĕхрен, Оренбург е Ĕпхӳ кĕпĕрнисенчен килнисем, уявсенче килĕсене каяймастчĕç. Екатерина Алексеевна çак хĕрачасем ан тунсăхлаччăр тесе вĕсене шкулта уяв туса паратчĕ.

Хĕрачасен уйрăмĕнче вĕренекенсем Чĕмпĕр çумĕнчи ял хуçалăх ферминче те ĕçлетчĕç. Вĕсем унта чылайччен пурăнатчĕç — çум çумлатчĕç, тырă выратчĕç, пахча çимĕç пуçтаратчĕç. Эпĕ те

çуллахи вăхăтра çемьепе фермăра пурăнаттăм. Екатерина Алексеевна вĕренекенсене пăхатчĕ, пурăнмалли условисем, апат-çимĕç лайăх пултăр тесе тăрăшатчĕ. Пушă вăхăтра хĕрачасемпе уçăлса çӳретчĕ. Вĕренекенсем ăна хисеплетчĕç. Манăн мăшăрпа ачасем хушшинчен хура кушак нихăçан та каçса кайман, вĕсем пĕр-пĕрне яланах ăнланатчĕç, питĕ туслăччĕ.

## ШКУЛ ЕРТӲÇИН ЯВАПЛĂХĔ

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕшĕн яваплăх пысăкчĕ манăн. Шкул ачисем, учительсем, воспитательсем пирки пуç çĕмĕрме тиветчĕ. Н.И. Ильминский шкул ĕçĕнче çынсене укçапа илĕртмелле мар тесе асăрхаттарсах тăратчĕ. «Шкулта ĕçлеме вĕрентмелле. Чăвашсене вырăс культурине памалла, ăна вара ĕçченлĕх тата сăпайлăх тĕкĕрĕ витĕр йышăнмалла. Шкул ĕçченĕсене никам та ан ăмсантăр! Укçа-тенкĕ кирлĕ мар! Чăвашсене укçана ан хăнăхтар», — тетчĕ вăл мана. Унăн канашĕсене итлесе Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн малтанхи çулĕсенче халăха çутта кăларассишĕн çунса тăракан учительсемпе воспитательсене çеç йышăнаттăм. Çакăн пек çынсем çеç чăваш халăхне усă кӳреççĕ тесе шутланă. Укçашăн пыракансене ĕçе илмен эпĕ. Малтанхи вăхăтсенче учительсене питĕ сахал тӳлеттĕм — пĕр урокшăн пурĕ те икĕ тенкĕ. Çак йĕркепе килĕшекенсем тупăнатчĕç. Енчен те учительсем кĕсьене укçа нумайрах кĕтĕр тесе тăрăшма тытăнсан çавнашкаллисене ĕçрен кăлараттăм.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи ачасем тĕн семинарине вĕренме куçнине хирĕçчĕ Н.И. Ильмин-

ский. Николай Ивановича çав вăхăтри тĕн семинарийĕсен тăшманĕ тесех хакламалла. Тĕн семинарийĕсемпе академийĕсенчен инородецсене кирлĕ, наци енĕпе ĕçлеме пултаракан çынсене вĕрентсе кăлармаççĕ, чылай чух вĕсенчен Тăван çĕршывшăн сиенлĕ шухăшлă çынсем тухаççĕ теттчĕ. Эпĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекен ачасене семинарине куçма ирĕк панине çав тери кăмăлсăр йышăнатчĕ вăл.

Чăнах та, çамрăксем тĕрлĕренччĕ, вĕсем мĕнле çын пулса ӳсессе пĕлме çукчĕ. Семинарие вĕренме куçнă çамрăксенчен хăш чух халăха юрăхлă çынсем пулмастчĕç. Аслă шкул пирки те çакнах каламалла: аслă пĕлӳ илнисенчен хăш-пĕрисем хăйсене тивĕççĕр тытатчĕç, ахаль халăха православипе вырăс культури пĕлтерĕшне пĕчĕклетсе кăтартатчĕç.

## ВАК ХАЛĂХСЕНЕ ПУЛĂШНИ

Чăвашсем ман пата пулăшу ыйтма яланах пыратчĕç. Хăш чухне уйрăм çынсем кăна мар, ял халăхĕ ячĕпе те килетчĕç. Вĕсен ыйтăвĕсене татса парас тесе Чĕмпĕрти тата Хусанти пысăк чинлă çынсем патне пĕрмай çӳреттĕм, тĕрлĕ учрежденисене кĕрсе тухаттăм.

Пĕррехинче эпĕ, ун чухне Н.И. Ильминский чипер-сывах-ха, Çĕрпӳ уесĕнчи чăваш шкулĕсене пăхса çаврăнаттăм. Кавал сали витĕр тухатăп хайхи. Хĕнесе пĕтернĕ, юнланса пĕтнĕ чăвашсем тĕл пулма тытăнчĕç. Хирте, çул айккинче, темиçе виле куртăм, шĕвĕртнĕ шалçасем сапаланса выртаççĕ. Юнашар вырнаçнă ялсем хушшинче çĕрпе çыхăннă тахçанхи тавлашу каллех амаланса кайнă ик-

кен. Кӗпӗрнери пуҫлӑхсем тавлашӑва татса пама ҫӗр виҫекене янӑ, унӑн анасен чиккисене палӑртмалла пулнӑ. Ҫӗр виҫекен патне халӑх йышлӑн пуҫтарӑннӑ, ҫынсем пӗр-пӗринпе хирӗҫсе кайнӑ. Темиҫе хресчене ҫапса пӑрахнӑ, аманни-сусӑрланнисем те самаях пулнӑ. Ҫӗр виҫекене те хӗнесе пӗтернӗ.

Хусан кӗпӗрнаттӑрӗ ҫак пӑтӑрмаха пӑлхав, кӗпӗрне пуҫлӑхӗсене вӑйпа хирӗҫ тӑни тесе йышӑнчӗ. Айӑпланӑ чӑваш хресченӗсене ҫар сучӗ аллине панӑ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи саккунсемпе явап тыттарма хушнӑ. Ҫар сучӗ вун ҫичӗ чӑваша вилӗм приговорӗ, ыттисене вирлӗ хасалама (айӑплама) йышӑннӑ. Хресчен пурнӑҫне лайӑх пӗлнӗрен эпӗ ҫак ӗҫре нимӗнле пӑлхав та курмарӑм. Ҫӗр ыйтӑвӗ пирки ҫапӑҫса кайнӑ хресченсем — хӗҫ-пӑшал тытса патшалӑха хирӗҫ никам та тӑма шутламан. Кавалта мӗн пулса иртни пирки фактсем пуҫтартӑм, Хусана таврӑнсан курни-илтнине Н.И. Ильминские пӗлтертӗм. Вӑл К.П. Победоносцев патне ҫыру ҫырчӗ — патшалӑх преступникӗсем тесе тӗрӗс мар айӑпланӑ тӗттӗм чӑваш хресченӗсен хӳттине кӗме ыйтрӗ. Ильминскин ыйтӑвӗсене Победоносцев яланах тивӗҫтерме тӑрӑшатчӗ. III Александр император ҫак вӑхӑтра ҫемйипех Кавказа кайнӑччӗ, ҫавӑнпа ҫак ыйтупа Константин Петрович патшапа куҫа-куҫӑн тӗл пулайман. Эпӗ вӑл Ильминские мӗнле хурав панине вуланӑччӗ: «Хамран мӗн кирлине пӗтӗмпех тӑватӑп, анчах та ҫак ӗҫе хутшӑннине государь мӗнле хаклассине пӗлместӗп», — тесе ҫырнӑччӗ вӑл. Чӑнах та, государь император Петербурга таврӑнсан влаҫсем вун ҫичӗ чӑваш хресченӗн вилӗм

приговорне пӑрахӑҫларӗҫ, вӗсене урӑх хаса пачӗҫ.

Н.И. Ильминские туллин кӑтартма, вӑл инородецсене мӗнле хисепленине хаклама тепӗр тӗслӗх илсе кӑтартатӑп. Алтайри пӗр миссионер Ильминские ятарлӑ ҫырупа вараланса-ҫулланса пӗтнӗ ҫӗр тенкӗ хут укҫа ярса панӑ. Укҫа хуҫи калмӑк иккен, вӑл ӑна асӑрханусӑр тыткаланӑ та, вараланса пӗтнӗ хут укҫа хӑйӗн хакне ҫухатнӑ. Миссионер Николай Ивановича чухӑн калмӑка пулӑшма, юрӑхсӑра тухнӑ хут укҫана ҫӗннипе улӑштарса пама ыйтнӑ. Ильминский пӗр тӑхтамасӑр финанс министрӗ И.А. Вышнеградский патне ҫыру ҫырчӗ, ӑна мана та вулаттарчӗ. Ҫак хут укҫан тертлӗ ҫулӗ-йӗрӗ ҫинчен кулӑшла манерпе ҫырса кӑтартнӑччӗ унта, чухӑн ҫын чунне ӑнланса унӑн ыйтӑвне тивӗҫлӗн татса пама ыйтнӑччӗ.

Финанс министрӗ И.А. Вышнеградский, чӑнах та, ҫак ыйтӑва пурнӑҫларӗ.

## АРХИЕРЕЙСЕН ЙӐНӐШӖ

Инородецсене ҫутта кӑларас, православи тӗнне сарас ӗҫре архиерейсем те сиен кӳчӗҫ. Святейши Синодӑн инородецсен чӗлхипе чиркӳре кӗлӗ вулама юрать текен указӗ пур. Чӑваш храмӗсенче Гурий святитель тӑванлӑхӗ ҫирӗплетнӗ кӗнекесемпе чӑвашла кӗлӗ вулама ирӗк панӑччӗ. Ӗп-хӳ архиепископӗ Андрей ҫак указа унччен те пурнӑҫланӑ, халӗ те пурнӑҫлать, кӗлӗсене икӗ чӗлхепе вулама ирӗк парать. Ытти архиерейсем тата вӗсен майлӑ пачӑшкӑсем вара ҫак указа нимӗн вырӑнне те хумаҫҫӗ.

Н.И. Ильминский ӗҫне сӑтӑр тӑвакансен йышне тивӗҫсӗр чӑвашсене пачӑшкӑ пулма ҫирӗплетнӗ

архиерейсене те кĕртмелле. Çав чăвашсем мĕнле çынсем пулнине тишкермесĕрех, кăмăлĕ-шухăшĕпе интересленмесĕрех вĕсене пачăшкăна лартӑççĕ. Хальхи Чĕмпĕр архиепископĕ Вениамин та ытла çăмăл татса парать çак ыйтăва. Тен, инородецсен пурнăçне пĕлменрен çакă? Айван пачăшкăсем йышланчĕç, вĕсем ял çыннисене ним ыррине те вĕрентеймеççĕ. Вырăс православине сиен кӳни çеç пулать ку.

Эпĕ çут тĕнчере чăвашсене тăван чĕлхепе кĕлтума никам та чăрмантарас çук вырăн шыраса тупмалла пуль тесе ĕмĕтленме тытăнтăм. Афонра çĕр лаптăкĕ илсе çавăнта чăваш мăнастирĕ никĕслемелле те кĕлĕсене чăвашла çеç ирттемелле теттĕм. Е тата Палестинăра, Господь тупăкĕ умĕнче, ытти христиан халăхсемпе пĕр тан чăвашла кĕлĕсем вулама ирĕк илмелле тесе шутлаттăм.

Палестинăна кайса килме шут тытнă чăвашсене пулăшаттăм эпĕ. Çавсенчен пĕри каялла таврăнсан Геннисарет кӳлли (Галилей тинĕсĕ) патĕнчи авалхи мăнастир ишĕлчĕкĕсем çинче Турра вырăсла кĕлтуса пуççапакан чăваш çыннипе тĕл пулнине каласа пачĕ. Шăпах çакăн хыççăн ĕнтĕ Иерусалимра чăвашла кĕлтăвас шухăш çуралчĕ манăн.

## ШКУЛ ЧИРКĔВĔ

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче хĕрачасен уйрăмне уçсан вĕренекенсен йышĕ ӳсрĕ, пуçламăш чăваш училищисем валли учительсене хатĕрлеме ирĕк пачĕç. Тĕн-сипет ыйтăвĕ шкул ĕçĕпе уйрăлми çыхăннă пирки Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче чиркӳ уçмаллине пурте ăнланатчĕç. Петербургра

К.П. Победоносцевпа пуҫласа курнӑҫнӑ чухне Святейши Синод обер-прокурорӗн канцеляри пуҫлӑхӗ В.К. Саблерччӗ. Эпӗ иккӗшӗн патӗнче те пултӑм, Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче чиркӳ уҫмаллине каларӑм. Ку вӑхӑт тӗлне эпир Чӑваш шкулӗнче уйрӑммӑн тӑракан чул флигельте чиркӳ йӗркелеме тытӑннӑччӗ ӗнтӗ.

К.П. Победоносцев манӑн шухӑша ырларӗ кӑна мар, храмра мӗнле турӑшсем пулмаллине, вӗсен копийӗсене Петербургра ӑҫта тупма май пулнине те каларӗ. Лейб-гварди Измайловски полкӗн Константиновски ҫар училищин чиркӗвӗсенчи турӑшсене асӑнчӗ, иконӑсем ӳкерме заказ пама Кошелев профессор патне ячӗ. Унӑн заказӗпе Петербургра иконостас ӳкерчӗкне хатӗрлерӗҫ. Анчах та Константин Петрович хушӑвӗсемпе усӑ курма май килмерӗ. Хусанта пурӑнакан Спиридонов художник Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн иконостасӗ валли «Сошествие Святого Духа», «Преображение Господне» тата ытти турӑшсене ӳкерсе пачӗ, вӗсене Мускаври Ҫӑлакан Христос храмӗнчи иконсем манерлӗ турӗ. Иконостаса юманран ӑсталарӑмӑр, ятарлӑ эрешсемпе хитрелетрӗмӗр. Иконостасӑн тӗп ӗҫӗсене Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн столярӗ Сергей Сергеевич Сергеев пурнӑҫларӗ, ӑна вӗренекенсем те пулӑшрӗҫ. Юмана эрешлеме хуларан ҫын чӗнтӗмӗр. Чӑваш шкулӗн хисеплӗ попечителӗ Н.Я. Шатров хӑй шучӗпе чиркӗве пысӑклатма килӗшсен тепӗр ярус хӑпартрӑм, ҫавра алтарь, чул картлашка турӑмӑр.

Иккӗмӗш ярусри иконостаса пӗрремӗш яруспа килӗшӳллӗн рисовани учителӗ Егор Семенович Сергеев ӳкерчӗ, чӑваш шкулӗн столярӗ Никифо-

ров ăна йывăçран турĕ, эрешсене хулари ăста касрĕ. Турăшсене вара Бурев художник ӳкерчĕ.

Н.И. Ильминский Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн чиркĕвне «Апостолсем патне Святой Дух анни» ята парса чысламаллла тетчĕ, мĕншĕн тесен çакăн хыççăн апостолсем нумай чĕлхепе калаçма тытăннă, халăхсене христиан тĕнĕ çинчен ăнлантарнă. Чăваш шкулĕн чиркĕвĕн кунĕнче чăвашсене христианлăх вĕрентĕвĕн çути ырлăх кӳни пирки кĕлĕ вуламаллине те шута илетчĕ Николай Иванович. 1884—1885 çулсенче тунă храм пĕр хутлăччĕ, 1899—1900 çулсенче вара тепĕр этаж хăпартрăмăр. Çавна май иконостаса та çĕнĕрен турăмăр.

Учительсем хатĕрлекен Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн мастерскойĕсенче кĕпĕрнери ял чиркĕвĕсем валли те заказсем илсе иконостассем туса параттăмăр.

## Д.А. ТОЛСТОЙ ГРАФ

Н.И. Ильминский тăрăшнипе мана тата Чăваш шкулне яланах чĕререн пулăшса пынă Д.А. Толстой графа, халăха çутта кăларас ĕç министрне, эпĕ икĕ хутчен курнă. Пĕрремĕш хут ăна 1877 çулта Атăлпа çулçӳреве тухсан Чĕмпĕр çумĕпе иртсе кайнă чухне тĕл пулнăччĕ. Çавăн чухне пристане Чĕмпĕрти вĕрентӳ заведенийĕсене, çав шутра Чăваш шкулне те, чĕнсе илнĕччĕ.

Чăваш шкулĕ «Дружина» пăрахут обществин пристанĕ çумĕнчи уçă вырăнта тăчĕ. Министр пристаньре виçĕ сехете яхăнах пулчĕ, çак вăхăтра пирĕн шкулпа вĕçĕмсĕр кăсăкланчĕ. Вăл шкул ачисем чăвашла тата вырăсла юрланине итлерĕ, вĕренекенсем Турă Саккунне, вырăс чĕлхине мĕнле



пĕлнине тĕрĕслерĕ, манран шкул пирки, вĕрентекенсем çинчен тĕплĕн ыйтса пĕлчĕ. Вĕрентӳ ытти заведенийĕсене питех тимлемерĕ те вăл. Граф манпа тĕлĕнмелле кăмăллăн, тарават тата хапăл туса калаçрĕ.

Д.А. Толстой вунă çула яхăн чиперех ĕçлекен Чăваш шкулĕпе шутсăр интересленнине малтанах, граф Чĕмпĕре çитичченех, систернĕччĕ ĕнтĕ мана. Чăваш шкулне пăхса çаврăнма Хусантан ятарласа килнĕ П.Д. Шестаков попечитель, Чĕмпĕр преосвященнăйĕ Феоктист епископ, Чĕмпĕр кĕпĕрнаттăрĕ Н.П. Долгово-Сабуров тата ытти сумлă çынсем хутшăнчĕç. Сăмах май каласан, шкул ун чухне «Центральная чувашская школа» (Тĕп чăваш шкулĕ) ятлăччĕ.

Святейши Синод обер-прокурорĕ, халăха çутта кăларас ĕç министрĕ пирĕнпе хытă кăсăкланни вырăнти общество, халăх, пуçлăхсем умĕнче Чăваш шкулне тӳрех çӳллĕ шая çĕклерĕ. Пуçлăхсем графпа тĕл пулма пристане пурте пынăччĕ. Эпĕ Чĕмпĕрте хăйне евĕр паттăр пулса тăтăм. Чăваш шкулĕнче вĕренекенсем пирки те урăхларах калаçма тытăнчĕç. Çак таранччен «чăваш» тени Чĕмпĕрте вăрçмалли сăмах вырăнĕнче кăначчĕ.

Д.А. Толстой графпа тĕл пуличчен Чăваш шкулĕнчи ачасем хулара мĕнле пурăннине кăтартма пĕр ĕç-пуçпа паллаштарам. Хула урамĕнче тутар çынни (вырăс та çавах) чăваша чăпăрккапа çапнине, вăрçнине, йĕкĕлтесе кулнине тăтăшах курма пулатчĕ. Чун ыратнăран: «Ӳркенекен этем кăна çак тĕнчере чăваша кӳрентермест иккен», — тесе хурланаттăм.



Чăваш шкулĕ унччен хула тӳременче вырнаҫнăччĕ. Халĕ вăл ҫурта сӳтнĕ, ҫав вырăнта А.П. Кирпичников купсана асăнса лартнă богадельня ларать. Лайăх юрлама пĕлнĕ шкул ачисене кĕпĕрнаттăр ҫуртĕнчен инҫех мар вырнаҫнă Никольски чиркĕвне юрлама илсе каятчĕҫ. Кайран вара вĕренекенсем масар патĕнчи Всехсвятски чиркĕвне ҫӳреме тытăнчĕҫ. Вĕсемпе яланах учительсенчен кам та пулин пыратчĕ.

Пĕррехинче ачасем ушкăнпа Никольски чиркĕвĕнчен таврăннă, Кермен урамĕнчи пасарти пĕр купса ҫурчĕ ҫумĕпе Серебряковсен лавккипе юнашар иртсе пынă чухне ҫумăр хыҫҫăн юлнă пылчăка шăпăрпа шăлакан пĕр приказчик чăваш ачине юриех шăпăрĕпе питĕнченех лектернĕ. Та-

рăнах шăйăрса янă, ачан суранĕнчен юн юхма тытăннă.

Çак киревсĕрлĕх çинчен пĕлсен лавкка хуçи патне кайрăм. Мĕн пулнине каласа парсан купса та приказчикне тарăхрĕ: «Мишка! Эсĕ мĕн хăтланнă?..» — тесе кăшкăрса пăрахрĕ. Лешĕ вара: «Нимĕн те туман — вăл чăваш ачи кăначчĕ!..» — тесе çеç хучĕ.

Д.А. Толстой графпа иккĕмĕш хут 1884 çулта Петербургра, унăн хваттерĕнче, вăл шалти ĕçсен министрĕ пулнă чухне курнăçнăччĕ. Дмитрий Андреевич мана хăйĕн кабинетĕнче питĕ ăшшăн йышăнчĕ, пилĕкрен ыталаса илчĕ те юнашар лартса Чăваш шкулĕ, унăн пĕлтерĕшĕ, усси тата ытти çинчен ыйтса пĕлчĕ. Пысăк чинлă çынпа, министрпа калаçнине асра тытса эпĕ ыйтусене кĕскен хуравларăм. Д.А. Толстой чăвашсем çутта тухса пыни савăнтарать тесе мухтарĕ, Н.И. Ильминские аса илчĕ, вĕренӳри ĕçсемшĕн мана та тав турĕ.

## ФЕОКТИСТ ВЛАДЫКА

Эпĕ тĕн çыннисене яланах хисепленĕ, çавăнпа Чĕмпĕр владыкисене чăваш шкулне экзаменсене йыхравлаттăм. 1878 çулта Феоктист архиепископпа кулăшла ĕç-пуç пулса иртрĕ. Владыкăна экзаменсене пыма чĕнтĕм. Вăл Чăваш шкулне пыма килĕшрĕ. «Экзаменсем миçе сехетре пуçланаççĕ?» — ыйтрĕ хăйхискер. «Сире мĕнле лайăх — çавăн чухне», — тетĕп. «Иртерех пырсан мĕнле?» — кăсăкланчĕ вăл. «Эпĕ ирхинеултă сехетре тăратăп», — хуравларăм эпĕ. Чĕмпĕрти чăваш

шкулёнче Турă саккунёпе экзамена сакăр сехетре пуçлама калаçса татăлтăмăр.

Эпё ун чухне шкул çуртёнче пурăнмастăмччё, хваттер Богоявленски чиркёвё патёнчеччё. Экзамен кун ирпе ирех шăрăхчё. Вырăн çинчен тăрсан Сёвене шыва кёме кайрăм. Таврăнсан чӳрече умне чей ёçме лартăм. Пăхатăп та — архиерей каретăпа шкулалла вёçтерет, лавçăпа юнашар тарçи ларать. Часрах тумланса шкулалла чупрăм. Ёлкёреймерём — архиепископ каялла таврăнать. Паллă парса каретăна чартăм. Эпё ăнлантарнисене владыка хăлхине те чикмерё, лавçа малалла кайма хушрё.

Архиерей экзамен вăхăтне арпаштарнă, шкула иртерех çитнё. Ачасем ăна кирлё пек — юрласа саламланă. Владыка вёсене тав та тунă çакăншăн. Турă саккунне шкулта вăл вăхăтра пачăшкă мар, Иван Васильевич Богоявленский учитель вёрентетчё. Çав кун вăл та шкула ирех пыман, Феоктист архиепископа кётсе илмен. Çакăншăн владыка кӳреннё.

Çитменнине тепёр пăтăрмах та сиксе тухрё. Шкул картишён хапхине çав кун унччен Феоктист патёнче тарçăра тăнă маляр сăрланă. Вăл иккен архиерей лавçипе тата тарçипе хирёçсе пурăннă. Кӳме сакки çинче хăйён тăшманёсем ларнине курсан çав маляр краскăллă киçтёкёпе сулса янă та лавçа лектернё. Архиерей нимён те асăрхаман, анчах та кайран тарçи çакăн çинчен каласа панă.

Маляра мёншён çапла хăтланнине ăнлантарса пама ыйтрăм. Вăл ун чухне те лăпланса çитейменччё, тăшманёсене вăрçатчё, вёсене иккёшне те

сăрласа ямаллаччĕ тесе аллинчи киçтĕкĕпе сулкалашатчĕ.

Каçару ыйтма владыка патне И.В. Богоявленский учительпе иксĕмĕр кайрăмăр. «Яковлевшăн пурпĕрех, тĕн çынни мар та архиерей çине сурса хунă вăл. Турă саккунĕ вĕрентекене вара...» — пуçларĕ тустарма Иван Васильевича Феоктист архиепископ.

Çак пăтăрмах мана та, Чĕмпĕрти чăваш шкулне те нимĕнле сиен кӳмерĕ, владыка çилĕ хăваламарĕ.

## СИНКЕРЛĔ ĔÇ-ПУÇ

Манăн манăçми вĕрентекенĕм Н.И. Ильминский шкул ачисене куç вĕçертми пăхса-сăнаса тăмалла тесе хытарсах калатчĕ. Эпĕ унăн шухăшĕпе килĕшетĕп. Ачасене лайăх сăнаса тăман пирки Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче синкерлĕ ĕç-пуç та пулса иртнĕччĕ.

Хĕрачасен уйрăмĕнче вĕренекен ялтан килнĕ икĕ хĕр пĕр-пĕринпе питĕ туслăччĕ. Иккĕшĕ те шкул чиркĕвне кĕлле çӳретчĕç. Вĕсенчен пĕри каçхи кĕлĕ вĕçленессе кĕтсе тăма пăрахнă иккен, пурăнмалли пӳлĕме маларах таврăнма тытăннă. Çакна асăрханă юлташ хĕрĕ ăна кăштах ăс вĕрентме шут тытнă. Вăл кĕрĕкне тӳнтерле тавăрса тăхăннă та юлташ хĕрĕ каçпа сад витĕр таврăннă чухне ун умне сиксе тухса хыттăн кăшкăрнă. Лешĕн сехри хăпса кайнă, вăл тăнне çухатса çĕре тăсăлса ӳкнĕ. Тăна кĕрсен те этем картне лараймарĕ, хĕне кайрĕ. Эпир ăна сывалма килне ятăмăр, анчах ку та пулăшмарĕ. Нумаях та вăхăт иртмерĕ — çав хĕрача вилчĕ.

## И.Д. ДЕЛЯНОВ МИНИСТР

Иккӗмӗш хутӗнче Дмитрий Андреевич Толстойпа акӑ мӗнле сӑлтава пула тӗл пултӑм эпӗ. К.П. Победоносцев, Д.А. Толстой граф, И.Д. Делянов граф тата ытти ятлӑ-сумлӑ ҫынсем Н.И. Ильминские уйрӑмах хисеплетчӗҫ. 1883 ҫулта Чӗмпӗрти вӗренӳ заведенийӗсене, ҫав шутра Чӑваш шкулне те, тӗрӗслеме Хусан вӗрентӳ округӗн попечителӗ Порфирий Николаевич Масленников килнӗччӗ. Ревизи хыҫҫӑн попечитель И.Д. Делянова, халӑха ҫутта кӑларас ӗҫ министрне, Чӑваш шкулне (мана хама та) ырӑ сӑмахсемпе хакланӑ хут тӑратнӑ. Министра ҫак хаклав кӑсӑклантарса янӑ иккен. 1884 ҫулта Иван Давидович мана Петербурга чӗнсе илчӗ. Вӑл вӑхӑтра Чӑваш шкулӗн ӗҫӗ-хӗлне, лару-тӑрӑвне тата та лайӑхлатас тесе ӗҫлеттӗмӗр эпир. Шкул ҫумӗнче пӗр хутлӑ чул чиркӳ лартас ыйтӑва та ҫӗкленӗччӗ — Н.И. Ильминский питӗ тӑрӑшатчӗ ҫакӑншӑн. Халӑха ҫутта кӑларас ӗҫ министерствин департаменчӗн директорӗ Эммануил Егорович фон Брадке нимӗҫ (Чӗмпӗрти фон Брадкесен тӑванех) мана ҫапла каланӑччӗ: «Чиркӳ лартма сире пулӑшӑпӑр. Эсир вара Синодран мӗн те пулин ыйтса илме тӑрӑшӑр!..»

И.Д. Делянов мана питӗ тараватл кӗтсе илчӗ. Эпӗ ун патӗнче икӗ хутчен — ирхи тата кӑнтӑр апачӗсенче — пултӑм. Вӑл мана лӳппертерех, ӗҫ тума пултаракан ял ҫынни вырӑнне хуратчӗ темелле, манпа питӗ интересленетчӗ. Вӑл вӑхӑтра Петербургри аслӑ общество ҫыннисем мана пурте лайӑх йышӑнатчӗҫ — мухтатчӗҫ, палӑртатчӗҫ. Пӗр

калаçу вăхăтĕнче шăпах Иван Давидович мана шалти ĕçсен министрĕ Д.А. Толстой графпа курса калаçма канаш панăччĕ.

## ШКУЛ УСТАВĔ

Учительсем хатĕрлекен Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн уставне 1885 çулхи çулла хатĕрлерĕмĕр. Виççĕн — эпĕ, Н.И. Ильминский тата Хусан вĕрентӳ округĕн попечителĕ П.Н. Масленников — çыртăмăр ăна. Н.И. Ильминский учительсемпе воспитательсене шалу пысăк памалла мар тесе çине тăратчĕ. Оклад самай пысăк пулсан укçа-тенкĕшĕн çунакан карьеристсемшĕн çул уçăлать, вĕсем ырă ĕçе пăсма пултараççĕ, чăвашсене çутта кăларассинче çак ĕçе чунтан парăннă, тăван халăха чĕререн юратакан çынсем кирлĕ тетчĕ.

Устава эпир Порфирий Николаевич Масленников дачинче калăпларăмăр. Ăна хăвăрт хатĕрлесе çитертĕмĕр.

Ăнлантару доклачĕн алçырăвне попечитель канцелярийĕн пуçлăхĕ çырчĕ. Анчах та учительсем хатĕрлекен Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн уставĕ Халăха çутта кăларас ĕç министерствинче пилĕк çула яхăн выртрĕ. Çак вăхăтра Чăваш шкулĕ те, вĕрентӳ программи те самай малалла аталанчĕç, вĕренекенсен йышĕ те аванах ӳсрĕ.

## А.И. БАРАТЫНСКИЙ ПАЧĂШКĂ

1891 çулта Чĕмпĕре К.П. Победоносцев килчĕ. Çакă А.И. Баратынский пачăшкă санне йышăнни аллă çул çитнипе пĕр килчĕ. Святейши Синодăн обер-прокурорне эпĕ вату пачăшкă пирки

аса илтертӗм, ялӗнчен Чӗмпӗре чӗнсе илни ӑна питӗ савӑнтарӗччӗ терӗм. Победоносцев ман сӑмаха шута илчӗ: А.И. Баратынские чӗнсе илчӗҫ, Константин Петрович ӑна кӗпӗрнаттӑр ҫуртӗнче ӑшшӑн кӗтсе илчӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн нумаях пурӑнаймарӗ Алексей Иванович, хӑрушла асапланса — темӗнле ӑнман чиртен, ыйхӑ пӗтнӗрен — вилчӗ. Врачсем, ҫав шутра пачӑшкӑ ывӑлӗ Петӗр тухтӑр та, ашшӗне сыватма ятарласа килнӗскер, ҫак чирпе мӗнле кӗрешмеллине пӗлмерӗҫ.

Чӗмпӗр кӗпӗрнаттӑрӗ И.О. Велио барон хӑй пӗлнӗ пачӑшкӑсенчен Баратынский чи ӑсли тесе каланӑччӗ мана.

Хусан университетӗнче вӗреннӗ вӑхӑтра Чӗмпӗре эпӗ ҫулталӑкне икӗ хутчен пыраттӑм. Ун чухне чугун ҫул ҫукчӗ-ха. Инҫе ҫула тухсан пӑрахутпа та, лашапа та каймаллаччӗ. Ҫула май эпӗ Кушкӑна, Кивӗ Пӑрӑнтӑка А.И. Баратынскипе Г.И. Мушкеев патне кӗрсе тухаттӑм.

Студент ҫулӗсенче ман пурнӑҫра пит нимех те пулса иртмерӗ. Хушӑран пуҫ ыратнипе аптраттӑмччӗ. Ҫак чирпе эпӗ гимназире чухнех, 1869 ҫулхи ҫу уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче, сивӗ ҫанталӑкра шыва кӗрсе тухнӑ хыҫҫӑн, асапланаттӑм.

## К.П. ПОБЕДОНОСЦЕВ ЧӖМПӖРЕ ПЫНИ

Святейши Синодӑн обер-прокурорӗ К.П. Победоносцев Чӗмпӗре 1891 ҫулхи ҫулла пынине асӑннӑччӗ ӗнтӗ. Кунта вӑл эрнене яхӑн пурӑнчӗ. Унпа пӗрле юлташӗ — В.К. Саблер — килнӗччӗ. Кайран А.А. Арапов вӑрттӑн советник та ҫитнӗч-

чӗ, вӑл Константин Петровичӑн ятарлӑ хушӑвӗсене пурнӑҫлакан чиновникчӗ. Чӗмпӗрти чӑваш шкулне Константин Петрович виҫӗ хутчен пырса курчӗ. Унӑн ӗҫӗ-хӗлӗпе кӑсӑкланчӗ, чиркӗве кӗрсе тухрӗ, манӑн хваттере те пычӗ. Ҫакӑн чухне эпир унпа турӑшсем пирки, манӑн туй ҫинчен калаҫрӑмӑр, Ильминские аса илтӗмӗр. Николай Иванович виличчен ҫур ҫул маларах пулнӑччӗ ҫакӑ.

Победоносцев Чӗмпӗр кӗпӗрнаттӑрӗ М.Н. Теренин патӗнче чарӑннӑччӗ. Чӗмпӗрти чӑваш шкулне Константин Петрович кӗпӗрнаттӑрсӑрах пыратчӗ. Святейши Синод обер-прокурорӗ Чӗмпӗрте пулнӑ чух пирӗн патра Хусан тата Чӗмпӗр кӗпӗрнисенчи чӑваш шкулӗсен учителӗсен съезчӗ иртрӗ. Чӑваш шкулне пымассерен К.П. Победоносцев ман пата кӗретчӗ, эпир чей ӗҫеттӗмӗр. Эпӗ ӑна мӑшӑрӑмпа, ачасемпе паллаштартӑм. Константин Петрович шкул чиркӗвӗнче хор юрланине итлерӗ. Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ ӑна питӗ килӗшрӗ, уйрӑлнӑ чухне мана тав турӗ. Хусан тата Чӗмпӗр кӗпӗрнисенчи чӑваш шкулӗсен учителӗсен съездне йӗркеленӗ А.И. Баратынский пачӑшкӑна обер-прокурор выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурӑнакан чӑваш ҫыннисене пулӑшма ҫӗр тенкӗ укҫа пачӗ.

К.П. Победоносцев пирӗн валли питӗ ырӑ ӗҫ турӗ — миссионерлӑх обществине Чӗмпӗрти чӑваш шкулне укҫа-тенкӗ ытларах уйӑрма хушрӗ. Константин Петрович аванах ватӑлнӑччӗ ӗнтӗ, кӑштӑртатса ҫӳретчӗ, манӑн хваттере пырсан картлашка ҫинчен чутах персе анмарӗ вӑл, юрать, вӑхӑтра аллинчен тытса ӗлкӗртӗм.

Кайран эпӗ Константин Петровичпа Петербургра темиҫе те курса калаҫрӑм.

## ПУЛТАРУЛЛИСЕМ

Чӑваш хӗрӗсем манӑн шанчӑка пурнӑҫа кӗртрӗҫ. Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнчен лайӑх учительницӑсем йышлӑн тухрӗҫ. Чӑваш пикисен шутӗнчен малалла вӗренме каякансем те тупӑнчӗҫ, Петербургри тата Мускаври аслӑ курссене, Хӗрарӑмсен педагогика институтне пӗтерчӗҫ. Ку таранччен ҫакнашкал паллӑ чӑваш пикисем пулманччӗха тӗнчере.

Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ хӑшпӗр ҫынсене тӗлӗнмелле пултаруллӑ та ӑслӑ-тӑнлӑ тесе хакламалла. Чӑн малтанах Н.М. Охотников математика асӑнмалла. Ӑна Ильминский те пулӑшса пыратчӗ. Шел, ытла ир вилчӗ, университетран та вӗренсе тухаймарӗ. Ӑна вара Хусан университетӗнче хӑварасшӑнччӗ, астрономи кафедрин профессорӗ пулмалли ҫынччӗ вӑл.

Павел Миронович Миронов математика та аса илер. Хӑйӗн ӗҫӗсемпе палӑрнӑ Алексей Афанасьевич Кокель художник та Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ.

1907 ҫулта Хусан вӗренӳ округӗн попечителӗ А.Н. Деревицкий хушнипе Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнчен 1-мӗш класра вӗренекенсене патшалӑха хирӗҫ пропагандӑлаҫҫӗ тесе пурне те кӑларса ячӗҫ. Кӑларса янисен йышне Константин Иванов та лекрӗ. Вӑл патшалӑха хирӗҫ калаҫакан ҫын марччӗ, пачах урӑхла — консервативлӑ шухӑшлӑччӗ. Хитре, сӑпайлӑ, ӑслӑ-тӑнлӑ каччӑн илем туйӑмӗ вӑйлӑ аталаннӑччӗ. Вӑл сӑвӑсем ҫыратчӗ, унӑн куҫаруҫӑ таланчӗ пурччӗ. Михаил Лермонтовӑн «Калашников купса ҫинчен хывнӑ юррине» тата

ытти сăввисене питĕ чаплă куçарнăччĕ вăл. Хăй çырнă хайлавсенчен «Нарспие» палăртмалла.

Шкултан кăларса ярсан тепĕр икĕ çултан Константин Иванова Чĕмпĕре чĕнсе илтĕм. Вăл лайăх ӳнерçĕччĕ, çавăнпа рисовани, грамота, çыру вĕрентме тытăнчĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче «Жизнь за царя» оперăн пайĕсене лартма тытăнсан К.В. Иванов вĕсем валли декорацисем ӳкернĕччĕ. Вырăсла лайăх пĕлетчĕ. Эпĕ ăна хам та вĕрентеттĕм. Сăмахран, В.Г. Белинский ĕçĕсемпе паллаштараттăм, М.Ю. Лермонтов поэзине ăнланма пулăшатчĕ çакă.

К.В. Иванов Ĕпхӳ кĕпĕрнинчи Пелепей хулинчен инçех мар вырнаçнă Слакпуç ялĕнченччĕ, унăн ашшĕ пуян хресченччĕ. Ивановсем пурте тĕне кĕнĕччĕ. Анчах та вĕсен çемйинче чахоткăпа чирлетчĕç. Чĕмпĕрте çак чир ӳнерçĕ-поэта та аптăратрĕ. Вăл ашшĕ патне килне кайрĕ, ялта темиçе уйăх çеç пурăнайрĕ.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн паллă вĕренекенĕсен йышне Федор Никифорович Никифорова тата Михаил Петрович Петров пачăшкăна та кĕртмелле. Ф.Н. Никифоров кăмăл-сипечĕпе, ырă кăмăлĕпе уйрăлса тăратчĕ, тăван халăха чунран юрататчĕ, ăна çутта кăларас тесе ырми-канми тăрăшатчĕ. Вăл 1910 çулта тифпа чирлесе вилчĕ. М.П. Петров Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен тата Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕнчен вĕренсе тухрĕ, пачăшкă пулса тăчĕ. Арăмĕ вилнĕ хыççăн Хусанти тĕн академине те пĕтерчĕ. Тĕн академийĕнче вĕреннĕ чухне Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çинчен тĕпчев ĕçĕ çырчĕ, шкул архивĕнчи хутсемпе тата эпĕ панă документсемпе усă курчĕ.

## ÇЫРУ

1912 çулта Петербурга ĕçсемпе кайсан ман пирки Халăха çутта кăларас ĕç министерствине çăхав çитнине пĕлтĕм. Яланхи пекех мана сепаратист тесе айăплаççĕ. Святейши Синод обер-прокурорĕ В.К. Саблер тăрăшнипе халăха çутта кăларас ĕç министрĕ Л.А. Кассо мана йышăнчĕ, хамăн ĕç-хĕлпе паллаштартăм ăна, çăхава пустуях çырнине ăнлантартăм. Лев Аристидович эпĕ мĕн каланисене хут çине çырса пама ыйтрĕ. Акă мĕн палăртрăм эпĕ.

«Эпĕ инспектор пулса ĕçлекен учительсем хатĕрлекен шкула хам укçапа хĕрĕх тăватă çул каялла уçрăм, ун чухне эпĕ гимназире вĕренеттĕм. Чăвашсене христиан тĕнне вĕрентес, вырăссемпе çывăхлатас енĕпе ĕçленине, хальхи вăхăтра воспитанипе вĕрентӳ ĕçĕ мĕнле пынине, пурлăх тĕлĕшĕнчен епле лару-тăру пулнине нумай çын çирĕплетме пултараççĕ. Вĕсен шутĕнче Санкт-Петербургра пурăнакансене асăнатăп: Святейши Синод обер-прокурорĕ В.К. Саблер; Чĕмпĕр дворянĕсен представителĕ, халĕ Патшалăх канашĕн пайташĕ В.Н. Поливанов; Чĕмпĕрти тĕп собор протоиерейĕ, халĕ Патшалăх Думин пайташĕ С.С. Медведков тата Халăха çутта кăларас ĕç министерствин канашĕн пайташĕ Н.А. Бобровников.

Эпĕ Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи удел хресченĕсен йышĕнчен тухнă, хам чăваш пулсан та вырăс çемйинче ӳснĕ, вырăс шкулĕнче вĕреннĕ, удел ведомствинче çĕр виçекен пулса ĕçленĕ. Вун тăхăр çула çитсен пур йывăрлăха та çĕнтерсе Чĕмпĕр гимназине вĕренме кĕтĕм, кайран вара 1875 çулта

Хусан университечĕн историпе филологи факультетне пĕтертĕм.

Хусан тăрăхĕнчи чи чухăн, çутта тухман инородецсемпе çыхăннăскер, паян кунччен Пăва уесĕн хресченĕ шутланса тăраканскер, хамăн чуна тата ăс-тăна вырăс çăлкуçĕнчен вăй илсе аталантартăм, вырăс шкулне, удел ведомствине пула вырăнти вырăс дворянсем пулăшса пынипе аслă çул çине тухрăм. Çавăнпа эпĕ мĕнле наци çынни пулнине калама та йывăр. Чухăн та халсăр тăван халăхпа çыхăннăскер, юнпа эпĕ — чăваш. Чунпа, воспитанипе, пурнăçăмпа, Тăван çĕршыва парăннипе хама аслă вырăс халăхĕн çемйинчи çын пек туятăп. Виçĕ государь вăхăтĕнче службăра тăтăм эпĕ. Вырăс халăхĕн хуйхисем — манăн хуйхăмсем, савăнăçĕсем — манăн савăнăçăмсем. Эпĕ чăвашран тухни тата вырăс çемйинче ӳсни ĕçĕм-хĕлĕмĕн характерне тата аталанăвне палăртрĕ. Манăн пурнăç тĕллевĕ — вырăссемпе чăвашсене çывăхлатасси».

## ПĔРРЕМĔШ ТĔНЧЕ ВĂРÇИ

1914 çулта вăрçă пуçлансан Халăха çутта кăларас ĕç министерстви Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн воспитанникĕсен, ытти вĕрентӳ заведенийĕсенчи ачасем пекех, вăрçа каймаллине пĕлтерчĕ. Çакна чунтан хăпартланса йышăнтăм, салтака ăсатассине чаплăн йĕркелеме шутларăм. Çапăçури паттăрлăхĕпе чăвашсен тинех Раççее тав тума май килчĕ тесе хавхалантăм эпĕ.

Чăваш шкулĕнче вăрçă тытăниччченех ачасене çар ĕçне вĕрентме пуçланăччĕ. Гимнастика ертсе пыракан В.З. Лепарский питĕ тăрăшатчĕ çак енĕпе. Викентий Зенонович çар хатĕрленĕвне юра-

татчӗ, ачасене те кӑсӑклантарма пӗлетчӗ. Шкул воспитанникӗсене ҫар колоннине тӑратса ял хуҫалӑх фермине илсе кайса килетчӗ. Вӗренекенсем Чӗмпӗр тӑрӑх хамӑр оркестрпа стройпа утса ҫӳретчӗҫ. В.З. Лепарский мана та ҫар манерӗсене вӗрентме тытӑнчӗ. Шкул ачисем патне тухсан: «Здравствуйте, ребята!» — тесе калаттӑмччӗ, лешсем вара: «Здравия желаем, Ваше превосходительство!» — тесе хуравлатчӗҫ. Темиҫе хут сывлӑх сунсан мана ҫакӑ килӗшми пулчӗ, манран пурпӗр ҫар ҫынни пулмасть тесе текех ан чӑрмантарӑр терӗм.

1914 ҫулта шкулта аллӑ ҫын валли ҫар лазаретне уҫрӑмӑр. Ӑна йӗркелеме пире Н.Я. Шатров купса пулӑшрӗ. Аманнисене пӑхас ӗҫе манӑн мӑшӑрӑм ертсе пыратчӗ. Шкулта ӗҫлекен преподавательсемпе воспитательсем, вӗсен шутӗнче эпӗ те, шалӑвӑн виҫӗ процентне лазарет тытса тӑма парас терӗмӗр. Шкулта вӗренекен хӗрачасем аманнисем валли кӗпе-йӗм, салтаксем валли ӑшӑ жилетсем, табак йӗнчӗкӗсем ҫӗлетчӗҫ. Чӗмпӗр хулин пуҫӗ Афанасьев Чӑваш шкулне икӗ рота салтак вырнаҫтарчӗ. Вӗсен йышӗнче вара темӗнле ҫын та пурччӗ.

Ҫав ҫулах 3-мӗш курсри ачасене вӑрҫа илсе кайрӗҫ, шкултан вӗренсе те тухаймарӗҫ вӗсем. Салтака каякансене хамӑр шутран тумлантартӑмӑр, ҫул ҫине вун пилӗк тенкӗ укҫа патӑмӑр.

1915 ҫулта Халӑха ҫутта кӑларас ӗҫ министерстви пулӑшнипе Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн воспитанникӗсен прависене ытти вӗренӳ заведенийӗсенче вӗренекеннисемпе пӗр тан турӑмӑр. Ҫакӑ вӗсене ҫар вӗрентӗвӗн заведенийӗсенче кӗске курс пӗтерсе офицер пулса тӑма пулӑшатчӗ.

# Ульяновсем





## УЛЬЯНОВСЕМ ЧĔМПĔРЕ КИЛНИ

Чĕмпĕрте эпĕ Ульяновсен çемйипе туслăччĕ. Совет влаçне туса хунă Владимир Ильич Ульянов-Ленина ачаранпах пĕлетĕп.

1869 çулта, эпĕ гимназире вĕреннĕ вăхăтра, Чулхуларан Чĕмпĕре Илья Николаевич Ульянов хăйĕн çемйипе куçса килчĕ. Ăна Чĕмпĕр кĕпĕрнири халăх училищисен инспекторне лартнăччĕ. Малтан Ульяновсем Прибыловский пачăшкăн Александра Семеновна тăлăх арăмĕ патне хваттере кĕчĕç. 1870 çулта ака уйăхĕн 10-мĕшĕнче (çĕнĕ стильпе — акан 22-мĕшĕнче) вĕсен Владимир ывăлĕ çуралчĕ, ăна акан 16-мĕшĕнче Никольски чиркĕвĕнче тĕне кĕртрĕç. Ача тытакансем Чĕмпĕрти удел кантурĕн управляющийĕ А.Ф. Белокрысенко тата Чĕмпĕр арçын гимназийĕн инспекторĕн амăшĕ, тăлăх арăм Н.И. Ауновская, пулчĕç.

Кайран тата ачасем çуралчĕç Ульяновсен. Илья Николаевичпа Мария Александровнăн аслă хĕрĕ Анна ятлăччĕ, ун хыççăнхисем — Александр, Владимир, Дмитрий, Ольга тата Мария. Аннăпа Александр — Чулхулара, ыттисем вара пурте Чĕмпĕрте çуралнăччĕ.

Володя Ульянов ăслă-тăнлă, аталаннă ачаччĕ. Чĕмпĕр гимназине вăл ир вĕренме кĕчĕ — 1879 çулта, ăна ылтăн медальпе 1887 çулта пĕтерчĕ. Гимназирен вун çиччĕре вĕренсе тухрĕ.

## ИЛЬЯ НИКОЛАЕВИЧПА ПАЛЛАШНИ

Илья Николаевичпа эпӗ Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗреннӗ ял ачисем Чӗмпӗр уес училищине кусма тытӑнсан паллашрӑм. Эпӗ ун чухне гимназире вӗренеттӗм-ха. Ачасене пулӑшма манӑн Н.И. Ульяновпа тӗл пулма тиветчӗ, мӗншӗн тесен уес училищи ӑна пӑхӑнатчӗ. Хусан университетӗнче вӗреннӗ вӑхӑтра та Илья Николаевичпа хутшӑнсах тӑраттӑм.

Хусанта вӗреннӗ чухне Илья Николаевич мана хӑш-пӗр ӗҫсем пурнӑҫлама та ыйтатчӗ. Тӗслӗхрен, учительсен педагогика курсӗн отчечӗсене пичетленине сӑнаса тӑма ыйтнӑччӗ. Чӗмпӗрти общежитире пурӑнакан шкул ачисене малтан Чӗмпӗр гимнази директорӗ Вишневский асӑрхаса тӑратчӗ, Ульянов килсен вара ачасем ӑна пӑхӑнма тытӑнчӗҫ. Университет хыҫҫӑн Хусан вӗрентӳ округӗнчи чӑваш шкулӗсен инспекторне лартсан, Чӗмпӗрти чӑваш шкулне ертсе пыма тытӑнсан эпир Илья Николаевичпа пӗрле ӗҫлеме тытӑнтӑмӑр, ҫывӑх туслашрӑмӑр.

Эпӗ Ульяновсем патӗнче тӑтӑшах пулаттӑм. Илья Николаевичпа Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи шкулсем тӑрӑх ҫӳреттӗмӗр. Иксӗмӗр манӑн тӑван яла — Кӑнна Кушкине — те кайнӑччӗ, унта вӑл вӑхӑтра шкул ҫурчӗ лартатчӗҫ.

И.Н. Ульянов сӑнарӗ ман чунра ырӑ туйӑмсем ҫеҫ вӑратать. Вӑл питӗ ӗҫчен, кӑмӑл-сипетлӗ этемччӗ, хӑйне пӑхӑнса тӑракан ҫынсене хаклатчӗ, вӗсемпе уҫӑ кӑмӑллӑччӗ. Часах унӑн должноҫне улӑштарчӗҫ, вӑл халӑх училищисен директорӗ пулса тӑчӗ. Ҫак ӗҫре пысӑк наградӑсене тивӗҫрӗ —



чăн статски советник чинне, Станиславăн 1-мĕш степеньлĕ çăлтăрне илчĕ. Мана чăваш шкулĕсен инспекторне лартиччен Илья Николаевич Чĕмпĕрти чăваш шкулне пăхса тăчĕ, кĕпĕрнери чăваш шкулĕсем валли нумай усăллă ĕç турĕ.

## УЛЬЯНОВСЕН ÇЕМЙИ

Эпир çемьесемпех туслăччĕ. Ульяновсен килĕнче хăнасене яланах хапăлччĕ. Вĕсем ахаль апатçимĕçпех çырлахатчĕç, ачисене те иртĕнтерместчĕç. Раштавра ачасем валли ёлка, аслисем валли маскарад ирттеретчĕç. Уявсене перекетлĕн йĕркелетчĕç, ытлашши тăкакланмастчĕç. Çемьере православи йăлисене пăхăнатчĕç, типĕ те тытатчĕç. Апата ларас умĕн, апатран тăрсан пурте сăхсăхатчĕç. Турăшсен умĕнче лампадăсем çунатчĕç. Ачисем ашшĕпе амăшне итлетчĕç, Турра хисеплетчĕç, вĕсем пурте пултаруллă та тăрăшуллăччĕ, хăйсене питĕ йĕркеллĕ тытатчĕç.

Илья Николаевич хăйĕн ĕçĕпе пĕрмай кĕпĕрне тăрăх çӳретчĕ, Мария Александровна хуçалăха тытса тăратчĕ, ачисене пăхатчĕ. Вăл сăнĕпе хитре хĕрарăмччĕ, лайăх пĕлӳ илнĕскер, ют чĕлхесене аван пĕлетчĕ. Çын сăмахĕ тăрăх, Мария Александровна ашшĕ — тухтăр, вăл Хусан нимĕçĕ, амăшĕ вара вырăс пулнă. Илья Николаевич Астраханьти чухăн мещен çемйинчен тухнă. Вăл Астрахань гимназине, Хусан университечĕн математика факультетне лайăх паллăсемпе пĕтернĕ, çакăн хыççăн Пенза гимназийĕнче вĕрентнĕ, унтан гимнази шайĕнчи Чулхулари дворян институтне куçнă. Чулхулара Илья Николаевич дворян институтĕнче воспитательте, математика

учителĕнче ĕçленĕ, çав вăхăтрах хĕрачасен Чулхулари Мариински училищинче тата гимназири çĕр виçекенсемпе вăрман хаклакансен (таксаторсен) класĕнче физика учителĕ пулса ĕçленĕ. Питĕ ăслă çынччĕ вăл.

Пысăк ĕçре пулнăран И.Н. Ульянова вырăнти обществăн тĕрлĕ сийĕсемпе хутшăнма тиветчĕ. Ульяновсем аслă обществăна туртăнмастчĕç, килĕнчи ырă кăмăллăхĕ вара нумай çынна илĕртетчĕ. Вĕсен килĕнче С.С. Медведковпа В.Ф. Боголюбов пачăшкăсене, Чĕмпĕр удел кантурĕн управляющине А.Ф. Белокрысенкăна, Ф.М. Керенские — Вăхăтлăх правительствăна ертсе пынă А.Ф. Керенский ашшĕне — тăтăшах курма пулатчĕ. Эпир мăшăрăмпа иксĕмĕр Ульяновсен çывăх тусĕсем пулнă, вĕсем патне пĕрмаях çӳренĕ. Ульяновсен ачисем, вăл шутра Володя та, пирĕн пата ашшĕ-амăшĕпе те пыратчĕç, хăйсем тĕллĕн те кĕрсе тухатчĕç.

## ВЛАДИМИР УЛЬЯНОВ ТАТА НИКИФОР ОХОТНИКОВ

Володя Ульянова эпĕ кипкере выртнă чухнех курнă. Пĕчĕккĕ чухне вăл вăтанчăк та чĕмсĕрччĕ, ытти ачасемпе хутшăнма питех юратмастчĕ. Гимназире лайăх вĕренсе пычĕ, ăна ылтăн медальпе пĕтерчĕ. Çамрăк чухне вăл мĕнле çын пулнине пĕр ĕç-пуç лайăх кăтартса парать.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн курсне 1879 çулта пĕтернĕ Никифор Михайлович Охотников чăваш ачи математикăна лайăх пĕлетчĕ. Çак предмета шкулта А.В. Годнев аван вĕрентетчĕ. Никифор Охотников математикăра хăй тĕллĕн çĕнĕ япала-



сем те уçатчӗ. Чăваш шкулӗнчен вӗренсе тухсан Хусан кӗпӗрнинчи Чистай уесне учительте ӗçлеме ячӗç, тепӗр икӗ çултан ăна эпӗ Чӗмпӗре куçартăм. Ку вăхăт тӗлне вăл авланнăччӗ ӗнтӗ. Никифор Охотников хăй тӗллӗн гимнази тата университет курсӗнчи программăна вӗренме тытăнчӗ, гимназире сакăр класс пӗтерни çинчен çирӗплетекен аттестат илме шут тытрӗ. Эпӗ, паллах, ăна хавхалантарса çеç тăтăм. Анчах та вăл авалхи тата çӗнӗ ют чӗлхесене пӗлместчӗ — çакă ăна питӗ чăрмантаратчӗ.

Володя Ульянов вунултă çулхи каччăччӗ. Пӗрре пирӗн пата пырсан ăна ырă ӗç тума сӗнтӗм — Охотникова вӗрентме ыйтрăм, лешӗн уроксемшӗн тӳлеме укçа çуккине те асăрхаттартăм. Савăнсах килӗшрӗ вăл, 1886—1887 çулсенче Ники-

фор Охотникова авалхи тата ҫӗнӗ чӗлхесене тӳлевсӗр вӗрентрӗ. Авалхи тата ҫӗнӗ ют чӗлхесене Ульяновсен пур ачи те лайӑх пӗлетчӗҫ. 1888 ҫулта Н.М. Охотников экстерн мелӗпе экзаменсене лайӑх тытрӗ, аттестат илчӗ. Ҫав ҫулах вӑл Хусан университечӗн математика факультетне вӗренме кӗчӗ. Унӑн математика талантне специалист профессорсем тӳрех асӑрхарӗҫ. Шел, ир ҫӗре кӗчӗ вӑл, университетран та вӗренсе тухаймарӗ, чахотка тӗп турӗ ӑна.

Н.И. Ильминский ӑна инородец учительсен семинарийӗнче хваттер тупса панӑ. Никифор Михайлович куҫнӑ хваттерте малтан туберкулезпа чирлӗ ҫын пурӑннӑ иккен. Ҫав ҫын вилсен пӳлӗме лайӑх ҫуса тасатман. Чахотка чирӗ вара Н.М. Охотникова ернӗ.

Никифор Михайловичӑн арӑмӗ виҫӗ ачапа тӑлӑха юлчӗ. Пӗр вӑхӑт вӑл, Хусанта учительсен вырӑс семинарине пӗтернӗскер, Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче ӗҫлерӗ. Илемлӗ, кӑмӑллӑ хӗрарӑмччӗ.

## АЛЕКСАНДР УЛЬЯНОВ

1884 ҫулхи пуш уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче халӑха ҫутта кӑларас ӗҫ министрӗ И.Д. Делянов граф мана Петербурга чӗнсе илчӗ. Александр Ульянов ун чухне Петербургра университетра вӗренетчӗ. Вӑл ман пата хӑна ҫуртне час-часах пырса каятчӗ, эпир пӗрле апатланаттӑмӑр та. Пӑхма хитре каччӑччӗ — хура ҫӳҫлӗскер, хура куҫлӑскер, ҫемҫе кӑмӑлӗпе амӑшне хывнӑччӗ. Сашӑпа танлаштарсан ашшӗнни пек хӗрлӗрех кӑтра ҫӳҫлӗ Володя ун пекех хитре ҫын марччӗ.

Тепӗр виҫӗ ҫултан Чӗмпӗрте хӑрушӑ сӑмах са-

рăлчĕ: Александр Ульянов III Александр патшана вĕлерме шутланă çынсен йышĕнче пулнă. Хыпăнса-çухалса кайнă Мария Александровна ывăлне пулăшма май çук-ши тесе Петербурга кайрĕ, унтан таврăннă хыççăн ман пата Чăваш шкулне кĕчĕ. Вăл мана Саша айăпсăр иккенне, ăна тата ыттисене Ю.Н. Говоруха-Отрок провокатор юри асăннине пĕлтерчĕ. Телейсĕр амăшĕ мана ачине хăтарса хăварма ӳкĕтлерĕ — Н.И. Ильминский Петербургри хăйĕн хăватлă тусĕсем урлă патшана витĕм кӳме пултараймасть-и терĕ. Николай Иванович çак вăхăтра чăнах та вăйлă çынччĕ, Святейши Синод обер-прокурорĕ К.П. Победоносцевпа уйрăмах туслăччĕ.

Мария Александровнăна пулăшма сăмах патăм. Эпир иксĕмĕр Хусана кайрăмăр. Анчах та шанни ахалех пулчĕ: К.П. Победоносцев çак ĕçе хутшăнма килĕшмерĕ. Çак вăхăт тĕлне Победоносцев «Гражданин» журнал редакторĕпе В.П. Мещерский кнеçпе хирĕçсе кайнă. Кавара хутшăннă М.Н. Новорусский текен çынна хăй вăхăтĕнче К.П. Победоносцев пулăшса пынă пулнă иккен. Владимир Петрович хăйĕн журналĕнче обер-прокурор çинчен Ю.Н. Говоруха-Отрок процесĕпе çыхăнтарса тем те çырса пĕтернĕ. Çавăнпа Святейши Синод оберпрокурорĕ Александр Ульянова нимĕнпе те пулăшаймарĕ.

Эпĕ Н.И. Ильминские Александр Ульянов хӳттине кĕме ыйтрăм. Мария Александровна та Ильминскипе тĕл пулнă, Саша айăплă мар иккенне каланă. Николай Иванович унăн сăмахне ĕненнĕ, халăха çутта кăларас ĕç министрĕ И.Д. Делянов патне ахалех пĕтекен çамрăк çынна хăтарса хăвар-

ма ыйтса телеграмма янӑ. Часах Иван Давидович Николай Ивановича телеграммӑпа хуравланӑ: Ильминский ытла та ырӑ кӑмӑллӑ, Ульянов ӗҫне вара никам та хутшӑнаймасть, ҫитменнине кая та юлнӑ тесе пӗлтернӗ вӑл.

Мария Александровна каллех Петербурга кайнӑ. Вӑл тӗрлӗ кабинетсем тӑрӑх пуҫҫапса та куҫҫуль тӑкса ҫӳренӗ вӑхӑтра унӑн аслӑ ывӑлне Шлиссельбург крепоҫӗнче ҫакса вӗлернӗ пулнӑ. Амӑшӗ ҫакна чылай вӑхӑт пӗлмен.

Мария Александровна Петербургра ҫӳренӗ вӑхӑтра эпир арӑмпа Ульяновсем патне пӗрмай кайса килеттӗмӗр, амӑшӗнчен хыпар ҫук-и тесе ыйтаттӑмӑр ачисенчен. Ульяновсем, вӑл шутра Володя та, пирӗн пата тӑтӑш кӗрсе тухатчӗҫ, сирӗн пата анне нимӗнле хыпар та яман-и тесе ыйтатчӗҫ.

Александр Ульянова пулӑшма хӑтланни ахаль иртсе каймарӗ маншӑн. Пӗр хушӑ мана шанчӑксӑр ҫын тесе жандармсемпе полицейскисем сӑнаса тӑчӗҫ.

## ИЛЬЯ НИКОЛАЕВИЧӐН ЮЛАШКИ КУНӖСЕМ

Илья Николаевич Ульянов 1886 ҫулхи кӑрлачӑн 12-мӗшӗнче (ҫӗнӗ стильпе — 24-мӗшӗнче) пуҫне юн кайнӑран килӗнче вилчӗ. Кӑшт маларах ӑна Станиславӑн 1-мӗш степеньлӗ орденне панӑччӗ. Ҫавӑнпа Ульяновсем ҫывӑх тусӗсене пуҫтарса ҫакна уявласшӑнччӗ. Такам патӗнче хӑнара чух Илья Николаевич хӑйне начар туйса илнӗ. Тухтӑра та чӗнме тивнӗ, лешӗ вара ку чир вархырӑмпа ҫыхӑннӑ тесе пурне те лӑплантарнӑ.



Илья Николаевич чирленине пӗлсен арӑмпа иксӗмӗр тепӗр кунне ун патне кайрӑмӑр. Эпир Ульяновпа ун кабинетӗнче шкулсем пирки калаҫрӑмӑр. Ларатпӑр ҫапла диван ҫинче сӑмахласа — эпӗ вӑл кӑвакарма тытӑннине асӑрхарӑм, чӗтреме те пуҫларӗ. «Халиччен кун пекки манпа пулманччӗ-ха, — терӗ вӑл. — Шалтан чӗтреттерет...» Кабинета Мария Александровна кӗчӗ, эпӗ зала тухрӑм. Икӗ сехет тӗлнелле эпир арӑмпа киле кайрӑмӑр.

Сехет те иртмерӗ, пирӗн пата Володьӑпа Митя Ульяновсем килчӗҫ. Эпир шӑпах апата ларнӑччӗ. Володя столовӑйне кӗмесӗр алӑк сулли ҫумне тайӑнса: «Атте... вилчӗ...» — терӗ. Эпир арӑмпа иксӗмӗр часрах Ульяновсем патне васкарӑмӑр. Мария Александровна мӑшӑрӗн юлашки саманчӗсем ҫинчен каласа пачӗ.

Эпир вӗсем патӗнчен кайсан Илья Николаевич йывӑрланнӑҫем йывӑрланса пынӑ. Хытӑ шӑнтнӑран Мария Александровна мӑшӑрне ӑшӑрах витсе кабинетра вырттарнӑ та ачисене кӑнтӑр апачӗ ҫитерме кайнӑ. Ачасем сӗтел хушшине ларсан алӑкран Илья Николаевич курӑнса кайнӑ, вӗсем ҫине урӑхларах куҫпа пӑхса илнӗ те каялла ҫаврӑнса утнӑ. Мария Александровна унран мӗн те пулин кирлӗ мар-и тесе ыйтнӑ, анчах лешӗ нимӗн те хуравламан. Мӑшӑрӗ хыҫҫӑнах кабинета пырсан лешне сив чир тытса пӑрахнӑ та пулнӑ. Вӑл арӑмӗ енне ҫаврӑннӑ, куҫне чарса пӑхса илнӗ те — сывлама пӑрахнӑ.

Илья Николаевич вилӗмӗ ҫемйине анратсах ячӗ. Аслӑ хӗрӗ Анна Раштава Петербургран килнӗччӗ. Мария Александровна упӑшкине тирпейлесе пы-

тарас ĕçе путнăран ачисене пăхса та ĕлкĕрейместчĕ. Анна шăллĕсемпе йăмăкĕсене ертсе час-часах пирĕн пата пыратчĕ. Кĕçĕн ачисем вара — Марийăпа Митя — пирĕн патрах çĕр каçатчĕç.

Илья Николаевича Покров мăнастир масарĕнче пытартăмăр. Чĕмпĕрти паллă çынсем пынăччĕ çăва çине, Н.П. Долгово-Сабуров кĕпĕрнаттăр та пурччĕ. Литурги тата виле кĕлли вăхăтĕнче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн воспитанникĕсен хорĕ юрларĕ.

## ЖЕНЕВĂРИ ТĔЛПУЛУ

Манăн аслă ывăлăм Алексей — Мускав университечĕн профессорĕ. 1905 çулта вăл арăмĕпе чикĕ леш енне кайнă. Женевăра Владимир Ильич Ульяновпа курнăçнă. Манăн ывăла Ульянов хăйĕнпе тĕл пулма меллех марри çинчен пĕлтернĕ — ăна кунта та сăнасах тăраççĕ иккен. «Астăвăр, ман пек шăпа килсе ан тухтăр», — асăрхаттарнă вăл Алексея. Çавăнпа вĕсем вăрттăн Жан-Жак Руссо утравĕ текен вырăнта, паркра, тĕл пулма калаçса татăлнă. Владимир Ильич манăн ывăла хăйĕн кĕнекине парнеленĕ. «Тимлĕн вуласан мĕн çырнине ăнланатăр», — тенĕ вăл. Вĕсем тек тĕл пулайман. Ывăлпа мăшăрне телеграммăпа каялла Мускава чĕнсе илнĕ — вĕсен Наташа хĕрĕ хытă чирлесе ӳкнĕ.

## УЛЬЯНОВСЕМ

Мария Александровна Ульянова 1916 çулта Петроградра çĕре кĕчĕ. Мĕн виличчен аслă ывăлне йĕре-йĕре аса илетчĕ вăл, Александр айăпсăр

пулнине ёненетчĕ. Чĕмпĕре мăшăрĕн вилтăпри çине килсен яланах пирĕн пата кĕрсе тухатчĕ. Манăн мăшăрăма Илья Николаевич вилтăприне тирпейлесе тăма ыйтатчĕ.

Александр Ульянов патшалăх преступникĕ пулса тăрсан Ульяновсен çемйипе çывăх та туслă хăш-пĕр çынсем Мария Александровнăран хăвăрт сивĕнчĕç. Çакă ăна питĕ пăшăрхантаратчĕ.

Эпĕ хам Владимир Ильич Ульянова пĕр вăтăр çул та курман. Тахçан пĕлнĕ вăтанчăк Володя Ульянов халĕ Раççей патшалăхĕн пуçлăхĕ пулса тăрсан та Чĕмпĕр хулине, Чĕмпĕрти чăваш шкулне манса кайманнишĕн савăнатăп. Тахçан унпа хутшăннисене аса илетĕп те тĕлĕнетĕп: вăл çамрăк чухне пулас революционера нимĕнпе те аса илтерместчĕ.

Ульяновсен виççĕмĕш ывăлĕ пĕр хушă Чĕмпĕрте врач пулса ĕçлерĕ. Вăл манăн Алексей ывăлпа пĕр вăхăтра Мускав университетĕнче вĕреннĕ, вĕсем туслă пулнă. Дмитрий Ильич Ульянов халĕ Мускавра, пиччĕшĕ патĕнче.

Мана час-часах Александр Ульянов аса килет, куç умне хитре каччă сăнарĕ тухса тăрать — ăна халĕ те питĕ шеллетĕп.

## МАНĂН ЁМĔТСЕМ

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен чăваш учителĕсен семинарине тумалли ҫинчен эпĕ 1877 ҫултах ыйту ҫĕкленĕччĕ. Икĕ тĕллевпе ĕҫлеме пулатчĕ ҫакна пурнăҫа кĕртсен. Пĕрремĕшĕ — чăвашсене аслă пĕлӳ парасси, иккĕмĕшĕ — вĕрентекенсемпе воспитательсен шалăвне ӳстересси. Малтанласа ҫак ыйтăва ҫӳлте аван йышăнчĕҫ, эпĕ кирлĕ ҫĕре темиҫе проект та тăратрăм. Анчах ыйту татăлмарĕ, семинари положенине, окладсене, штатсене никам та ҫирĕплетмерĕ.

Тепĕр шухăш вара питĕ мал ĕмĕтлĕччĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн пултаруллă ачисене Англири Кембридж тата Оксфорд университечĕсене вĕренме ярасшăнччĕ эпĕ. Вĕсене малтан акăлчан чĕлхи тĕплĕн вĕрентмеллеччĕ паллах. 1905 ҫулта мана Петербурга инородецсене вĕрентес ĕҫри правилăсене хатĕрлеме чĕнсен чылай вăхăт тĕп хулара пурăнма тиврĕ. Ҫавăн чухне ман пата Британири Библи обществин представителĕ, богослови докторĕ Вильям Кин пастор, кĕрсе тухрĕ. Эпĕ ăна хамăн шухăшпа паллаштартăм. Вăл хăй вăхăтĕнче Библи обществи ĕҫĕсемпе Чĕмпĕре пынă чух Чăваш шкулне те пырса курнăччĕ. Чăваш ачисене Англие вĕрентме ярас шухăша ырларĕ вăл. Библи обществи ҫак ыйтура укҫа-тенкĕпе пулăш-

ма пултараймасса та пĕлтерчĕ — миссионерлăх тĕллевĕсемпе çеç ĕçлет вăл. Заявлени çырса парсан Вильям Кин ман шухăша пурнăçа кĕртме майсем шырама пулчĕ. Анчах та ытти ĕçсене пула çак шухăш ĕмĕт шайĕнчех юлчĕ.

Англири вĕрентӳ заведенийĕсенчен вĕренсе тухсан чăваш ачисем каялла таврăнасса, тăван халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшасса шанаттăм эпĕ. Ун чухне чăвашсем валли аслă шкул заведенийĕ уçасси çинчен шутламастăмччĕ-ха. Пултаруллă чăваш ачисене тĕн академийĕсене, университетсене яма тăрăшаттăм.

Кайран вара эпĕ тепĕр проекта пурнăça кĕртесшĕнччĕ. Банка вăрах вăхăта пин тенкĕ хурса процентсемпе капитал пуçтарасшăнччĕ. Пысăк сумма пухăнсан вара чăваш университетне уçас кăмăл пурччĕ. Анчах та Раççейри революци çак проекта пăрахăçларĕ.



## ЧĂВАШ АЛФАВИТНЕ ТУНИ

Иван Яковлевич Яковлев — чăвашсене çутта кăларакан тата çырулăхне йĕркелекенĕ. Чăваш алфавитне тăвасси пирки вăл çамрăк чухнех шутланă. Ăна 1870 çулта хатĕрлеме пикеннĕ. Унта Кăнна Кушки калаçăвне тĕпе хунă. Алфавит тăвас ĕçре ăна университетăн аслă курсĕсенче вĕренекен В.А. Белилинпа тутар крешĕн шкулĕнче пĕлӳ пухакан С.Н. Тимрясов пулăшнă. Аялти диалект калаçăвне тишкернĕ май вĕсем Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Кăнна Кушки калаçăвĕнче 45 сасă, çав шутра 8 уçă тата 37 хупă сасă, тупса палăртнă, вĕсен шутĕнче *ă*, *ĕ*, *ӳ* сасăсене уйăрса илнĕ.

1871 çулта И. Яковлев вырăс алфавитне тĕпе хурса пĕрремĕш чăваш алфавитне хатĕрлет, букварь пичетлесе кăларать. Унта хĕрĕх çичĕ саспалли вырнаçтарать. Анчах та ытлашши нумай саспалли пулнипе ку алфавит усă курма мелсĕр пулса тухать. Белилинпа пĕрле ăна çирĕм çичĕ саспалли таран кĕскетет — янăравлă хупă сасăсене палăртакан саспаллисене кăларать.

Çĕнĕ алфавитпа 1872 çулта «Çырма вĕренме тытăнмалли кĕнеке» (Книга для обучения грамоте) тĕрĕслесе пăхмалли (пробный) букварь тата «Чăн тĕн кĕнеки» (Начальное учение православной христианской веры) пичетлесе кăларать. Çак кăларăмсем хыççăн И.Я. Яковлев чăваш алфавитне тепĕр хут пăхса тухать те пĕчĕк улшăнусем кĕртет: *ӳ*, *ь* саспаллисене *ă*, *ĕ*, саспаллисемпе, *j* саспаллине *й*-па улăштарать, *о* тата *ф* саспаллисене вырăс сăмахĕсенче çеç усă курма йышăнать. Вăл чăваш алфавичĕн юлашки варианчĕ пулса тăрать. 1873 çулта çак алфавитпа çĕнĕ кĕнеке — «Бук-

варь для чуваш с присоединением русской азбуки» пичетленет. Вăл икĕ — вырăсла тата чăвашла — пайсенчен тăрать.

Ку алфавитпа пĕр улăштармасăр аллă çул усă курăççĕ, улт çĕр сакăр вун çичĕ кĕнеке кун çути курать, вĕсен шутĕнче Псалтире, «Çĕнĕ Халала» тата ытти кăларăмсене те асăнмалла.

1938 çулта алфавита пĕчĕк улшăнусем кĕртеççĕ, унпа паянхи кун та чăваш çырулăхĕнче усă курăççĕ. Хальхи чăваш алфавичĕ вăтăр çичĕ саспаллирен тăрать.

## Иван Яковлевăн хисеплĕ ячĕсемпе наградисем

Иван Яковлевича тĕрлĕ хисеплĕ ятсемпе тата наградăсемпе чысланă. Çаксене палăртмалла:

Çветтуй Станислав орденĕ (3 степень, 1878);

Çветтуй Станислав орденĕ (2 степень, 1887);

Çветтуй Анна орденĕ (3 степень, 1889);

Çветтуй Анна орденĕ (2 степень, 1892);

III Александр патшана халалланă кĕмĕл медаль (1896);

«Пĕрремĕш пĕтĕмĕшле 1897 çулхи халăх çыравĕнчи ĕçшĕн» тĕксĕм пăхăр медаль (1897);

Çветтуй Владимир орденĕ (4 степень, 1900);

1812 çулхи Тăван çĕршыв вăрçине асăнса хатĕрленĕ медаль (1912);

«Романовсем патшара ларни 300 çул çитнине асăнса» медаль (1913).

1904 çулта И.Я. Яковлев чăн статски советник чинне илнĕ. Çак ят çарти генерал-майор, флотри контр-адмирал званисемпе танлашать. Яковлева тата унăн ачисене дворянин пулма ирĕк панă вăл.

## ТУПМАЛЛИ

*Куçаруçă сăмахĕ* . . . . . . . . . . . 3

МАНĂН ВĔРЕНТЕКЕНĔМ . . . . . 5
КУÇАРУ ĔÇĔ . . . . . . . . . . . 49
ЧĔМПĔРТИ ЧĂВАШ ШКУЛĔ . . . 61
УЛЬЯНОВСЕМ . . . . . . . . . . 101
МАНĂН ĔМĔТСЕМ . . . . . . . . . 115

*Чăваш алфавитне туни* . . . . . . 117

*Литературно-художественное издание*

Для детей среднего и старшего школьного возрастов

**Яковлев Иван Яковлевич**

# АСЛĂ ÇУЛ ÇИНЕ
# НА ГЛАВНУЮ ДОРОГУ

**Воспоминания**

*На чувашском языке*

Перевод на чувашский язык *В.В. Степанова*

Редактор *О.Л. Федорова*
Художник *С.А. Бритвина (Светлана Тонина)*
Художественный редактор *А.В. Семенова*
Технический редактор *Е.Е. Фомина*
Корректор *С.Ю. Казакова*
Компьютерная верстка *М.В. Филипповой*

12+ Информаци продукцийĕн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010).
Знак информационной продукции согласно
ФЗ от 29.12.2010 № 436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003.
Подписано к печати 25.06.18. Формат 60×90 1/16. Бумага офсетная.
Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 7,5. Уч.-изд. л. 4,41.
Тираж 1000 экз. Заказ № К-4078. Изд. № 37.

АО «Чувашское книжное издательство»,
428903, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в АО «ИПК «Чувашия»,
428903, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.